Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ИЙУЛЬ 24 ВЫРСАРНИКУН 169 (4982) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать — ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ — Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—57, Ред. заместителĕн 0—38, Редакци секретарĕн [illegible]—40, Дежурнăйăн 0—23

Аслă федераци правительстви

РСФС Республикĕн 1-мĕш созыври Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çессийĕ ĕнер хăйĕн ĕçĕсене туса пĕтерчĕ. Унăн ларăвĕ ийулĕн 15-мĕшĕнчен 20-мĕшне çитиччен пычĕ, çак кунсем хушшинче хамăр çĕршывăн пĕтĕм тимлĕхĕ унăн ĕçĕсем çинче пулчĕ. Çакăнта, РСФСР Верховнăй Совечĕн çÿлĕ трибуни çинче каланă сăмахсем пĕтĕм тĕнче тăрăх саланчĕç.

Ĕнер РСФСР Верховнăй Совечĕ пĕр çын пек мĕн пур кăмăлпа сасăласа РСФСР Правительствине, Халăх Комиссарĕсен Советне çирĕплетрĕ, унăн пуçлăхĕ—председатель Н. А. Булганин йулташ.

Ăна çирĕплетес умĕн, РСФСР Верховнăй Совечĕ РСФС Республикĕн халичченхи Халăх Комиссарĕсен Советне, РСФСР Конституцийĕ тăрăх хăйĕн полномочийĕсене пĕтнĕ тесе шутланăскере, хăй шаннине кăтартса пачĕ. РСФСР Верховнăй Совечĕ уйрăм халăх комиссариачĕсене тата вĕсен руководителĕсене чăн-чăн хуçа пек çирĕппĕн те ĕçлĕн критиклерĕ. Вăл критикă—питĕ те принциплă характерлă критикă пулчĕ. РСФСР Верховнăй Совечĕ пур работниксенчен те вĕсен ĕçĕ пĕтĕмĕшпех те туллиййĕнех хамăр партин тата унăн Сталинла Тĕп Комитечĕн кăтартăвĕсемпе директивсем тăрăх пулса пытăр тесе, вăл ĕç халăх ырлăхĕ-телейĕшĕн тăвакан чăн-чăн большевикла ĕç пултăр, тесе ыйтрĕ.

РСФСР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕн ĕçне тивĕçлипех çивĕччĕн критиклерĕç. Депутат Угаров йулташ тухса каласни пирĕн парти, пирĕн парламент ĕççыннисен сывлăхне мĕн тери пысăккăн хакланине кăтартса пачĕ. Хамăр государствăри чи пысăк та паха мул çине—çын çине тирпейсĕр, чул чĕрепе чиновникле-бюрократла пăхма вĕсем никама та ирĕк парас çук.

Пренисем РСФСР Çутĕç Халăх Комиссариачĕпе унăн руководителĕ Тюркин йулташăн ĕçĕнчи, РСФСР Суту-илÿ Халăх Комиссариачĕпе унăн руководителĕ Любимов йулташăн ĕçĕнчи, РСФСР Вырăнти промышленнăç Халăх Комиссариачĕпе унăн руководителĕ Вахрушев йулташăн ĕçĕнчи чылайах пысăк çитменлĕхĕсем çине кăтартса хăварчĕç.

Кайа йулса пыракан халăх комиссариачĕсене çапла критиклени хамăрăн пĕтĕм государствă аппаратĕшĕн, пĕтĕм халăх комиссариачĕсемшĕн, пĕтĕм учрежденисемшĕн калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать. Хамăрăн социализмлă государствă саккунĕсем мĕнле пурнăçа кĕрсе пынине, халăх питĕ те ответлă вырăнсем, калама çук пысăк средствăсем шанса панă çынсем мĕнле ĕçленине халăх суйланă çынсем çивчĕ куçпа асăрхаса тăраççĕ, куна ĕнтĕ РСФСР Верховнăй Совечĕн пулса иртнĕ Çессийĕ питĕ те уççăн кăтартса пачĕ. Çирĕп те ĕçлĕ пренисенче, витĕрех большевикла хĕрÿлĕ те принциплă пренисенче, хамăрăн пĕтĕм республикă чăн-чăн большевикла критикă сăнарне курчĕ.

Депутатсем асăрхаттарнисене Булганин йулташ РСФСР Халăх Комиссарĕсен Советне тунă чух шута илнĕ. Уйрăм халăх комиссариачĕсен çителĕксĕр тата йăваш ĕçĕсем çине кăтартса панисене Булганин йулташ тĕрĕс тесе йышăннă. Сывлăха сыхлав Халăх Комиссарĕ пулнă Чесноков йулташа РСФСР правительствин составне кĕртмен. Тюркин, Любимов, Вахрушев йулташсене çутĕç, суту-илÿ тата вырăнти промышленнăç Халăх Комиссарĕсем туса çирĕплетнĕ, анчах вĕсен ĕçĕсене критиклени вĕсемшĕн пысăк астутару пулса тăрать.

Н. А. Булганин йулташ пуç пулса йертсе пыракан РСФСР правительстви халăх шанакан политикăлла деятельсенчен тăрать. Вĕсене мĕлйунсем пулăшса тăраççĕ. Вĕсем пирĕн пĕтĕм çĕршывра пулса иртекен хăватлă çĕклен∙ÿпе вăйлă, пирĕн халăхăн пĕрлехĕпе, вăл Ленин—Сталин партине чĕререн йуратнипе вăйлă. Çавăн пек вăйлă, пĕтĕм халăх çавăн пек пĕр кăмăлпа пулăшса тăракан правительствă тĕнчере урăх çук!

Российă Федераци правительствин вăйĕ пысăк, унăн ответлăхĕ те пысăк. РСФСР правительстви—вăл пирĕн Сойузăн чи пысăк тата малта йертсе пыракан республикĕн правительстви. Хăйĕн вăй-халĕ тĕлĕшпе, халăх тăшманĕсемпе тимлĕн те пĕр пăркаланмасăр кĕрешес тĕлĕшпе, сăтăрлăхăн мĕн пур йулашкийĕсене какласа ывăтас ĕçре пĕр хĕрхенÿсĕр пулас тĕлĕшпе унăн мĕн пур сойузлă тата автономлă республикăсен правительствисемшĕн пример пулмала. Халăх хуçалăхĕпе культурăна малала вăйлатса пырас, ĕççыннисен материаллă лайăх пурнăçне малала ÿстерсе пырас тĕлĕшпе унăн пирĕн пĕтĕм çĕршыва тимлĕн, чăн-чăн большевикла ĕçленин тĕслĕхне кăтартса пымала.

РСФСР правительствин уйрăм вырăнĕ çинчен—ун çине тата пысăкрах ответлăх хуракач вырăнĕ çинчен—Булганин йулташ çапла каларĕ:

„Епĕр хамăрăн ĕç пулма тивĕçлĕ виçене нумай çитеймен-ха, уйрăмах, йулташсем, пĕр пит кирлĕ обстойательствăна шута илсен, çав виçене çитеймен епĕр. Епĕ пирĕн республикăн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Сойуз правительствипе çывăх тăни çинчен, епĕр ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе кунсеренех çыхăну тытни çинчен, кашни кунхи руководствă çинчен калатăп, вăл руководствăна епĕр ССРС Правительстви тата Молотов йулташ йенчен туйса тăратпăр.

Йулташсем, епĕр—большевиксем, халăх ирĕкĕпе, ленинла сталинла парти ирĕкĕпе йертсе пыракан çав тери ответлă ĕçе лартнă кер сем, хамăра хамăр çакăн çинчен уçăмлăн та çирĕппĕн каламала: пирĕнтен ытти сойузлă республикăн Халăх Комиссарĕсен Советĕнчен ытларах ыйтăпек мар, ытларах ыйтаççĕ. Епĕр Кремльре пурăнатпăр, пирĕн ленинла-сталинла Тĕп Комитетран тата Сталин йулташран хăйĕнчен тÿрех кăтартусем илме калама çук пысăк та телейлĕ майсем пур!"

РСФСР Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çессийĕ депутатсем делегацисемпе пĕрлешнине кăтартакан хăватлă манифестаципе вĕçленчĕ, вăл делегацисем Российăн социализмлă парламентне унăн избранникĕсене Российă Федерацинчи мĕн пур халăхсен йачĕпе саламлама пынă.

Мускав тата Ленинград, Тутар АССР делегачĕсен, Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флот делегачĕсен сумлă сăмахĕсенче пирĕн пĕтĕм халăх пурăнакан туйăмсене уççăн палăртса панă.

Делегатсем РСФСР Верховнăй Совет депутачĕсене тата чи малтанах Совет Сойузĕнчи мĕн пур халăхсемпе суйланă пĕрремĕш депутата,—Сталин йулташа хĕрÿлĕн саламларĕç.

РСФСР Верховнăй Совет депутачĕсем рабочисене, колхозниксене тата совет интеллигенцин представителĕсене чысласа, пархатарлă Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флотне чысласа хаваслă овацийе ответлерĕç.

Çак вăл хăйĕн вăйĕ тĕлĕшпе совет халăхĕн морально-политикăлă пĕрлĕхне кăтартакан хумхануллă манифестаци пулчĕ.

РСФС Республикĕн 1-мĕш созыври Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çессийĕ пĕтрĕ. Хăйсен ĕçне малала туса пыма депутатсем вырăнсене саланаççĕ. Вĕсем Мускавпа Ленинград, Тутар республикĕн делегацийĕсем, красноармеецсемпе краснофлотецсем çул çийĕ ăшă сăмах каласа йанисене, вĕсем ленинла сăнарлă деятельсем пулма, Ленин тата Сталин пек пулма çулăмлăн чĕннине хăйсемпе пĕрле илсе кайаççĕ.

(„Правда" умстатйи, ийулĕн 21-мĕш).

Йапони правительстви тăратнă вырăнсăр требованисем

Çак уйăхăн 20-мĕшĕнче Йапони посолĕ г-н Сигемицу Йут çĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ патĕнче пулса, ăна çакна каласа пĕлтернĕ: ийулĕн 15-мĕшĕнче Йут çĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕ Хучунри килĕшÿ тăрăх тата вăл килĕшÿ çумне хушса хунă картă тăрăх пăхса, Йапони посольстви Хасан (Чанчи) кÿлли патĕнчен хĕвеланăç йенчи высота (çÿлĕ вырăн) çинчи совет çарĕсене унтан илсе кайма ыйтнине йышăнман. Йапони правительстви, Манчжуго правительстви аллинчи документсем тăрăх ку ыйтăва çĕнĕрен тĕпчесе вĕренсе, вăл район Манчжуго аллинче пулмала, тесе вывăд тунă. Çакăнпа пĕрлех тата Манчжугори халăх, çав çÿлĕ вырăн çинче вăл тĕн йеркипе пулакан йăла ĕçĕсене туса тăнă, тесе çирĕплетет. Совет правительстви йаланах мирлĕ пурнăçшăн тата чикĕ хĕрринчи районра статус-квона (хальхи вăхăтри положенине) йĕркене халиччинхи пекех тытса тăрасшăн тăрăшнине палăртса пына çавăнпа та вăл статус-квона пăснăшăн ответлăх ун çине ÿкет. Йапони правительстви чикĕне халех тĕплĕн пăхса тухса палăртасшăн çине тăмасть, унăн ыйтăвĕн шухăшĕ—çав тивĕçлĕ районран совет çарĕсене халех, çийĕнчех илсе кайтарассинче, çапла тунипе канăçлăх пулса тăрĕ,—тенĕ.

Литвинов йулташ посол г. Сигемицуна çакна аса илтернĕ: Йапони ĕçĕсен поверенныйне официаллă документсем тĕллесех каласан—Хучунра тунă килĕшÿ тата ун çумне хушса хунă картă кăтартса панă, вĕсем çинче Хасан кÿлли патĕнчен хĕвеланăç йеннелле вырнаçса тăракан тусем урлă каçса кайакан чикĕсене питте уççăн çырса палăртса хунă. Картă çинче ĕлĕкхи Китай правительстви алă пусни пур. Вăл документсене кăтартнă хыççăн, вăл ыйту пирки сăмах пĕтнĕ тесе шутлама тивĕç. Апла пулсан та, çак пĕр тавлашса тăмала мар ĕнентерÿлĕн кăтартса панисене каласса Йапони правительстви темĕнле паллă мар тата Совет правительствине кăтартман даннăйсем (документсем) çине, Манчжугори йачĕ-мĕнĕ паллă мар çынсем çирĕплетсе каланисем çине, ĕненме май çукскерсем çине, тĕллесе кăтартать. Хасан кÿлли патĕнчен хĕвеланăç йенчи çÿлĕ вырăн совет территорине кĕни пирки нимĕнле тавлашса тăмали те çук. Унта халиччен те совет çар нарйачĕсене йарса тăнă, халь те йараççĕ. Совет çарĕсем хăйсен территорийĕ çинче куçса çÿрес ĕçе совет влаçĕсем йĕркелесе тăраççĕ, вăл ĕçе урăх государствă нимĕнле хутшăнассишĕн те, ун пирки нимĕнле ыйту тăратассишĕн вырăн пулма пултараймасть. Вăл районри совет нарйачĕсен пĕр тĕллеврен пусне урăх—хамăр чикĕри статус-квона (хальхи вăхăтри положенине) сыхлассинчен пусне урăх—нимĕнле тĕллев те çук. Совет Сойузĕ хăйĕн çарĕсене вĕсене йут çĕршывсене йама мар, пĕр тен пĕр хăйĕн чиккисене сыхласа усрама тытса тăрать, çакăнпа ĕнтĕ вăл ытти государствăсенчен уйăрăлса тăрать. Хĕрлĕ Çар çав чикĕсене пăсма парас марришĕн, ăна никама пырса тĕкĕнме парас марришĕн хăй ответлă пулса тăнине пĕтĕмĕшпех те туллин ăнланса тăрать, хăй ĕçĕсенче вăл çав ответлăхпа хавхаланса тăрать. Чикĕсенче пур йенчен те канăçлăх, лăпкăлăх тытăнса тăрать, ăна Йапони-Манчжуго йенĕ çеç пăсма пултарать, ун пек пулсан, кайран тухса тăрас ĕçсемшĕн вăл ответлă пулса тăрĕ те вара. Совет çарĕсем кирек мĕнле пунктра пулсан та, вĕсем йут территорисене йунаса хăратмаççĕ. Йапони правительстви малашне Манчжуго аллинчи пур текен, хăй „тĕллесе" калакан документсене кăтартсан, вара Совет правительстви вĕсене кăмăлпах пăхса тухĕ, вĕсем çинчен хăйĕн шухăшне каласа парĕ.

Посол Сигемицу, Халăх Комиссарĕ панă ответпа манăн правительствăн кăмăлĕ тулмĕ тесе шухăшлани çинчен каланă. Унăн шухăшĕпе, Совет йенĕ „темĕнле картăсем çине, çитменнине нисăта пичетленсе тухманскерсем" çине тĕллесе кăтартать. Чикĕре каллех канăçлăх, лăпкăлăх туса хурас тĕлĕшпе тата унта пулса тăнă атмосферăна çемçетес тĕлĕшпе тивĕçлĕ ĕçсем тăвас пулать. Апла тумасан Йапонин вăйпа усă курма кирлĕ çинчен вывăд тумала пулать. Совет çарĕсене илсе кайасси çинчен лартнă ыйтăва (требованине) тата тепĕр хут каласа, г. Сигемицу Совет çарĕсем Йапони жандармне вĕлерни не хирĕç протест туни çинчен пĕлтернĕ.

Литвинов йулташ г. Сигемицу пек опытлă дипломат государствăсем хушшинчи чикĕсене палăртса тăракан официаллă картăсем пирки вĕсене нимĕн вырăнне хумасăр калаçнинчен тĕлĕнни çинчен пĕлтернĕ. Хăй вăхăтĕнче картăсене пичетлесе кăларнă-и йе пичетлесе каларман, анчах ăна кура документăн вăйĕпе ĕнентерÿлĕхĕ пысăкланмасть те, пĕчĕкленмест те. Хăй тунă пĕтĕм килĕшÿсене обйазательнăй йĕркепех пичетлесе кăларассине пĕртте пурнăçа кĕртсе пыман правительствă представителĕнчен çак асăрхаттарусене илтесси тĕлĕнмеле йапала. Вăл правительствă хăй тунă вăрттăн килĕшÿсен нимĕнле вăйĕ те çук тесе шутламастех пуль. Çарсене илсе кайма ыйтни, нимĕнле документсемпе те сăлтавласа паман ыйту—вырăнсăр йапала. Çавнашкал пĕр сăлтавсăр ыйтнисем тăрăх Йапони правительстви хăй çарĕсем тăракан вырăнсене улăштарма килĕшменех пулĕччĕ. Вăйпа усă курассине илсессĕн, г. посол çапла йунасси тата хăратасси (вĕсенчен хăш пĕр государствăсем чăнах та хăраççĕ) лайăх дипломатилĕ средствă пулса тăрать тесе шутлать пулсан, унăн çакна пĕлес пулать: çав средствăпа ăнăçлăн усă курма Мускавра вăл вырăн тупаймĕ. Йапони жандармне Совет территорийĕ çинче вĕлернĕ, унта унăн пымала пулман.

Йулашкинчен Халăх Комиссарĕ Литвинов йулташ посола, ийулĕн 19-мĕшĕнче Токиори Совет полпредстви вырнаçса тăракан çĕре Йапонири темле банда кĕрсе, унта провокацилĕ листовкăсем сарни çине çаврăнтарса пăхтарнă. Унта дежурнăйра тăракан чылайах пысăк полици вăйĕсем тытса чармасăр полпредствăна пĕр çын та кĕме пултараймасть пулсан та, бандăна полпредствăна кĕме чарас тĕлĕшпе вăл полици нимĕн те туман. Токиори Совет полпредстви тата Йапонири Мускаври посольстви канăçлă пурăнмала тата кирлĕ пек ĕçлесе тăмала пултăр тесе, Йапони правительстви çÿлте асăннă ĕçшĕн айăплисене наказани парас тĕлĕшпе тата ун пеккисем малашне тек пулмала мар тăвас тĕлĕшпе кирлĕ ĕçсем тăвас пулать.

(ТАСС).

РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ—Н. А. БУЛГАНИН

Польшă влаçĕсем Совет Сойузĕн Польшăри представителĕсем тĕлĕшпе киревсĕр ĕçсем тăваççĕ

ВАРШАВĂ, ийулĕн 22-мĕш. (ТАСС). Кăçалхи ийулĕн 18-мĕшĕнчен пуçласа, Польшă влаçĕсем ССР Сойузĕн Польшăри полпредстви тĕлĕшĕпе „уйрăм режим"—урăх çĕршывсен пур дипломатилĕ представительствисемшĕн тунă, пĕтĕм тĕнчери правăн пурте йышăннă нормисемпе йăлисене пăсакан „уйрăм режим" тытса пыраççĕ, вăл ССР Сойузĕн полпредствине хăйĕн функцисене кирлĕ пек условисенче туса пыма май памасть. Çÿлте кăтартнă кунран пуçласа, кашни кунах, полпредствă çуртĕнчен тухнă çĕрте, Польшăри полпредствăн дипломати паспăрчĕлĕ сотрудниксен документсене тĕрĕслесе тăраççĕ. Чылай тĕлсенче уйрăм сотрудниксене, вĕсем служба паспăрчĕсене кăтартсан-кăтартмасан та, тытса чарса полици участкисене илсе кайаççĕ. Унта вĕсене допрос тăваççĕ. Вĕсенчен темĕнле „протоколсем" айне алă пусма т. ыт. те тума ыйтаççĕ. Урама тухнă чухне полпредствăн кашни сотрудникне, вăл шутрах дипломати паспăрчĕлĕ çынсене те, политикăлă полици агенчĕсем пĕтĕм халăх курăнмала конвойпа илсе пыраççĕ. Урамра полици агенчĕсем хăйсене хăйсем тивĕçсĕр-провокацилĕ тыткалаççĕ. Таврари çынсем курччăр тесе, полпредствă сотрудникĕсене мăшкăлас тесе, „надзора" йурийех сасăлăн тăваççĕ.

Совет полпредствине йăлтах блокадăпа çавăрса илнĕ. Полпредствăна хăйсен ĕçĕсемпе пыракансене кĕнĕ йе тухнă чух полици арĕслет. Влаçсен репреççийĕсене пула хаçат агентствисем полпредствăна хаçатсем тата ытти изданисем илсе пыма пăрахнă. Полпредствă прислугинĕ—дворникĕ, кухаркăсене тата ыттисене те—полици полпредствă территорийĕнчен илсе кайса арĕсленĕ.

Совет суту-илÿ представительствине, ТАСС представительствине тата Львоври совет консульствине те çавăн пекех блокадăла çавăрса илнĕ. Суту илÿ представительствине пынă çынсене унтан тухнă чухне арĕслеççĕ. Пайанхи кунтан пуçласа ТАСС представительстви Мускавран пыракан почтăна илсе тăраймасть. Вырăнти почтă „кайа йулать" т. ыт. те.

Çакăн пек тÿсме çук условисем туса хунă май ССР Сойузĕн Польшăри полпредстви совет правительстви йачĕпе протест панă, Польшă влаçĕсем совет сотрудникĕсемпе вĕсен çемйисен членĕсем тĕлĕшпе туса пыракан полицилĕ репреççисене чарса лартма, çавăн пекех тата полпредствă валли тата ССР Сойузĕн Польшăри пур представительствисем валли те ĕçлеме кирлĕ пек условисем туса пама ыйтнă.

РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕсем Халăх Комиссариачĕсенче

РСФСР Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çессийĕн ĕçĕсем пĕтнĕ хыççăн, депутатсем чылай Халăх Комиссариачĕсенче пулнă.

РСФСР Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнче депутат А. А. Дубйанский йулташ пулнă. Вăл Халăх Комиссарĕ Лобанов йулташ умне Воронежри гидромелиоративлă института малашне те ĕçлемеле тăвасси çинчен ыйту лартнă. Института хăварма йышăннă. Депутат Магомедов йулташ Наркоматра Дагестан АСС Республикĕнче зоотехникă тата ветеринари техникумĕсем тăвасси çинчен ыйту хускатнă. Вăл техникумсене тума йышăннă.

РСФСР Суту-илÿ Халăх Комиссарĕ Любимов йулташ патĕнче Иаçет-Хĕвелтухăç крайĕнчен суйланă депутатсем пулнă, вĕсем комиссар умне хăйсен суйлавçисен чылай сĕнĕвĕсене тăратнă. Депутатсем Иаçет-Хĕвелтухăçне таварсем илсе пырасси çинчен ыйту лартнă. Халăх Комиссарĕ депутатсенчен суту-илÿ органĕсене кадрсем суйласа илес тата вĕсене тĕрĕслес ĕçре пулăшу пама, таварсем потребитель патне мĕнле час çитнине асăрхаса тăма ыйтнă.

Йапони çар командованийĕн канашлăвĕ

Шанхайра Йапонин Китайра вăрçакан çарĕпе флочĕн аслă командованийĕн конференцийĕ пырать. Конференцине Мацуи генерал та пынă (вăл малтан Вăтаçĕр Китайра Йапони çарĕсен командующийĕ пулнă). Китайри фронтсенчи лару-тăру çинчен сÿтсе явасси—конференцинче тĕп ыйту, тесе шутлаççĕ. Çак ыйту тăрăх Йапонине уйăрлаççа доклад йанă, унта Китайа çĕнĕрен виçĕ дивизи йама кирлине ĕнентерсе панă. Мацуи генерал тата командовани Кăнтăр Китайра Сватоу тата Амойа хулисене туртса илесси пирки хытă тăраççĕ.

Йапонецсем Кантон—Ханькоу чукунçулне татса тухас та Китайа урăх çĕршывсенчен çар снарйаженийĕсем илсе пыма чарса лартас тĕлĕшпе Сватоу хулине тытса илме васкаççĕ. Кантон—Ханькоу чукунçулне сывлăшран темиçе хутчен те бомбăсем пăрахса хăйаррăн тапăнни йапонецсене ĕмĕтленнĕ результатсем паман. Ишĕлтернĕ çул участкисене чукунçул çинче ĕçлекен китайецсем хăвăртах йуса пыраççĕ.

(ТАСС).

Германи Чехословаки çине тапăнма хатĕрленет

Англири „Дейли уоркер" йатлă коммунисла хаçат Германи Чехословаки çине тапăнма вăйлăн хатĕрленни çинчен пĕлтерет. Германи,—тесе çырать хаçат,—Австрипе Чехословаки чиккине пысăк вăйсем илсе пырса каплантарать, Австрине çар материалĕсем таттисăрах турттарса пырать, çар укрепленисемпе аеродромсене вăйлăн хĕспăшаллантарать. Мĕн пур промышленнăç предприйатийĕсене вăрçа хатĕрленес ĕç валли ĕçлеттерме пуçлаççĕ. Австринчи мĕн пур хуласенче тата Венăра та Германин техникăлă çарĕсем тăраççĕ. Чехословаки чиккинчен темиçе километрта кăна аеродром тăваççĕ. В-нă хулинче те калама çук пысăк çар аеродромĕ тума пуçланă.

Венăран Прагăна кайакан чукунçулне хальхи вăхăтра Германин çар влаçĕсем контроль туса тăраççĕ.

(ТАСС).

Йапони-Манчжурин тата тепĕр провокацийĕ

Хабаровск, ийулĕн 22-мĕш. Кунта илнĕ сведенисем тăрăх, ийулĕн 21-мĕшĕнче Манчжурин икĕ моторлă лодкисем Уссури йухăнышывĕ çинче, Видноййе йатлă поçолкă патĕнче чикĕне пăсса каçса, Файнгов йатлă совет утравĕ çине Йапонипе Манчжурин 6 салтакне антарса хăварнă, вĕсем часах çыннăхра иртсе пыракан совет катерĕ çине пеме пуçланă. Пирĕн пограничниксем тунă ĕççене пула, Йапонипе Манчжурин 6 салтакне пурне те тытса чарнă, хирĕ-хирĕç персе тăнă вăхăтра вĕсенчен иккĕшне амантнă. Вăл салтаксемпе пĕрле çаксене туртса илнĕ: алла тытса пемелли пулемет, 5 йапони винтовки, „Маузер" пистолет, пин ытла пемелли патрунсем тата тĕрлĕ йапаласем.

(ТАСС).

Азербайджан ССР Верховнăй Совечĕн Çессийĕ хупăннă

Ийулĕн 22-мĕшĕнче Азербайджан ССР Республикĕн Верховнăй Совечĕн Çессийĕ йулашки ларăвĕнче Азербайджан ССР Правительствине—Халăх Комиссарĕсен Советне суйланă. Республикăн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ пулма Теймур Имам Кули оглы Кулийева çирĕплетнĕ.

(ТАСС).

Тырпулсене вăхăтра пухса кĕртесси— кашни колхозăн чи пысăк ĕçĕ

Тутаркассемпе Ишлейсем васкамаççĕ

Республикăн кăнтăр йенчи районĕсенче çĕç мар, Атăл хĕрринчи районсенче те чылай колхозсем ыраш вырса пĕтереççĕ. Сĕнтĕрвăрри районĕнче ийулĕн 21-мĕшĕнчех икĕ колхоз вырса пĕтернĕ. Ишлейпе Тутаркас районĕсенче çанталăк условийĕсем Сĕнтĕрвăрри районĕнчен пĕртте урăхла мар. Çĕр-те, çанталăк та пĕр пек пулнине уйхирти тырпулсем хăйсем те лайăх кăтартаççĕ: тутаркассен те, ишлейсен те ыраш уйĕсем вырмала пулса çитнĕ. Анчах вырма тухнисем пит сахал вара.

Вырма тухнă колхозсен ĕçĕсем те лăплантарма пултараймаççĕ. Калайкассинчи „Марксист" колхозра пĕр бригадă ийулĕн 21-мĕшĕнчех вырма тухнă. Калас пулат̆, вăл кун вырса, йатне çеç тунă, виçшер-иилĕкшер тĕм тунă та, тавăраннă. Ийулĕн 22-мĕшĕнче—те шăрăх тесе, те урăх сăлтавпа,—кăнтăрла иртсен 5-сехет тĕлнелетин уйа тухма тапраннă. Тепĕр бригади çурла тытса курман-ха, вăл... утă çулат̆.

Çавах та счетовод пит хастарлăн калаçат̆.

— Пурĕ пирĕн 71 гектар вырса кĕртмеле. 48 гектарне машинăпа, ыттине алăпа вырса, 6 кун хушшинче пухса кĕртетпĕр, — тет вăл.

Капла пулсан, чăнахах вăхăтра тухса ĕçлесен, аванччĕ. Анчах вăл счетовод пуçĕнчи план кăна. Çырса колхозниксемпе пĕрле сӳтсе-йавса çирĕплетнĕ план çук.

Колхоз председателĕ колхозниксем васкаманни çине йарасшăн. Чăнахах та хăш пĕрисем тата бригадирсем те дисциплинăшăн ахаль мар пулас кунта. Анчах та, колхозра ку таранччен тырпулсене пухса кĕртес ĕç çинчен, правительствă йышăнăвĕсем çинчен, шчербиновĕцсем чĕнсе калани çинчен сӳтсе-йавманшăн, колхозниксене ăнлантарса паманшăн председатель хăй айăплă.

Çураки ĕçĕсене ăнăçлăн иртерес тĕлĕшпе Калайкасси колхозĕ „Колос" колхозпа ăмăртса ĕçлеме договăр тунă. Колхоз хаԓ нимĕнле колхозпа та ăмăртмаст̆, „Колос" колхозпа тунă договăр çинче çураки ĕçĕсене çеç асăннă. Çавăн пекех бригадăсем хушшинче те ăмăрту çинчен сас-чĕв çук.

Ахмане, Тереç, Ехвет, Сĕлемен таврашĕнче хаԓ те Ахманĕ йăрмăркин мухмăрĕ сӳрĕлсе пĕтмен. Турай таврашсене „петровка" те чылай чăрмантарнă. Хатĕрленсе çитейменпирки ыраш вырас ĕç вăрăма кайса пырат̆.

Уйрăмăнах, куçа палăракан тепĕр çитменлĕх—вăл витнĕ итемсене хатĕрлеменни, тырă ампарĕсене тасатса дезинфекцилес ĕçе хакламанни.

— 1938 çулхи обйазательствăшăн тесе епĕр иртнĕ çулхи тырра пĕр грузовик Шупашкара тийесе каймарăмăр. Клешчсем пур тесе илмерĕç,—тет „Хĕрлĕ Сормава" колхоз председателĕ Моиççейĕв йулташ. Çак факт колхоза шухăшлаттармалла пек, анчах „Хĕрлĕ Сормава" пек малта пыракан колхозра та 14 ампартан 4 ампар çеç тасатса хунă.

Ку тĕлĕшпе ишлейсем те мухтанма пултараймаççĕ. Ку районра та ĕç хăвăртлăхĕшĕн те, ĕç пахалăхĕшĕн те сахал кĕрешеççĕ.

Шурча йалсоветĕнче пурĕ тăватă колхоз. „Çĕнĕ Акрамава" колхоз ийулĕн 21-мĕшĕнче ыраш выма тухнă. Уй кăнтăр йеннеле выртат̆, ыраш пулса çитсе шултăркаланса кайнă. Васкасах вырмала. Анчах, колхоз председателĕ Коԓцов йулташ каланă тăрăх, вĕсене Хуракас пасарĕ çывăх пулни чăрмантарат̆. Енер, ийулĕн 22-мĕшĕнче, пасар кунĕ, пурĕ 194 çынран 153 çын çеç уйра ĕçленĕ.

„Çĕнĕ Акрамава" колхозăн пурĕ 225,25 гектар вырмала. Колхозăн 2 жнейкă пур. Вĕсем хаԓ, Коԓцов каланипе, олинафтă çук пирки ĕççĕр лараççĕ.

— Коԓцовăн йаланах кирек мĕн çук. Ыттисен пур, а Коԓцовăн çук,—тет йалсовет председателĕ Грачев йулташ. Ку та тĕрĕс пулас. Колхозниксем ваԓԓи столовăй организацилеменни те Коԓцовранах килет.

„Самоԓот", „Танк", „Авангард" колхозсенче те çавах. „Самоԓот" колхозра ĕнер 102 çынран 45 çын çеç уйа тухнă. Кунта жнейкă та сапаланчăк выртат̆, пуçтарса майлаштарса та лартман.

Ишек колхозĕ, Кшаваш колхозĕ тата ытти хăш пĕр колхозсем чăнахах аван ĕçлеççĕ. Анчах Шурча йалсоветĕнчи колхозсем пек ĕçлекенсем чылайрах шутланаççĕ пулас.

Тутаркассен те, ишлейсен те васкамала.

М. К.

Ĕçĕн пахалăхĕ пысăк

Куславкка. Чăнкассинчи М. И. Калинин йачĕпе тăракан колхоз 3 кун хушшинче 80 гектар ыраш вырнă. Колхозниксемпе колхозницăсем ыраша пысăк пахалăхпа выраççĕ. Кашни бригадăрах звеносем тунă. Пучахсене пухса пырассипе тепĕр звено ĕçлет. Уйра бригадăсем, звеносем тата колхозниксем хушшинче ăмăртса ĕçлесси анлăн саралса пырат̆.

Калинин йачĕпе тăракан колхоз тырпулсене кăтартулăн пухса кĕртес, государствă умĕнчи обйазательствăсене вăхăтра пурнăçлас тĕлĕшпе Куснарти „Партин 16-мĕш сйесĕ" колхозпа ăмăртат̆.

Улттăмĕш бригадăри пĕрремĕш звенори В. Сапожникăва, Ф. Сивова, Ф. Семенава, Фигурина колхозницăсем çурлапа тырă вырас нормăна 210—240 процент таран тултарса пыраççĕ.

Бригадăсенче куԓтмассăлă ĕçе аван туса пыраççĕ. Политвулавçăсем колхозниксем валли вăхăтра хаçат-журналсем вуласа параççĕ. Колхозниксем Испанири тата Китайри лару-тăрусем çинчен интересленсе итлеççĕ.

Колхоз авăн çапма хатĕр. Итемсене тасатса хатĕрленĕ. Чи малтанхи паха тырра государствăна леççе параççĕ.

Й. Соԓанав.
Н. Ботникав.

Икĕ колхоз—икĕ тĕслĕх

Трак районĕнчи „Атăл" тата Степан Разин йачĕпе тăракан колхозсем иртнĕ çулта вăйлă тырпул туса илнипе Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкинче пулма тивĕç илчĕç.

Степан Разин йачĕпе тăракан колхоз ăнса пулнă тырпула кĕске вăхăтра пуçтарса кĕртес тĕлĕшпе пур йенчен те лайăх хатĕрленсе çитнипе вырма тухрĕ. Колхозниксем ăнса пулнă тырпула пĕр тăкаксăр пуçтарса кĕртессишĕн пĕтĕм вăйа хурса кĕрешеççĕ.

Колхозра икĕ жнейкă, вĕсемпе ĕçлекен машиноведсем лайăх ĕçлеççĕ. Кулленхи ĕç нормине ытлаштипех тултарса пыраççĕ. Кунта витнĕ итемсене кивĕ улăмсенчен тасатнă, тырă хумали ăмпарсене дезинфекцилесе хатĕрленĕ.

Колхоз уй ĕçне тухас умĕн ĕç графикĕ туса, ĕç вăйне тĕрĕс организациленĕ.

„Атăл" колхозра ĕç пачах урăхла. Уйри тырпула пухса кĕрес тĕлĕшпе план туман. Жнейкăсене пайан кунччен те йусаса пĕтермен.

Урапасем çителĕклĕ мар, кӳлмели таврашсем те йусавсăр. Авăн çапмали машинăсене те вырнаçтарса лартман. Итемсене те кивĕ улăмсенчен тасатман.

Н. Павлав.

Государствăна тырă параççĕ

Шăхасан. Районри колхозсем иртнĕ çулхи тырра 1938 çулшăн государствăна параççĕ. Хыçалкасри „Трактăр" колхоз 30 центнĕр, Атнашри Кирав йачĕпе тăракан колхоз 21 центнĕр, Çĕнĕ Мамири Ворошилав йачĕпе тăракан колхоз 28 центнĕр ытларах, „Победа" колхоз 21 центнĕр,—районĕпе 8 колхоз государствăна тырă тăратнă.

Хаԓ ытти колхозсем те государствăна тырă пама хатĕрленеççĕ. „Пинер" тата Куйбышĕв йачĕпе тăракан колхозсем государствăна пама пĕлтĕрхи тырра тасатса типĕтреç. Вĕсем çак кунсенчех леççе параççĕ.

В. Ч.

Тутаркас районĕнче йаçлĕсем кирлĕ

Районра чи лайăх колхозсенче те йаçлĕсем çук. Вăл шута „Хĕрлĕ Сормава" колхоз та кĕрет.

Стаханавкă Трофимава Дарйа çапла калат̆:

— Темĕн чухлĕ тăрăшса ĕçлеме пулат̆, анчах ача асран каймаст̆. Пĕр майах ун патне чупма тӳрĕ килет.

Чăнах та, Тутаркас районĕнчи колхозсенче йаçлĕсем çукпа пĕрех. Кĕлтесен умĕнчи пĕр-пĕр пĕчĕк макăракан ачана йăпатса ларакан хĕрача йурлат̆;

Ачине, аппине,
Ђэђине, таппине.
Райçĕрĕçпайĕ те, райсывлăхпайĕ те пухусенче лара-лара йаçлĕсем çинчен манса кайнă.
Райçĕрпайне, райсывлăхпайне,
Протоколне, ручкине—
тесе йурласан та ачасене чарас çук. Пирĕн шухăшпа Тутаркас районĕнчи работниксен халех ачасене йĕрме чарас тесен, колхозницăсене савăнăçлă ĕçлеме май парас тесен, йаçлĕсем тумалах.

У. Й.

Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Займĕ

Малтанхи çитĕнӳсемпе лăпланнă

ÇĔРПӲ. Рынгă колхозĕнче займа 2.470 тенкĕлĕх çыранса 517 тенкĕ, Иванава йалсоветĕнче 2.845 тенкĕлĕх çыранса 260 тенкĕ укçа пухнă. Çапла вара малтанхи кунсенчех районĕпе 1.880 тенкĕ укçа пухрĕç. Займа çыранас ĕçе те хастарлăн тытăннăччĕ. Халĕ районри финанс пайĕпе перекет кассинчи работниксем малтанхи çитĕнӳсемпе лăпланнине пула, займа çыранасси начарланнă.

Шĕнер йалсоветĕнче ăнлантару ĕçне тивĕçлипе йĕркелемен. Займ уполномоченнăйĕсем начар ĕçлеççĕ. Çакна пула „Глисер" колхозри 21 колхозник займа çыранаймасăр йулнă. Тавăшкасси йалсоветĕнче те ку йенĕпе начар ĕçлеççĕ. Йалсоветри 62 йединоличник хуçалăхĕнчен пĕри те займа çыранайман-ха.

Йĕкĕрвар йалсоветĕнче (йалсовет председателĕ Антонав) иртнĕ çулхи займа 5.125 тенкĕлĕх сарнă. Кăçал унтан нумайрах сарма пулат̆. Анчах та ку вăхăта çитсе пурĕ те 1.815 тенкĕлĕх çеç çыраннă. Налук агенчĕ А. Çеменав,—займ сарас йенĕпе мансăр та ĕçлĕçха,—тесе ĕçрен пăрăнса çӳрет. Финанс çекцийĕ те ĕçлемест.

Район центрĕнче те Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Займне çыранас ĕç çителĕклĕ пымаст̆. Нумай учрежденисенче служăшчисене займ çыранас ĕçе йавăçтарман. Пуԓницăра 108 çын ĕçлет пулсан, 76 çын çеç çыраннă.

Районри финанс пайĕпе перекет касси выраснсенчи налог агенчĕсемпе, займ уполномоченнăйĕсемпе ĕçлемеççĕ. Займ уполномоченнăйĕсене ку тарана çитсе те вĕсен займшăн укçа пухма права пуррине пĕлтерекен удостоверенисем паман. Районри финанс пайĕнче ĕçлекен 50 çынран займа 31 çын çеç çыраннă.

В. Васиԓйев.

Уйăхри ĕç укçи чухлĕ

Епĕр Шăмăршă районĕнчи медицинăпа санитари сойузĕн членĕсем Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Займне пысăк хастарлăхпа çырантăмăр. Шăмăршă пуԓницинчи тухтăрсем, феԓдшерсем тата сестрасем 8.970 тенкĕлĕх çыранчĕç. Кунта уйăхра илекен ĕç укçи чухлех çыраннă.

Займ укçипе епĕр хамăрăн телейлĕ пурнăçа татах та лайăхлататпăр. Ĕççыннисем государствăна кивçен панă укçа пысăк хапрăксем, савăтсем тума, çĕнĕрен шкулсемпе пуԓницасем уçма кайат̆.

Бригадирсем

Вăхăт шăп та шай сакăр сехет. Рабочисем пурте вырăнта. Кăçхине килсе пушатнă хăйăра çичĕ бригадă пĕр харăссăн реԓсăсем айне сапма тытăнчĕç. Ăмăрту пуçланса кайрĕ. Макçимав йулташ бригадинчен (бригадăра 18 çын, вĕсенчен комсомолецсемпе стаханавецсем 12 çын) тăваттăшĕ реԓсăна хăпартса пыраççĕ, ыттисем хăйăр чыхаççĕ. Пурте маттур ĕçлекенсем, çамрăксем. Бригадир Макçимав йулташ хăй пример кăтартса ĕçлет, çав вăхăтрах бригадăри рабочисен ĕçĕсене те тĕрĕслет. Йăпăхрах, ӳркенерех ĕçлекенсене малта пыракансенчен пример илме хушат̆, мĕнле ĕçлемеллине кăтартса парат̆, вĕрентет. Çапла ĕçленĕшĕн ĕнтĕ ăна пурте йуратаççĕ, хисеплеççĕ. Бригадă лайăх ĕçлени те çавăнтан килет.

Макçимав йулташ Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строительствинче çулталăк ĕçлет. Пĕр прогул та туман. Тăрăшса ĕçлесе иртнĕ çултах вăл стаханавец йатне илме тивĕçлĕ пулчĕ. Пĕлтĕр, строительствăри иккĕмĕш участкăра ĕçленĕ чух, унăн бригади нормăна йаланах 125—130 процент тултарса пынă, малта пыракансенчен пĕри пулнă.

Ырă ĕçшĕн Макçимав йулташ пĕрре кăна мар премисем те илнĕ. Акă, кăçал строительствă управленийĕ ăна икĕ хутчен 200 шер тенкĕ укçа парса премилерĕ.

Нумайах пулмаст̆ Макçимав йулташ канмали çуртран килчĕ. Халĕ вăл хăйăр сарнă çĕрте бригадир пулса ĕçлет. Ку ĕçре те бригадă лайăх ĕçлесе пырат̆, кашни кунах нормăна 130—140 процентшер тултарат̆.

Комсомолăн Тутаркас райкомĕ чукунçул строительствинче ĕçлеме йанă комсомолец Тарасав йулташ та çак çулсем хушшинче пысăк ĕçсем турĕ, чылай ӳсрĕ, малала кайрĕ. Халĕ вăл 3-мĕш участкăра аслă бригадир пулса ĕçлет, стаханавец. Иртнĕ çулта вăл реԓсăсене çул тăрăх пăрахса тухас ĕçре нормăна 160 процент тултарса пынă. Ытти ĕççенче те лайăх тĕслĕхсем кăтартат̆.

Çулйĕр Халăх Комиссариачĕ Тарасав йулташăн ĕçне хакласа, ăна „Ударнику Сталинского призыва" йатлă значок панă.

Çакăн пек маттур, хастарлă çамрăксем, комсомолецсем строительствăра сахал мар. Вĕсен йышĕ кашни кунах ӳссе пырат̆.

Ăмăрту çак кунсенче уйрăмах вăйланса кайрĕ. Кашни рабочи, кашни бригадă Пĕтĕм Сойузри чукунçул транспăртĕнче ĕçлекенсен кунне çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илессишĕн, малти рете тухассишĕн кĕрешет.

Н. Соколов.

Майор Лин Син

Китай ԓотчикĕ çырнисем*)

II. Формозă утравĕ çине тапăнни

Çак операцийе тума пирĕн командовани пит тĕплĕн хатĕрленнĕ. Çав тапăнăва тума шухăшлани çинчен ԓотчиксем пĕлмен-ха. Анчах вăл тапăну ахă мĕншĕн кирлĕ пулнă.

Пирĕн алăра çакăн пек хыпар пурччĕ: Формозă утравĕ çинче, унти пĕр аеродромра, авиацин пысăк соединенине хатĕрлеççĕ, ăна центрти фронта йамала. Пирĕн командовани çакна витĕрех пĕлсе тăчĕ: фронта йапонецсен авиацин пысăк вăйĕсем пырсан, вĕсем вара мирлĕ хуласене, хӳтлĕхсĕр халăха бомбăсемпе етемле мар хăйаррăн та тискеррĕн тустараççĕ. Пирĕн авиаци çавна тума пама пултарайман. Китай халăхĕн интересĕсем, унăн пурнăçĕ тата куԓтури пиреншĕн чи хакли. Çавăнпа пирĕн авиацин командованийĕ йапонецсен Формозă утравĕ çинче хатĕрленекен авиаци соединенине тĕп тăвас, çав соединенийе вăл чăмăртанма пуçланă тĕлтех аркатса тăкас.

Февралĕн çирĕм виççĕмĕшĕнче ирхине епĕр тăватă сехетре тăтăмăр. Тулçути килме çеç пуçлаватчĕ. Ваййа тирме савăнмашкăн хăвăртрах кайрăмăр. Ваййа хурса йăвăр ĕç тумалли куй пуçланат̆. Пирĕн авиацишĕн вăл уйсе килĕ-ши çак кун?

— Пайан çĕнтерӳ кунĕ пулат̆,— терĕ ԓотчик Ван Ши-до.

Ирхи апат хыççăн епĕр аеродрома кайрăмăр. Самоԓотсене çĕрлех хатĕрленĕ: бомбăсене çакса хунă, баксене горӳчи тултарнă, техническăй состав пире çеç кĕтсе тăнă. Епĕр пырса çитсенех, техниксем чăтаймасăр пирĕнтен:

— Час вĕçмелле пулат̆-и?—тесе ыйтрĕç.

Епĕ пуçа тайрăм, вара техниксем самоԓотсем часах вĕссе кайассине ăнланчĕç. Техниксем васкаса ӳкрĕç, хĕçпăшалсен пĕтĕм пайĕсене тепĕр хут тĕрĕслесе пăхма пуçларĕç,—вĕт операци ăнăçлă пулассиçавăнтан килнĕ. ԓотчиксем айаккарахра пухăнса тăчĕç. Вĕçев маршрутне тĕплĕн шухăшласа тата тĕрĕслесе пăхнă. Мĕн кирлине пурне те—пĕтĕм вак-тĕвексене—малтанах асăрхаса палăртса хунă.

Командовани пире уçă та тĕплĕ план пачĕ, çав плана пурнăçа кĕртмеле çеç пулнă. ԓотчиксем пурте хăйсене лăпкă та хавасла тытреç. Ĕç ăнăçлă пуласса епĕр шанса тăнă. Епĕр çапçнийех ĕçлĕхлĕ, кĕрешӳпе тулли пурнăçпа пурăннăскерсем. Океан çыранĕнче ӳссе, ларнă çамрăк йумансем çилтăвăлран хăрман пекех, пирĕн çынсем те кирек мĕнле хăрушлăхсене хирĕç те нимĕн шикленмесĕр тата пăлханмасăр кайаççĕ. Епĕ тата тепĕр хут ԓотчиксемпе штурмансен пичĕсем çине пăхса илтĕм: вĕсен тутисем çинче кулăччĕ, вĕсем вĕççе кайма приказ çеç кĕтеççĕ.

Ирхине çичĕ сехетре вĕççе тухмала тунăччĕ. Пирвайхи вуникĕ бомбардировщик сывлăша пĕрин хыççăн тепри вĕççе хăпарчĕç. Нанчан хули çывăхĕнчи аеродром тĕлĕнче епĕр пĕрле пухăнтăмăр, звенопашерĕн йĕркелентĕмĕр те стройа пухăнса Формозă утравĕ çине çул тытрăмăр.

Хĕрĕх пилĕк минут иртсен тата вунă бомбардировщик вĕççе хăпармалаччĕ. Çанталăк уйăр, анчах пирĕн крайра йаланах пулаканçи—тĕтĕм пек йасăрланакани—тавра курăма хупласа тăрат̆. Таврана икĕ километра йăхăн çеç курăнатчĕ. Епĕр пурте—вуникĕ самоԓот—çӳлелле вĕççе хăпарма тытăнтăмăр, пилĕк пин те пилĕк çĕр метр çӳлĕшне вĕççе хăпартăмăр. Пĕтĕм вĕçев çав çӳлĕшре иртрĕ. Епĕр çĕре уççăн курса пытăмăр, Йапони захватчикĕсен атти айĕнче хĕн-хур куракан çĕршыва куртăмăр. Пирĕн кашнин харпăрхăйĕн пурнăçĕ, харпăрхăйĕн ĕмĕчĕсемпе туртăмĕсем пулнă. Халĕ ĕнтĕ çав ĕмĕтсемпе туртăмсене пурне те пĕр тĕллеве: çĕршыва сыхлассине пăхăнтарнă.

Икĕ сехет хушши вĕçнĕ хыççăн тинĕс курăнчĕ. Халĕ ĕнтĕ епĕр тинçĕр çийĕн вĕçмели самоԓотсемпе вĕçĕ-хĕррисĕр тинĕс çийĕпе вĕçетпĕр. Часах утрав паллисем курăнчĕç. Сĕвек çыран тинĕс патнелле тайлăклă. Инçетри сăрт-тусем çинче çăра пĕлĕтсем. Вĕсем айалала анса пырачçĕç, утрава пĕлĕтсем хупласа хурас хăрушлăх пурччĕ. Штурман пĕлтерчĕ:

— Формозă утравĕ çийĕпе вĕçетпĕр!

Епĕр пĕлĕтсем çийĕпе пыраттăмăр, вĕсен айĕнче—унта йапонецсен авиаци соединенийе тăвакан аеродромччĕ. Çавăн пек условире пĕлĕтсем витĕр шăтарса тухма пит йăвăр, анчах епĕр хамăрăн командовани палăртса панă плана прахăç тума йе ăна пурнăçласран пăрăнма шутламарăмăр. Тавçăрулăх, чăрсăрлăх тата хăйулăх кăштах пулсан, пур тĕрлĕ чăрмавсене те çĕнтерме пулат̆.

Çакăн çинчен шухăшласа, епĕ пĕлĕтсен çийĕпе Формозă утравĕ çинче вĕçсе пыраттăмччĕ, ман хыççăн тата вуниĕр бомбардировщик пыратчĕç. Вĕсем пурте епĕ условиăй знак парасса кĕтеççĕ. Самоԓот çуначĕсене пĕрре суллантарсах ԓотчиксене пĕлĕтсем витĕр шăтарса тухма, аеродрома тупма, ăна бомбăсемпе тустарма приказ пама пулат̆. Вĕсем ним шухăшласа тăмасăр çав приказа пурнăçа кĕртеççĕ. Çав вăхăтра епĕ пĕлĕтсем хушшипе уçă вырăн курăннине асăрхарăм. Утравăн хĕвелтухăç пайне çеç пĕлĕтсем хупласа тăраççĕ мĕн, ытти пайĕ пирĕн айра уççăнах курăнса, вĕçĕмсĕр саралса выртат̆.

Епĕ çийĕнчех газ чакартăм, епĕр анма пуçларăмăр. Аеродром, хула кварталĕсем, утрав çийĕ, чукунçул кĕперĕсем, складсем лайăхах курăнакан пулчĕç. Штурман аллипе аеродром çине кăтартрĕ. Епĕр çавăнта çитме вĕçнĕ те. Епĕр унтала çавăрăнтăмăр. Лăпкăн вĕççе пытăмăр. Пирĕн ԓотчиксем пурте ман самоԓот мĕнле вĕçнине сăнаса пычĕç.

Тӳпене перекен артиллери нимĕн те шарламаст̆, Йапонин истребителĕсем сывлăшра çук,—çавăнтан епĕр пурте тĕлĕнтĕмĕр. Çӳлтен епĕр хула урамĕсенче халăх нумай пухăннине куртăмăр. „Мĕншĕн-ха вĕсем пемеççĕ?"—тĕнĕ шухăш килсе кĕчĕ ман пуçа. Епĕ пĕлетĕп—йапонецсем чейе те чăрсăр тăшмансем, тен вĕсем мĕн те пулин кĕтмен çĕртен тума хатĕрленеççĕ? Тен вĕсем засадă тăвасшăн? Пĕр самахпа каласан, пирвайхи минутра епĕ хулапа аеродром çине шикленерех пăхрăм.

Кайран епĕр пире çавăн пек лăпкăн йышăнни мĕнрен килнине пĕлтĕмĕр. Китай ԓотчикĕсем противникĕн инçетри тылне кайса çавăн пек хăйулă тапăну тума пултарассине Йапони авиацийĕ нихăçан та кĕтмен. Йапонецсен аеродромĕнче: ку ĕнтĕ пирĕн Йапонин çĕнĕ авиаци чаçĕ вĕççе килчĕ, тесе шутланă. Ангарсемпе складсем çине Китай бомбисем тăкăнма пуçласан тин аеродромра тата хулара çынсем тĕркĕшме пуçларĕç. Епĕр хула урамĕсене пĕр бомбă та пăрахмарăмăр. Китай ԓотчикĕсем мирлĕ халăха тивмеççĕ!

Ангарсем патĕнче йĕркеренех самоԓотсем тăрат̆чĕç. Вĕсене пĕр самантрах тĕтĕм хупласа хучĕ, ангар çулăмпах йăлкăшса çунма пуçларĕ, горӳчи тултарнă баксем сике-сике кайрĕç, самоԓот татăкĕсем айаккала сирпĕнчĕç. Чылай самоԓотсем пайăн-пайăн йешчĕксене çыхнипех пулнă. Епĕр вĕсем çине пеме пуçларăмăр. Нумай машинăсене ăнгара пытарнă пулнă. Епĕр çав ангарсем çине татах бомбăсем пăрахрăмăр, штурмансем бомбăсем пит тĕл тивни çинчен пĕлтерсе пычĕç. Бомбăсене пăрахса пĕтерсенех епĕр куртăмăр: авиаци соединенине пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкнă, вăл пушарта çунат̆. Епĕр самоԓотсене сулахайала çавăртăмăр та пит хăвăрт пĕлĕтсем хушшине кĕрсе кайрăмăр.

Епĕр нимĕнле инкек те курмарăмăр, нимĕн те çухатмарăмăр, тӳпенеле перекен артиллери пенине те, истребительсене те никам та курман. Пĕтĕм операцийе çав тери çиçĕм пек хăвăрт иртернĕ,—Йапонин çар влаçĕсем ăна кĕме те ĕлкĕреймен. Тапăнăва мĕнле иртермеллине çав тери тĕплĕ шухăшласа хатĕрленĕ те, пире хамăрăн командованин заданине пурнăçа кĕртме чарма никам та пултарайман. Пирĕн ԓотчиксен чĕрисем хăйулăхпа тата паттăрлăхпа çунса тăнă. Вĕсем йаланах çĕнтерес хăватлă, вĕсем тăшмана çав тери курайманнинчен пирĕн пата хăш чухне пыракан йут çĕршыв сăнавçисем те тĕлĕнеççĕ. Çавăн пек çынсем—Китай ԓотчикĕсем — хăйсен самоԓочĕсен çуначĕсем çинче çĕнтерӳ илсе пыраççĕ.

Формозă утравĕ çине тапăннă хыççăн тепĕр кунхине епĕр пур хаçатсенче те: Китай ԓотчикĕсем калама çук чăрсăр, халиччен курман хăйулă операци туса хĕрĕх самоԓота тата виçĕ çуллăх запас горӳчи хатĕрленĕ склада тĕп тунă, тесе пĕлтĕрнине вуларăмăр. Китай ԓотчикĕсем хăйсен командовани заданине чаплăн пурнăçа кĕртреç. Çĕнтерӳ ԓотчиксене хавхалантарчĕ. Çав тапăну февраԓ кунĕсенче пулнă, унчухне Йапони офицерĕсем Хиденоси тахçанах каланă каппайчăк сăмахсене вĕçренех каланă,—çав Хиденоси, вăл та Китайа туртса илме хăтланнăскер, пирĕн çĕршыва калама çук пысăк çарпа килсе кĕнĕскер: „Епĕ Китайа хул хушшине хĕстерсе илсе кайатăп", тенĕ. Анчах Хиденоси çарĕ Китай халăхĕн çиллевĕпе тата хăйарлăхĕпе тĕл пулнă, вара йапонецсен полковочĕн хăйĕн каппайчăклăхне тата çарне çухатса хĕварсах тармала килнĕ. Хаԓхи вăхăтри Йапони хиденосисен хăшпĕр вывăдсем тумала килнĕ, çавсене çырса хума кирлĕ, тесе шутлатăп епĕ.

Чи малтанах пĕтĕм тĕнче çакна курса ĕненчĕ: Китай нации пĕрремĕш класлă çар техники, хăвăрт çӳрекен бомбардировщиксемпе истребительсем, чаплă хатĕрленнĕ ԓотчиксемпе техниксем пур. Центрти фронтри тата ытти фронтсенчи сывлăшри çапăçусенче пирĕн ԓотчиксем йапонецсен ԓотчикĕсенчен лайăхрах хатĕрленни курăнчĕ. Пирĕн самоԓотсем вĕсеннинчен пысăкрах хăвăртлăхпа вĕçеççĕ. Çавăнпа Китай ԓотчикĕсем хăвăрт тата çӳлте вĕçме пултараççĕ. Пирĕн авиаци хăйĕн самоԓочĕсем çинчи пĕрремĕш класлă хĕçпăшалпа мухтанма пултарат̆. Тата пирĕн ԓотчиксем калама çук хăйулă, вĕсем нимĕнрен те хăрамаççĕ. Епĕ пĕрехинче çакăн пек пулнине астăватăп.

Пĕрре çапла пирĕн ԓотчик Ван Ши-до, хăш тĕлти фронтра Йапони истребителĕсем „аташнине" пĕлнĕ те, ыйтрĕ:

— Мана хамăн бомбардировщикпе йапонецсен истребителĕсем çине атакăна кайма ирĕк парăр-ха,—терĕ.

Бомбардировщиксем истребительсем çине атакă туни авиаци историнче пулман пулин те, епĕр ăна пĕр хут вĕçме ирĕк патăмăр. Вĕт истребитель авиацийĕ хăвăртлăхĕпе, çӳле вĕçес тата маневăрсем тăвас йенпе бомбардировщиксен авиацийĕнчен малта пулат̆. Анчах Ван Ши-до ԓотчик вĕççе тухрĕ, вăл йапонецсем çине атакă тунă та вĕсене хăвалса йанă. Тата вăл йапонецсене сийен те чылайах кӳнĕ. Ван Ши-до пит аста ԓотчик, самоԓотăн мĕн пур майĕсемпе тата вăйĕпе уçă курнă пулмала, авиацири кивĕ работниксемпе специалистсем самоԓотăн çав майĕсемпе вăйĕсене пĕлмен те пулĕ. Ахаԓрен мар пирĕн чăрсăр Ван Ши-до ԓотчике: Чи паттăрри!—тесе йат панă.

Ван Ши-до пек ԓотчиксем Китай авиацинче пит нумай. Вĕсене ирĕклĕхе йуратакан, Китай нимăна пăкăнмасăр пурăнассишĕн кĕрешме пĕтĕм вăйне пама хатĕр аслă Китай халăхĕ çуратса ӳстернĕ.

(Китай чĕлхинчен куçарнă).

(Ейăр „Правда" хаçатра куçарса пичетлетпĕр").

*) Малтан. Пуçламăшне „Чăваш Коммуни" 167-мĕш №-ре пăх.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Шупашкарти çамрăк коммуниссемпе рекомендаци паракансен канашлăвĕ

Ответлă та хисеплĕ ĕç

Ийулĕн 21-мĕшĕнче „Чăваш Коммунĕ" хаçат редакципе ПСК(б) Парти Шупашкар хула комитечĕ партине çĕнĕрен илнисемпе вĕсене рекомендаци панисен канашлăвне иртерчĕç. Канашлура Чуксин (милици управленийĕ), Гаврилăв (Йуçтици халăх комиссариачĕ), Степанăв (хула совечĕ), Жукăв (Халăх Комиссарĕсен Совечĕ), Мурзин (Йуçтици Халăх Комиссариачĕ), Морковкинă (Тир-сăран савăчĕ), Квасăв (пристăнь), Исайĕв (Чăвашсойуз), Гречканьов (профсойуз), Депутатов (хула комитечĕн инструкторĕ), Чурилов (ПСК(б)П Обком инструкторĕ), Романăвă (ПСК(б)П хула комитет çекретарĕ) йулташсем тухса каларĕç.

Йулашки вăхăтра пирĕн парти тавра партире тăманнисен йышлă активĕ ÿссе çитĕнчĕ. Иртнĕ суйлавсенче çĕршер, пиншер партире тăман активиссем коммуниссемпе пĕрле округсенчи, участкăсенчи суйлав комиççи членĕсем, доверенăйсем, агитатăрсем пулса ĕçлерĕç, вĕсем Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн кĕрешме пултарнине кăтартрĕç. Çак активиссенчен нумайĕшĕ парти ретне кĕнĕ. 1938 çулта Шупашкарти парторганизацине 80 çынна йахăн парти ретне çĕнĕрен илнĕ, 50 çынна кандидатран парти членне куçарнă.

Çамрăк коммуниссем мĕнле ĕçлеççĕ, мĕнле вĕренеççĕ? Партин пуçламĕш организацисем, рекомендатĕлсем вĕсене ĕçре, вĕренÿре пулăшса пыраççĕ-и? Çак ыйтусем тĕп вырăнта тăчĕç канашлура. Тÿрех каламала, пуçламĕш парторганизацисен çамрăк коммуниссемпе ĕçлессине ку таринччен кирлĕ пек йĕркелемен. Çамрăк коммуниссенчен чылайĕшĕ ниçта та вĕренмесçĕ. Акă, Квасăв (пристăнь), Исайĕв (Чăвашсойуз), Çтепанăв (хула совечĕ) тата ытти йулташсем те нимĕнле кружокра та вĕренмеççĕ. Çавăн пекех хăшпĕр коммуниссене парти ĕçне хутшăнтарман. „Ман шутпа, пуçламĕш парторганизацин çамрăк коммуниссене парти порученисем парса парти ĕçне хутшнăтармала. Анчах суйлав хыççăн пуçламĕш парторганизаци порученисем пани пулмарĕ", тет Çтепанăв йулташ.

Йуçтици Халăх Комиссариатĕнчи пуçламĕш парторганизаци партилĕ-политикăлă ĕçе начар мар йĕркеленĕ. Кунта кашни коммунис вĕренет, çамрăк коммуниссене те парти ĕçне хутшăнтарнă. Гаршин тата Чупраков йулташсем агитатăрсем пулса ĕçлеççĕ. Гаврилăв йулташ пропагандис пулса ĕçлет. Çапах та кунта çамрăк коммуниссемпе планпа ĕçлесе пыни çук. Сирĕн ĕçре мĕнле çитменлĕх пур?—тесе ыйтсан: „Çамрăк коммуниссемпе епĕр йĕркелĕ, план тăрăх ĕçлесе пымастпăр-ха. Вăл пирĕн çитменлĕх. Сочувствуйушчисемпе апла мар, вĕсемпе ĕçлеме уйрăм план тунă", тет партком çекретарĕ Мурзин йулташ.

Рекомендаци паракансем çамрăк коммуниссене пулăшса тăрасси çинчен манса каяççĕ. Канашлура рекомендатĕлсем те чылай пулчĕç. Анчах вĕсенчен пĕри те çамрăк коммуниссене куллен пулăшса, вĕрентсе тăни çинчен каласа пама пултараймарĕç. Çав вăхăтрах çамрăк коммуниссенчен чылайĕшĕ рекомендатĕлсем ĕçре пулăшса тăмании çинчен калаççĕ. „Рекомендаци панă та ĕç пĕтнĕ",—рекомендатĕлсенчен чылайĕшĕ çапла шутлаççĕ. Ку пĕртте тĕрĕс мар. „Рекомендаци паракансем партийе вĕсен рекомендацийĕпе кĕрекенсемшĕн ответ тытаççĕ", тенĕ парти уставĕнче. Рекомендаци паракансен çакна манмала мар.

Пуçламĕш парторганизацисен çамрăк коммуниссемпе ĕçлессине тĕпренех лайăхлатмала. Парти ретне çĕнĕрен илнĕ çынсене куллен вĕрентсе, большевикла воспитани парса пымала. Вĕсене партилĕ порученисем парса парти ĕçне хутшăнтарса пымала. Парти порученисене мĕнле пурнăçланине тĕрĕслесех тăмала. Ĕçри лайăх опытсене пĕр-пĕрне парас тĕлĕшпе партине çĕнĕрен илнĕ çынсен канашлăвне тăтăшах туса пымала. ПСК(б)П хула комитечĕн, çамрăк коммуниссене вĕрентес тĕлĕшпе, тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсемпе тата ытти ыйтусемпе те докладсем, лекцисем туса иртермеле.

Парторганизаци çамрăк коммуниссене пулăшмасть

Степанăв

Шупашкар хула советĕнче ĕçлет

Комсомол—партин резерви пулса тăрать. Епĕ комсомол ретĕнче 1926 çултанпа тăратăп. Çак хушăра комсомол комитечĕн членĕ, комсомол комитечĕн çекретарĕ те пулса ĕçленĕ. Комсомол мана вĕрентсе ÿстерчĕ.

1937 çулти февраль уйăхĕнче епĕ парти ретне кĕтĕм. Анчах кун пек канашлура пулса курманччĕ-ха. Тÿрех каламала, пуçламĕш парторганизацисем, Шупашкар хула комитечĕ те ку таранччен çамрăк коммуниссемпе çителĕклĕ ĕçлесе пыман.

Парти ретне кĕме хатĕрленнĕ вăхăтра пуçламĕш парторганизаци епĕ мĕнле вĕреннипе, епĕ мĕнле ĕçленипе интересленетчĕ. Çамрăк коммуниссемпе ĕçлессине татах вăйлатмала пек туйăнать. Анчах ĕç урăхла пулчĕ. Пуçламĕш парторганизаци халĕ епĕ вĕреннипе, мĕнле ĕçленипе пĕртте интересленмест.

Кунта тухса калакансем парти порученисене мĕнле пурнăçлани çинчен чарăнса тăраççĕ. Ку питĕ тĕрĕс. Çамрăк большевиксем парти ĕçне активлăн хутшăнса ĕçленипе çеç ÿссе çирĕпленме пултараççĕ. Суйлав вăхатĕнче епĕ 5-мĕш суйлав участкинче хула совечĕн уполномоченнăйĕ пулса ĕçлерĕм. Суйлав хыççăн мана урăх парти порученисем паман.

Манăн хамăн политикăлă пĕлĕве ÿстерес ĕçре те çитменлĕхсем пур. Чăвашсойузра ĕçленĕ вăхăтра епĕ ленинисăм кружокне çÿренĕ. 1938 çулхи май уйахĕнчен пуçласа хула советĕнче суту-илÿ пайĕнче ĕçлетĕп. Анчах кунта кружок ĕçлемест. Çапла вара халĕ пĕр ик уйăх ниçта та вĕренместĕп Хаçат-журналсене вуласа пыратăп.

Рекомендаци паракансем мĕнле интересленеççĕ çамрăк коммуниссемпе? Акă, мана партие кĕме Матвейĕвă йулташ рекомендаци панă. Епĕр унпа час-часах тĕл пулатпăр. Анчах епĕ мĕнле ĕçленипе мĕнле вĕреннипе вăл интересленмест. Ытти рекомендатĕлсем те çавăн пекех.

Ман шутпа, пуçламĕш парторганизацин çамрăк коммуниссемпе ĕçлессине йĕркелесе йамала. Тата епĕ хальхи ĕçре çĕнĕ çын, йертсе пыракан вырăнта ĕçлетĕп. Мана куллен пулăшу кирлĕ. Хула комитечĕн те çамрăк коммуниссемпе ĕçлессине тĕпренех лайăхлатмала. Çамрăк коммуниссене пухса калаçнисĕр пуçне, вĕсене тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсем тăрăх тата ытти ыйтусемпе те докладсем, лекцисем туса парсан та лайăхрах пулмала.

Вĕренетĕп, çынсене те вĕрентетĕп

Чуксин

Милици управленинче ĕçлет

Епĕ парти кандидатне кĕни икĕ уйăх çитрĕ ĕнтĕ. Унччен епĕ сочувствуйушчи пулнă. Ку таранччен мĕнле ĕçленĕ, хальхи вăхăтра мĕнле ĕçлесе пыратăп? Çакă интереслентерет кунта пухăннă çамрăк коммуниссемпе рекомендаци паракансене.

Сочувствуйушчисен группинче тăнă вăхăтрах епĕ, партине йурăхлă çын пулас тесе, вĕренме пуçларăм, парторганизаци панă парти порученисене пурнăçлама тăрăшрăм. ÇСРС Верховнăй Советне суйланă вăхăтра пуçламĕш парторганизаци мана суйлав участкинче агитатăр пулса ĕçлеме уйăрчĕ. Калинин урамĕнчи килхуçи хĕрарăмсемпе ĕçлерĕм. Епĕ вĕсене çĕнĕ суйлав саккунне çеç мар, тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсем çинчен те каласа панă. Заньатисем активлă иртнĕ. РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйланă вăхăтра та çав урамри килхуçи хĕрарăмсемпе ĕçлемеле пулчĕ.

Суйлав иртнĕ хыççăн партком çекретарĕ мана милици управленинче политикăлă агитаци ĕçне тума хушрĕ. Ман çума 8 çын çирĕплетсе пачĕ. Халĕ епĕ ку ĕçе кашни кунах туса пыратăп Çĕнĕ хаçатсем тăрăх тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсене, Совет Сойузĕнчи пулса пыракан ĕçсем çинчен ăнлантарса паратăп. Политинформаци хăйне йеверлĕ шкул пулса тăрать. Калаçусем активлă иртеççĕ, ыйтусем нумай пулаççĕ. Политинформаци усси пысăкки, рабочисемпе служăщчисем унпа интересленни çинчен каламали те çук,—вăл паллă. Çавăнпа та пĕр пĕр сăлтавпа пĕр кун политинформаци иртермесенех:—Мĕншĕн пайан политинформаци çук?—тесе ыйтаççĕ.

Кашни коммунисăн большевисăма вĕренсе алла илес тĕлĕшпе нумай ĕçлемеле, çынсене те вĕрентмеле. Çакна ыйтать пирĕнтен коммунисла парти. Политикăлă агитаци ĕçне кашни кун туса пыни хамăн политикăлă пĕлĕве хăпартма нумай пулăшать. Акă, епĕ „Известия", „Красная звезда", „Красная Чувашия" хаçатсене тата „Спутник агитатора" журнал çырăнса илетĕп. Вĕсене кашни кун вуласа пыратăп. Ку хаçатсене вуламасан агитатăр пулса ĕçлеме те май çук. Илемлĕ литературă вулани те кирлĕ. Йулашки вăхăтра А. С. Пушкин произведенийĕсене тата ытти писатĕлсен произведенийĕсене вуласа пыратăп. „Кунсăр пуçне ÇСРС историне вĕрентекен кружока çÿретĕп.

Епĕ сахал мар вĕреннĕ пулсан та, хăш чухне ăнланман ыйтусем сиксе тухаççĕ. Вара тÿрех партсома кайатăп. Партком мана ĕçре те, вĕренÿре те пулăшса тăрать. Анчах рекомендаци паракансем пулăшни çинчен калама пултараймастăп епĕ. Пайанхи канашлу вăл питĕ вăхăтлă.

Манăн ĕмĕт çитрĕ

Морковкинă

Тир-сăран савăтĕнчи работниçă

Епĕ пуçламĕш шкулта анчах вĕреннĕ. Çавăнпа епĕ политикăна сахал пĕлнĕ. Вĕренес ĕмĕт пысăкчĕ. Савăтра ĕçлеме тытăнтăм. 1936 çулта сочувствуйушчисен ретне кĕтĕм. Пĕтĕм вăйа вĕренÿ ĕçне хутăм. Политграмăтă шкулĕнче чылайах хамăн пĕлĕве хăпартрăм. Иртнĕ çулта стахановĕцсен шкулне çÿрерĕм. Хальхи вăхăтра парти историне вĕренме тытăнтăм. Анчах пропагандис çук пирки, икĕ уйăх хушши заньатисем пулмарĕç. Халĕ хула комитечĕ пропагандис тупса пачĕ те икĕ заньати йĕркелĕ иртрĕ.

Партине кĕме мана Йаблонко, Марковкин тата Смирнов йулташсем рекомендаци панă. Рекомендатĕлсем мана ĕçре пулăшмаççĕ, тесе калама пултараймастăп епĕ. Вĕсем ĕçре те, вĕренÿре те пулăшаççĕ. Вĕсем пулăшнипе епĕ чылай ÿсрĕм, хамăн политикăлă пĕлĕве хăпартрăм. Халĕ епĕ агитатăр пулса ĕçлетĕп, рабочисене хаçатсем вуласа паратăп.

Вĕренни ĕçре те пулăшать. Епĕ хамăн нормăна 135 процент тултарса пыратăп. Анчах пуçламĕш парторганизаци çамрăк коммуниссен ĕçĕсемпе интересленмест. Вăл епĕр мĕнле ĕçленине, мĕнле вĕреннине тĕрĕслемест. Хăшпĕрисем ĕçре чăрмантарса пыма та пăхаççĕ. Акă, Асафйĕв йултăшах илер. Епĕ вăл йертсе пынипе ĕçлетĕп. Анчах вăл ĕçлеме вĕрентес вырăнне час-часах вăрçса, йатлаçса тăкать. Кун пек йĕрке йурăхсăр.

Н. Г. Чернышевский

Пайан аслă вырăс ученăйĕ, критикĕ тата революцилĕ демократĕ Николай Гаврилăвич Чернышевский çуралнăранпа 110 çул тултарать.

Свйащенник ывăлĕ Н. Г. Чернышевский, Саратăври духовнăй çеминарине тата Петербургри университета вĕренсе пĕтерсе, литературă тĕлĕшпе ĕçлеме тытăнать. Малтанах вăл „Отечественные записки" журналта хутшăнса ĕçлет, кайран „Современник" журнала йертсе пырать. Унăн вăл журналта нумай статйисем пичетленнĕ.

Ача чухнех Чернышевский халăх интересĕпе Российари крепăсла тискер строй хушшинчи хирĕçÿсене сăнаса пырать. Патша стройĕ ĕçхалăхне пусмăрта тытса асаплантарнине курса тарăхать. Вăл патша саманине, тискер режима тата халăха пусмăрланине çав тери çиллесе курайми пулать 20 çула çитсенех, Чернышевский хĕрÿлĕ республиканĕц тата революцилĕ демократ пулса палăрать.

Иртнĕ ĕмĕрти 60-мĕш çулсенче Чернышевский пĕтĕм вырăс демократин идейăлă руководителĕ, çулпуçĕ пулса тăнă. Вăл çамрăксене патша влаçне, крепăсла йĕркене курайми пулма вĕрентнĕ, çутта кăларас, демократи, ирĕклĕх тата культурă шухăшĕсене хĕрÿлĕн сарнă.

Хресченсен реформине хатĕрленĕ вăхăтра Чернышевский „Современник" журналти хăйĕн статйисенче пĕтĕмĕшпех ирĕке кăларма тата вĕсене помешчиксен çĕрĕсене тÿлевсĕрех пама ыйтса çырнă. Хресченсене „ирĕке кăлараççи" çинчен менифест тунă хыççăн (1861 çулти февралĕн 19-мĕшĕ), Чернышевский патшапа помешчиксене хирĕç восстани çĕклес тесе хăй тума пултарнине пурне те тунă. Александр II патша Чернышевскине Петропавловский крепĕçне хупса лартать, кайран Çĕпĕре катаргăна йарать. Çĕперти тĕрмесенче тата тытса усранă вырăнсенче Чернышевский 19 çул пурăнса иртерет. Хăйĕн çулĕсенчен вăл пурнăçĕ вĕçне çитичченех пăранмасть. Чернышевский Саратăвра 1889 çулти октаберĕн 29-мĕшĕнче вилнĕ. Саратăвра халĕ Чернышевский памйатникне лартнă.

Чернышевскине Маркс, Енгĕлç тата Ленин пысăк хак панă, вăл питех те паларсă тăракан ученăй, çирĕп те хăйулă революцилĕ демократ пулнине палăртнă.

В. И. Ленин Чернышевскине хĕрÿлĕн йуратнă, Çĕпĕрти ссылкăри унăн фотографине йуратса, типтерлĕн тытса усранă. „Аслă вырăс писатĕлĕ", „Российари утопилĕ социалисăмăн чи аслă представителĕ", „Капиталисăма питех тĕх тарăнăн критиклекенĕ" „Пĕтĕм Российари демократ-революционер"—çапла хак панă Ленин Чернышевскине.

Чернышевский çырнисенчен нумайĕшĕ халичченех вăйлăн интереслентереççĕ, пирĕн çĕршыври рабочи класс тата ĕççынни массисем тытса тăракан идейăлă наследствă шутне кĕреççĕ. Кунта çаксем шутланаççĕ: „Очерки гоголевского периода русской литературы", ытти те паха историлĕ статйасем, романсем: „Мĕн тумала?" тата „Пролог", вĕсене писатĕл тĕрмере тата кăтаргара çырнă, „Дневник" тата Чернышевскин ытти произведенисем те.

Строительствă ĕçĕ йулса пырать

ЙЕТĔРНЕ Каçал Шăматра çĕнĕ шкул çурчĕ тума тытăнчĕç. Планпа ку шкула çĕнĕ вĕренÿ çулĕ пуçланнă тĕле туса пĕтермеле. Анчах строительствăра ĕç малашне те пайанхи пекех пырсан, шкул çуртне кăтартнă срукра туса пĕтерессе кĕтме çук.

Строительствă ĕçĕ йапăх пыни пĕтĕмпех йалсоветсемпе колхоз правленийĕсенчен килет. Вĕсем çителĕклĕ ĕç вăйĕ, кирлĕ материалсем парассипе тимлĕн ĕçлени курăнмасть. Çухра йалсовечĕн (председателĕ Макарăв йулташ) планпа кăтартнă тăрăх 150 кубла метр строительствă материалĕсем турттармала пулнă, вăл пайанхи куна та 20 кубла метр çеç турттарнă.

Кăмаккассинчи „Клевĕр", Анат Сăнарти „Çĕнĕ çул" тата Улăх Шăмат колхозĕсĕм те строительствă материалĕсене хатĕрлессипе чăтма çук йапăх ĕçлеççĕ.

Анат Сăнарти „Çĕнĕ çул" колхоз 100 кубла метр йăвăç хатĕрлес вырăнне пĕтĕмпе те 35 кубла метр çеç хатĕрленĕ.

В. Çеваç.

Учот ĕçне йĕркелемен çĕрте

Шупашкарти „Стройдеталь" савăтĕнче ĕçлекенсем учот ĕçне йĕркелесе йарасси çинчен кашни пухура тенĕ пекех калаççĕ, тĕрлĕрен решенисем те йышăнаççĕ. Анчах ĕç йусанни курăнмасть. Йулашки вăхăтра ун çинчен калаçма та пăрахрĕç ĕнтĕ.

Савăтра стахановла ĕçлекен рабочисем сахал мар. Кашни рабочи стахановĕц йатне илесшĕн тăрăшса ĕçлет. Сборочнăй цехри Йелхимăв йулташ бригади уйăхри плана йаланах 150—170 процент тултарса ĕçлет. Смолăв йулташ бригади те ку бригадăран кайа йулмасть. Шутласассăн, çак бригадăсенче чылай стахановĕцсем пулмала. Анчах мĕн курăнать кунта! Вăхăтлăха савăт директăрĕ пулса ĕçлекен Науман йулташ каланă тăрăх çулте кăтартнă бригадăсенче пĕтĕмпе те икĕ стахановĕц кăна (икĕ бригадир: Йелхимăвпа Смолăв йулташсем). Станокпа, аггрегатпа йе ытти çĕрте ĕçлекенсенчен стахановĕцсем çук. Савăтра та 4 стахановĕц кăна. Мĕншĕн тесен савăтра малта пыракан бригадăсем тăватта çеç, уйрăм рабочисен ĕçĕсене шута илмен. Хăш рабочи плана тултарса пыраймасть, кам лайăх ĕçлет—çакна савăт директăрĕ те, маçтăрсемпе бригадирсем те ответлеме пултараймаççĕ. „Епĕр рабочисене нормăсем паман, бригадăсене çеç панă" теççĕ руководителсем. Нормировщик Лобушĕв: „кашни рабочин ĕçнех учот туса пыма çук, ку пирĕн пысăк предприйати мар", тет.

Çакăн пек ĕçлесе пынăран та ĕнтĕ савăтра ĕç йапăхса кайнă. Стахановла йухăм, ăмăрту ĕçĕ начар саралса пыни, ĕç дисциплини йапăххи, машинăсемпе туллин усă курмашни—çаксем пурте учот ĕçне йапăх туса пынăран килнĕ. Руководителсем ăна ăнланса илмен.

Рабочисен хастарлăхĕ пысăк. Анчах йĕркелĕ ĕçлеме майсем туса паман. Час-часах материалсем çитмеççĕ, йе мотор ытлашши вĕриленсе кайнипе станоксем ĕçлеме пăрахаççĕ. Ийулĕн 19-мĕшĕнче мотор ĕçлемен пирки рабочисем виçĕ сехет ахаль тăнă.

Çак çитменлĕхсем пулнă пирки те ĕнтĕ савăт çирĕплетнĕ графикă тăрăх ĕçлесе пыраймасть, чылай ĕçсем тăрăх плана тултараймасть. Пайанхи куна савăтăн Шупашкарта тăвакан Совет çурчĕ валли 738 штук чÿрече рамĕ, 401 квак т. мт. ĕçсене тумала. Рамă тăвассипе плана 60 процент, алăксем тăвассипе—40 процент çеç тултарнă. Çавăн пекех 880 вырăнлă шкул строительстви панă заказсем те вăхăтра пурнăçланса пымаççĕ.

Хар Лисин.

Н. Г. ЧЕРНЫШЕВСКИЙ

УХМАХ

(„Мĕн тумала?" йатлă кĕнекерен)

Петербургри пĕр пысăк гостиницăри прислугă пĕр иркхине хăй мĕн тумалине тавçăрса илме тăн çитерейминĕх хăраса ÿкнĕ. Хăрассин сăлтавĕ акă мĕнтен килнĕ: иртнĕ каçхине, 9 сехет тĕлĕнче, гостиницăна чăматанлă господин килсе кĕнĕ, хăйне пĕр пÿлĕм илнĕ, паспăртне те кăтартнă, чей тата котлет пама ыйтнă. Унтан çак господин прислугăна хăйне каçхине никам та кансĕрлемеле марри çинчен асăрхаттарнă, мĕншĕн тесен вăл ывăннă пулнă, канлĕн çывăрасси килнĕ, çапах та, мĕнле çывăрсан та иркхинĕ сакăр сехет тĕлĕнче тăратма хушнă вăл, ир тăрса хăвăрт тумали ĕçсем нумай пулнă имĕш унăн. Хăй мĕн калас пеккине каланă та, господин алăка хупса хунă. Коридора йулнă прислугăна пÿлĕмре котлет ваклакан çĕçĕпе вилкă тата чей стаканĕнчи сахăра кĕмĕл кашăкпа чанкăртаттарса пăтратнă сасăсем çеç илтĕннĕ, вăл сасăсем те часах лăпланнă—господин çывăрчĕ те пулас. Ир пулнă. Сакăр сехет тĕлĕнче прислугă каçхине кĕрсе выртнă хăйхи господинăн пÿлĕм алăкне пырса шакканă, анчах шалтан сасă илтĕнмен. Прислугă хытăрах, тата хытăрах шакканă—господин çапах сасă паман. Çав тери вăйлăн çывăрать пулас вăл, тесе шутланă прислугă. Тепĕр чĕрĕк сехетлĕхе кĕтнĕ вăл. Каллех шак кама пуçланă. Шакканă-шакканă, господина вăл вăратайман. Унтан ытти прислугăсемпе, буфетчицăсемпе канашлама тытăннă.

— Мĕн те пулсан пулман-ши ăна?

— Алăка çĕмĕрсе кĕрес!

— Çук, апла йурамасть. Полицейскисене чĕнсе килмесĕр алăка çĕмĕрме хушмаççĕ.

Канашласан-канашласан пÿлĕмри господина вăратас ĕçе вĕсем тепĕр хут пуçăнна. Хальхинче те вăранмасан вара полицейскисене пĕлтерес тесе шут тытнă. Шакканă вĕсем. Пÿлĕм алăкне паçăрхинчен темиçе хут хыттăнрах шакканă. Çук, шалтан нимĕнле сас-чĕвĕ те илтĕнмен. Полицейскисене чĕнме чупнă. Вĕсем килсен мĕн пулассине кĕтме пуçланă.

Вунă сехет тĕлне полицин пĕр чиновникĕ çитнĕ, чи малтанах пÿлĕм алăкне хăй шаккаса пăхнă, унтан прислугăсене шаккама хушнă. Анчах, паçăрхи пекех, ĕç тухман, шаккание хирĕç пÿлĕмре пĕр сасă та пулмен.

— Нимĕн тума та çук—тенĕ чиновник.—Çĕмĕрес пулать алăка.

Алăка çĕмĕрнĕ. Пÿлĕм пушпушах.

— А ну-кă, крова? айне пăхар-ха.

Çук. Господин унта та пулман. Полици чиновникĕ сĕтел патне пынă,—сĕтел çинче пĕр листа хут саралса выртнă, хут çине шултра саспаллисемпе çак сăмахсене çырса хăварнă пулнă:

„Каçхине 11 сехет тĕлĕнче тухса кайатăп, кайала тавранмастăп. Çĕрле икĕ сехетпе виçĕ сехет хушшинче мана Литей кĕперĕ çинче илтме пултарĕç. Никама та айăплама хушмастăп".

— Ак хăйхи мĕскер вăл, халĕ ĕнтĕ йăлтах ăнланăмала,—тенĕ полици чиновникĕ.—Атту-ха нийепле те тавçăрса илме пултарайманччĕ.

— Мĕн-ха вара, Иван Афанасйĕвич?—тесе ыйтнă буфетчик.

— Чей парăр-ха, вара калатăп.

Полици чиновникĕн калавне гостиницăри прислугăсем кайран та чылайччен манайман, мĕн курнă çынна кала-кала панă, сÿтсе йавнă. Вăл калавăн историйĕ акă мĕнле пулнă.

Каçхине, 3 сехет çитес умĕн—каç пĕлĕтлĕ те çав тери тĕттĕм пулнă,—Литей кĕперĕ варринче вут çути курăннă, çутă курăннă курăнманах пистолетран пенĕ сас крĕслетсе кайнă. Хуралçăсем тата иртен-çÿренсем те çав крĕслетнĕ сас патне чупса пынă—унта никам та, нимĕн те пулман. Итакальтен пемен ĕнтĕ, перĕнсе вилнĕ те кĕпер айне чикĕленсе ÿкнĕ, тенĕ, хăшĕсем. Тепĕр самантрах кĕпер çине пакурсем, пулă сĕрмели ятмасем сĕтерсе килнĕ, шыва шампăртаттарса шырама пуçланă. Шыранă шыранă—атмасемпе, пакурсемпе хăма татăкĕсене турта-турта кăларнă, анчах перĕнсе вилнĕ çын ÿтне тупайман. Вара ăçтан тупас тетĕн-ха. Çĕр тĕттĕм. Тен вăл çын вилли халиччен тинĕсе те йухса çитрĕ пуль—кай та шыра ăна. Шыракансен хушшинче тавлашу тухса кайнă.

— Тен кунта нимĕнле çын вилли те пулман пуль?—тенĕ пĕрисем.—Тен вăл пĕр-пер ÿссĕр çын, чарусăр çын, ухмахланса пăшал персе йанă та хăй тарса пытаннă. Пулма пултарать вĕт? Тен вăл çын çакăнтах, пирĕн хушăрах хăй ăшĕнче шăл йĕрсе тăрать, хăйне тăрăшса шыракансенчен кулать пуль.

— Мĕнле апла пулма пултартăр?—тенĕ нумайĕшĕ.—Ухмахланса пулĕ сана, çамки тĕлĕнчен пенĕ те çакăнтах пĕтнĕ ĕнтĕ вăл.

— Йурать, перĕннĕ тейĕпĕр. Мĕншĕн перĕнмеле-ха?

—Ÿссĕр пулнă?

— Перĕнмешкĕн пĕр-пĕр сăлтав пулнă?

— Простă ухмах пулнă вăл,—тенĕ пĕри. Унăн сăмахĕпе пурте, малтан „перĕнмен" тейекеннисем те килĕшнĕ. Чăнласах та ÿссĕрпе-и, сăлтавĕ пуррипе перĕннĕ-и, чарусăрлăхпа-и, тен перĕнмен те, ахаль çеç шуткă тăвасшăн пулнă пулĕ—пурпĕрех ăссăр, ухмахла шуткă.

Кĕпер çинчи каçхи ĕç çакăнпа чарăнса вĕçленнĕ. Иркхине çеç вара гостиницăра тĕплĕн пĕлнĕ: ухмах çын ухмахланса мар мĕн, чăнласах та перĕнсе вилнĕ. Çапах каçхине кĕпер çинче тавлашса йулашкин сăмахĕпе килĕшсе уйăрăлнисем хăйсен шухăшнех чăн туса хăварнă: чарусăртан мар, ухмахланса мар, чăн-чăнах перĕнсе вилнĕ пулсан та пурпĕрех ухмах. Чăнах та ĕнтĕ чарусăртан çеç кĕпер çинче пăшал пенĕ пулсан, вăл çынна тĕп лĕн хак пама та çукчĕ—те ухмах вăл, те чарусăр. Халĕ ĕнтĕ паллă, ухмахсăр пуçне кĕпер çинче кам перĕнсе вилтĕр? Мĕнле-ха вара кĕпер çинче? Мĕншĕн? Ухмахла вăл кĕпер çинче!—çавăнпа та вăл çын ухмах, ун пирки нимĕн иккĕленмели те çук.

Каллех хăшпĕрисем ĕненмен:

— Кĕпер çинче перĕннĕ! Çук. Кĕпер çинче перĕнмеççĕ. Апла пулсассăн перĕнменех вăл.

Ĕненменнисем хăйсен шухăшĕсем тĕрĕс маррине часах ăнланнă. Гостиницăри прислугăна полицине чĕнтернĕ пулнă. Чĕнтернĕ те кĕпер айĕнчен çаклатса кăларнă, пуля йĕррисемпе шăтăкланнă картус кăтартнă. Çак картус ĕнер каçхи господин пуçĕ çинче пулнă картус иккенне прислугă та, пурте йышăннă.—Чăнласах та перĕнех иккен.

Перĕнекен „ухмах" пулнă тенĕ сăмахпа каллех пурте килĕшнĕ. Çавăнтах тата хăйсен сăмахне сарсарăк тепĕр май çавăрса çаптарнă:

— Кĕпер çинче вĕт,—сăп-сăмăл шуткă! Вăл ĕнтĕ перĕнсессĕн, перĕнсе те витĕмлĕн тивĕрейменсессĕн, чун тухиччен нумай асапланас мар тесе тунă ку ĕçе. Питĕ аслă тунă! Начартарах амансан та вĕт, шыва сиккипе, хăвăн сурану ыратнине туймасăрах пĕтме пултаратăн. Да, кĕпер çинче... Питĕ те аслă çын, çав тери аслă ĕç тунă.

Халĕ ĕнтĕ тавăшне илтесе, такăшне ĕненмеле,—ухмах та аслă та.

6

ИСПАНИРИ ФРОНТСЕНЧЕ

Ийулĕн 21-мĕшĕнче Левант фронтĕнче кунĕпех тата çĕрĕпех хайар çапăçусем пынă. Вивер районĕнче Итали çарĕсем темиçе хутчен те Сегорбене каймали прохода туртса илме хăтланса пăхнă, анчах кашнинчех республиканĕçсем хайаррăн çапăçса вĕсене чарса тăнă. Фашиссен 75 самолҌочĕ республиканĕçсен пуҌницийĕсем çине, çавăн пекех Вивер йалĕ çине те темиçе хутчен бомбăсем пăрахнă. Çапах та ку республиканĕçсен хирĕç тăрса çапăçас вăйне хусайман. Вивер районĕнче çапăçакан Итали çарĕсен чаçĕсем патне çĕнĕ вайсем татти-сыпписĕр пырса тăраççĕ.

ХаҌхи вăхăтра тăшман айккинчен çавăрăнса пырса Теруел—Сагунто çулĕ çине тухасшăн пĕтĕм вăйне хурса тăрăшат.

Вăтаçĕр фронтри Естремадурă участкинче пăлхавçăсем республиканĕçсен чылай позицийĕсене атакăлама хăтланса пăхнă, анчах вĕсене кайала хăваласа йанă.

Ытти фронтсенче улшăнусем çук.

(ТАСС).

Китайри вăрçă

Вăтаçĕр фронтра Йанцзы йуханшывĕн тĕрем хĕррисенче вăйлă çапăçусем пулса пыраççĕ. Ийулĕн 19-мĕшĕнче Китай çарĕсем йапонĕçсене йуханшывĕн çурçĕр çыранĕ çинчи Ванцзйанран хĕссе кăларнă. Анăçлă контратакăсем туса Китай çарĕсем хăйсен Матан, Пынцзе тата Хукоу хулисем патĕнчи позицийĕсене лайăхлатнă. Пынцзе патĕнче Китай чаçĕсем йапонĕçсен отрйадне пысăк тăкаксем кунĕ, ăна вис̧ĕ йенчен хупăрласа илнĕ. Йанцзыран кăнтăр йенверехре Китай артиллерийĕ Йапони карапĕсене Пойанху кӳллине кĕме чарса тăрат.

Йанцзы йуханшывĕ çинче хăйсен флотне вăйлатса, йапонĕçсем çырансем çинче анлă операцисем сарса йама тăрăшаççĕ. ХаҌхи вăхăтра çурçĕр çыранĕ çинче Йапонин пĕр дивизийĕ çапăçат, кăнтăр çыранĕ çинче—2 дивизи.

Çурçĕр Китайра Йапони командованийĕ ШаҌдун провинцин кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчен çарсене илсе кайат. ХенаҌ провинцинче Çуйчжоу районĕнче Китай çарĕсем йапонĕçсене хирĕç пысăк çапăçусем пуçланă. ШаҌçи провинцинче партизансен чаçĕсем Йапони колоннине ЙуаҌпуйран хĕссе кăларнă.

(ТАСС).

ФинҌанди самолҌочĕ совет чикки урла вĕçсе каçнă пирки

ФинҌанди самолҌочĕ совет чиккине пысăккăн пăснă пирки, ФинҌанди хаçачĕсем çапла çыраççĕ: „Тĕрĕслесе пăхнă хыççăн, ФинҌанди лҌотчикĕ аташса кайса чикĕ урлă вĕçсе каçнă. ФинҌандин йут çĕршыв ĕçĕсен министерстви çав ĕç пирки ийулĕн 20-мĕшĕнче ССР Сойузĕн ФинҌандири полпредĕнчен Деревйанскирен каçару ыйтнă“.

(ТАСС).

РСДР Партин II-мĕш сйесĕ пулни 35 çул тултарас умĕн

Пĕтĕм Сойузри Коммунистсен (болҌшевиксен) Партин Мускав Комитечĕпе Мускав хули Комитечĕ РСДР Партин II-мĕш сйесĕ пулни 35 çул тултарнă йатпа выставкă хатĕрлет. Выставкăра—II мĕш сйес тĕлне Росçийăра економикăпа политикăлă лару-тăру мĕнле пулнине, Ленинпа Сталинăн сйеса хатĕрленес тапхăрти революцилĕ ĕçне, „Искра“ хаçатăн ĕçне, Ленин çав сйесра çĕнĕ типлă парти—болҌшевиксен партине тăвассишĕн кĕрешнине кăтартакан материалсем пулаççĕ.

* * *

Калинин хулинче партактивăн облăçри çурчĕ РСДР Партин II-мĕш сйесĕ пулни 35 çул тултарнă тĕле пропагандиссемпе докладчиксем валҌли консуҌтаци организацилене. Ийулĕн 25-мĕшпе 30-мĕш кунĕсем хушшинче мĕн пур пуçламĕш парторганизацисенче, историлĕ сйес пулнăранпа 35 çул иртнĕ йатпа, парти пухăвĕсем пулса иртеççĕ.

* * *

Политикăлă литературă кăларакан государствă издательстви РСДР Партин II мĕш сйесе пулнăранпа 35 çул тулнă йатпа чылай кĕнекесем пичетлесе кăларат. Халĕ пичетрен Ленин çырнă „Что делать“ кĕнеке пичетленсе тухнă, тираж 100 000 екземпҌар. Çывăх кунсенчех Ленин çырнă „Рассказ о втором с'езде РСДРП“ йатлă кĕнеке пичетленсе тухат. В. И. Ленинăн „Шаг вперед, два шага назад“ йатлă кĕнекине тепĕр хут кăлараççĕ; Крупская çырнă „О втором с'езде РСДРП“ йатлă кĕнеке пичетленет.

Йем. Йарославский çырнă „К 35-летию II-с езда РСДРП“ йатлă брошурă пичетрен тухнă.

(ТАСС).

Санитари авиацийĕ пилĕк çул тултарни

Август уйăхĕнче Сойузăн санитари авиацийĕ пилĕк çул тултарат. Каçалхи çул вăл тăвакан ĕçсем, пелтĕрхипе танлаштарсан, икĕ хут ӳснĕ. Пелтĕрхи çурçул хушшинче санитари самолҌочĕсем пурĕ 4.000 сехет вĕçнĕ, каçалхи çурçул хушшинче—13 000 сехет вĕçнĕ. Вĕсем йулашки 6 уйăх хушшинче 1000 йахăн чирлĕ çынсене кирлĕ çĕре илсе пынă, 750 специалис-врача пулăшу пама кирлĕ çынсем патне илсе пынă.

Пур облăçсемпе крайсен центрĕсенче те пĕкех васкавлă сывлăш пулăшăвĕн станцийĕсем пур. Перремĕш хут ыйтсанах чирлĕ çынна пулăшма кайма çав станцăсенчен врачсем вĕçсе тухаççĕ. Врачсене тата чирлĕ çынсене самолҌотсем çине лартса çӳренĕшĕн укçа илмеççĕ.

(ТАСС).

Çар шкулĕсене кĕме 4 пин зайавлени панă

Çар шкулĕсене кĕме зайавленисем илесси вĕçленсе пырат. Мускаври çамрăксем районсенчи çар комиссариачĕсене 4.000 ытла зайавленисем панă. Шкулсене кĕмели кандидатсене кирлĕ çĕре йама тытăннă.

Каллех уполномоченнăй...

Епĕр пырса кĕнĕ чухне йалсовет председателĕпе çекретарĕ пĕр-пĕр ĕç тума тытăннă пулас: председателĕ шкап умне тăнă та темĕнле папкăсене вырăнтан вырăна илсе хурат, хăшпĕр папкă ăшĕнчи хутсене йăлтах уçа-уçа пăхат. Çекретарĕ района йе районтан килекен уполномоченнăйсем валҌли сведенисем хатĕрленĕн туйăнат: цифăрсенĕ шчотпа шутлат, пĕтĕмпе мĕн чухлĕ пулнине графаласа тунă уйрăм хут çине çырат.

Вăхăта илсен, тĕрĕссипе 11 сехет çитет, вĕсен ходикĕ, вăл те ирхи, те каçхи вăхăта кăтартат,—пĕлмеле мар, ултă сехете çывхарат.

Вăл кун йалсоветри колхозсенче клевĕр, утăлăх вика, утă çулса типĕтес, вĕсене капана хывас хĕрӳ вăхăт пырат.

Йалсовет çекретарĕ колхоз председателĕсене, бригадирĕсене, йал уполномоченнăйсене йе пĕр сăмахпа каластăк, йалсовет хăйĕн умĕнчи пĕтĕм ответлă çынĕсене пухма дежурнăйсем урлă повесткăсем салатрĕ.

— Астăвăр, спискăра кăтартнă çынсене шыраса тупса, ал пустарăр. Утă çулнă çĕре кайăр, капан хывакансем патне çитĕр, уйра ăçта çын курăнат, унта чупăр! Вĕсене тупмасăр, ал пустармасăр ан килнĕ пултăр! Ан манăр, вĕсен кунта кăнтăрла тĕлне çитмеле.

Дежурнăйсем йалсене саланса пĕтрĕç. Пĕр вăхăтлăха çекретарсĕр пуçне йалсоветра никам та йулмарĕ, тепĕр хут вăл шчотпа тĕмĕн шутлама тытăнчĕ.

Кăшт тăхтасан, кантăк умĕн велосипед иртсе кайни çекретар ĕçне татах хăвăрттатма пулăшрĕ пулас, йăпăр-йапăр татах тепĕр сводкăн итокне йĕркелесе çитерчĕ.

— Епĕр çитрĕмĕр. Ну мĕнле, Клементйĕв, хатĕр-и? Колхоз председателĕсем халех пухăнмала-и?

— Халех. Пĕтĕмпех хатĕр. Кăнтăрла тĕлĕнче пухăнма повесткăсем йатăмăр.

Ку велосипедлă çын районтан килнĕ уполномоченнăй пулчĕ иккен. Хăй каланă тăрăх, парти Шупашкар райкомĕнче ĕçлет вăл, инструктăр, Алексейĕв.

Халĕ йалсоветра çанталăк мĕнле тăни çинчен калаçу пуçланса кайрĕ. Хăшĕшĕн —халĕ çанталăк уйар тăни аван та, уй ĕçĕсене ăнăçлă пухса кĕртме пулăшат. Тепришĕн—сийенлĕ, тырпула ытла пĕрсе лартат...

Çак калаçу вăхăтĕнче районтан тепĕр представитĕл çитрĕ. Ку финанс пайĕнчен, Анани Йегорăв. Чылай ыйтусемпе тухнă пулмала вăл. Зайом сарасси мĕнле пыни тата укçа-тенкĕ пухас ыйтусем çинчен йалсовет çекретарĕпе пĕр-икĕ сăмах каласса илчĕç. Сведĕни ыйтрĕ.

— Ахă. Хамăр йалта зайом сарасси начар пырат иккен. Подпискă та йĕркелемен пулас. Çапла пулмала çав. Колхозăн малтанхи председателĕ ĕçлемест. Колхоз пичетне Йегорăва,—пĕлеттĕр пулĕ ăна, Йаккăв ачи, — панă. Унта халĕ, колхоз правленинче, йĕркелĕх тупма хĕн.

— Чăнах-и вăл?—тĕлĕнсе ыйтрĕ пăсăр каланă инструктăр Алексейĕв.

— Чăнах пулмасăр.

Çакăн хыççăн Алексейĕв телефон патне пырса шăнкăртаттарчĕ.

— Почтă! Почтă!.. Райзо пар. Райзо? Райзо-и ку? Акă мĕн. Иккассинчен ку. Туликассинчи колхоз, тăхта-ха, колхоз йачĕ мĕнле-ха, калăр-ха, а „XI лет Чувашии“ колхоз... йухăнма пуçланă. Председател ĕçлемест, пичетне вăхăтлăха Йегорăв аллине панă. Представитĕл йарăр. Мĕнле?..

— Систер-ха тата, Платкари колхоз председателĕ пĕрмай ĕçсе çӳрет,—хутшăнчĕ йалсовет председателĕ Демйанăв йулташ.

— А тата,—пуçларĕ татах Алексейĕв,—Платкари колхоз председателĕ пĕрмай ĕçсе çӳрет. Мĕн те пулсан, мерăсем йышăнăр... Йурат, йурат. Тăвăр!.. Çапла!.. Отбой пар...

Кăштах тăрсан Платкари колхозран колхоз председателĕн заместителĕ, колхоз счетоводĕ тата тепĕр бригадир çитрĕç. Вĕсемпе канашлу уçрĕç. Ытти колхозсенчен чĕннĕ представителсем килсе вăхăта та иртерсе çӳремерĕç. Килмерĕç.

Алексейĕв канашлу кун йĕрки тăрăх тухса каласма тытăнчĕ:

— Тырпул пухса кĕртме хатĕр-и?

— Аш-какай тăратас плана миçе процент тултарнă?

— Сĕт-çу?

— Çулйĕр строителстви?..

— Зайом?..

Канашлу хупăнчĕ. Районтан килнĕ уполномоченнăйсем тухса карĕç. Вĕсем хыççăн районти çĕрĕç пайĕнчен Николайĕв зоотехник тата тепĕр ветеринари врачĕ çитрĕ. Татти-сыпписĕр уполномоченнăйсем килсе тăраççĕ. Йалсовет çурчĕн алăк йаланах уçăлса хупăнат. Каллех уполномоченнăй... Анчах ĕçне тумасăрах тухса шăвăнаççĕ.

Заҥати пĕтрĕ. КанцеҌари йалсовет шкапĕнче шăши кăлтăртатнă сасăпа йанрама тытăнчĕ.

Çакăн пек Шупашкар районĕнчи Иккасси йалсовечĕн ийулĕн 13-мĕш кунĕнчи дневникĕ. Дневникне кура ĕçĕ те çавăн пекех ĕнтĕ.

Ив. Моçейĕв.

Çамрăксем валҌли сывлăх çурчĕсем

ПСÇЛКС 20 çул тултарнине паллă тăвас майпа Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн канмали çуртсен Тĕп управленийĕ йатарласа çамрăксем валҌли канмали çуртсемпе сывлăх çурчĕсем тăват. Çав канмали çуртсенче çулсеренех 18 пин çын таран канма пултарат. Путевкăсене комсомол организацисем салатаççĕ.

6 канмали çуртпа пĕр сывлăх çурчĕ уйăрнă та ĕнтĕ, вĕсенче 1035 койкă шутланат.

Канмали çуртсен Тĕп управленийĕ çавăн пекех тата мухтавлă йубилей тĕлне хăйĕн сывлăх çурчĕсенче шкулта вĕренекен 16 пин ачана кантарма йышăннă.

(ТАСС).

Чăваш совет писателĕсен сойузĕнче

Йулашки вăхăтра чăваш совет писателĕсен сойузне çĕнĕрен чылай членсем кĕнĕ. Вĕсем хушшинче пурте тенĕ пекех хăйсен пултарулăхне чылайăх палăртнă çамрак писателсем пур.

Сойуз правленин çак кунсенче пулса иртнĕ ларăвĕсенче писателсен сойузне 6 çынна илнĕ. Вĕсен хушшинче: К. Пайрăш тата Ухсай Йаккăвĕ (унччен вăл кандидат пулнă).

Мих. Белова, Куçма Чулкаçа, Ал. Алкана тата Ив. Малгайа кандидата илнĕ.

Ив. Е.

Çулйĕр çекцийĕсем йапăхса кайнă

ТРАК. Районра чылай йалсоветсем çулйĕр строителствинче йапăх ĕçлеççĕ. Йулашки вăхăтра уйрăмăнах йалсоветсем çĕнĕрен кĕперсем тăвассипе киввисене йусас тĕлĕшпе ĕççене йăвашлатрĕç.

Мăн Шетмĕ йалсоветĕнчи Кивйалта çăва тухнăранпах кĕпере йусамаççĕ. Кĕперен каштисем, хăмисем çĕмĕрелсе пĕтнĕ, йăвăртарах лавсемпе, автомашинăсемпе каçса çӳреме хăрушă. Дворик йалĕнчи кĕпер те йурăхлă мар. Ăна ĕнтĕ иккĕмĕш çул тăваççĕ, çаплах туса пĕтерейменççĕ. Йалсовет ĕçе пачах йертсе пымаст.

Карай, „БолҌшевик“ т. ыт. колхозсенче те çулйĕр строителстви планне тултарас тĕлĕшпе ĕççем йапăх пыраççĕ. Çулсем йĕркелĕ мар. „БолҌшевик“ колхозран Хурапыр йалне каçса каймали кĕпер те çĕмĕрĕлсе кайнă. Анчах çапах ăна йусама тытăнман.

Çулйĕр строителстви планне тултарасси йапăх пыни районти çулйĕр пайĕпе йалсоветсенчен килет. Вĕсем колхозсемпе тачăн çыхăнса ĕçлемеççĕ, çекцисемпе бригадăсене йертсе пымаççĕ. Тӳррипех каласан, чылай йалсоветсенче çулйĕр çекцийĕсем хут çинче кăна шутланса тăраççĕ. Вĕсен руководителĕсем çук. Карай тата Мăн Шетмĕ йалсовет председателĕсем (Петровпа Филиппăв) çулйĕр çекцинче миçе çын пуррине, вĕсемпе хăçан канашлу туса иртернине те пĕлмеççĕ.

А. Николайĕв.

Çĕнĕ сават тунă

Нумайах пулмаст Сӳктерти вăрман ăласталăх ертелĕ çуменче йăвăçран тата хуларан тĕрлĕрен мебĕлсем тăвакан сават ĕçлеме пуçланă. Çак савăта тунă çĕре пурĕ 70 пин тенке йахăн укçа тăкакланă. Савăт вис̧ĕ сменăпа ĕçлет.

Хуларан тĕрлĕрен йапаласем тăвас ĕçре мастăрсем пулса ĕçлеме савăтра курс организациленĕ пулнă. Курс халĕ хăйĕн ĕçне пĕтерне. Унтан 22 çын вĕренсе тухнă.

И. Е.

Пысăк пĕвесем

СĔНТĔРВĂРРИ. Каçал районта 4 колхозра пысăк пĕвесем пулаççĕ. Йулашки кунсенче Астакассинчи „БолҌшевик“ тата Малти Чиперуйĕнчи Урицкий йачĕпе тăракан колхозсем пĕвесем туса пĕтерне. Урицкий йачĕпе тăракан колхоз пĕвере пулă ĕрчетет. Кив Тутайассинчи „Кунер“ колхоз тата Варман Кăшкари „Боевик“ колхоз пĕвесене пĕвелесе çитереççĕ.

Çичĕпӳртри „Паскав“ колхоз иртнĕ çулта 3 пысăк пĕве пĕвеленĕ. Каçал вăл пĕвесене „зеркальный карп“ йатлă пулăсем илсе йанă.

Г. Çмирнов.

ХĔРӲЛĔН ĔÇЛЕРĔÇ

Сиккасси йалсоветĕнче (Канаш р-нĕ) çĕнĕ зайома çыръăнасси ăнăçлă пырат. Ку вăхăта çитсе йалсоветре кĕрен ĕççыннисем 14.870 тенкĕлĕх çыръăннă. Çак шутран çуррине йахăн укçа пухнă.

Зайома çыръăнтарас ĕçре комсомол комитечĕн çекретарĕ Çеменăв тата комсомолĕц БелҌский йулташсем уйрăмăнах лайăх ĕçлерĕç.

И. Иванов.

Хула тăрăх

Парикмахĕрскисем çинчен

Çӳç-çуça, сухала хырса йака çӳресси ĕççыннисен йăлине кĕчĕ. Парикмахĕрски—ĕççыннисен куҌтурлă ыйтăвĕсене пурнăça кĕртмели вырăнсенчен пĕри. Анчах Шупашкарта парикмахĕрскине кĕрсе çӳç кастарасси, сухал хыртарасси хулари ĕççыннисемшĕн „хĕсĕк вырăн“ пулса тăрат. Хулара „Парикмахерская“ тесе çырнă вывĕскăлă çуртсем сахал мар. Карл Маркс урамĕнче те, Сойузнайа урамра та, Ленин урамĕнче те, Гостиницăра та, Хресчен çуртĕнче те пур. Анчах вĕсенче йĕркелĕх мĕнле-ха? „Личный труд“ ертелĕн çурчĕ пĕчĕк, тăвăр, нимĕн йĕркесĕр. Хыръăнма пынă çынсене лармали, тăмали çук. 10 çын пулсан мастăрсем вара хăйсем патне пынă çынсене çинчех урама хăваласа кăларса йараççĕ. Вĕсен пĕр сăмах:

—Курмастăр-и есĕр, хăвăра ларма тăма çук, пире ĕçлеме чăрмантарастăр!

Çакăн хыççăн ирĕксĕрех сухалне хыртармасăрах тухса кайас пулат.

Ленин урамĕнчи мастерскойĕнче те кунтан ырине тупаймăн. Ийулĕн 22-мĕшĕнче черетре 20 çын тăрат, пурĕ те 4 мастăр çеç ĕçлеççĕ. Вĕсене те пулин пĕр ĕççе супнă парикмахĕр пырса чăрмантарат.

Хĕрлĕ Хĕрес общĕствин мастерскойĕсенче вырăн мастăрсене тăмалăх çеç. Хыръăнма пынă çынна урамра тăма тивет. Чăвашсойуз магазинĕ патĕнчи парикмахĕрски умĕнче черет тăнине уйăрма çук, те магазинра тавар илесшĕн, те хыръăнасшăн.

— Кунта тусан çăтса тăриччен киле кайса хам хыръăнатăп,—тесе калаçнинчен çеç ку çынсем парикмахĕрски çине тарăхнине пĕлетĕн.

Неушто Шупашкарта пĕр йĕркелĕ, куҌтурлă парикмахĕрски уçма май çук? Промсойуз парикмахĕрскисем çине доход илмели предприйати çине пăхнă пек çеç пăхат. Мастерскойсем çулсеренех промсойуза доход параççĕ, анчах промсойузри пуçлăхсем „пире укçа пултăр, çынсем кирек йепле хыръăнсан та йурат“, теççĕ пулас.

Хырнă чухне куççуҌ йухтарса ларнисем, касса йун кăларнисем, мастерскойсенче кăлӳшсем çухални çинчен каламали те çук. Вĕсем мастерскойсенче куллен пулакан ĕççем. Мастăрсен квалификацине ӳстерес тĕлĕшпе те никам та ĕçлемест.

Шупашкар хулине пур йенчен те йĕркелесе çитермели плана парикмахĕрскисем кĕмеççĕ-ши?

Хула ĕççыннисене куллен кирлĕ йапалана — парикмахĕрскисене йĕркелĕ туса пырасси промсойузпа Хĕрлĕ Хĕрес общĕствин ĕçĕ çеç-ши вара? Ĕççыннисен кашни кунхи пурнăçĕнче кирлĕ ĕçпе хула совечĕн те интересленмеле.

Р. ШАШКОВ.

Пĕлтерни

Ийулĕн 26-мĕшĕнче каçхине 7 сехетре Шупашкарти партилĕ вĕрентӳн тĕп суртĕнче ПАРТИН II-мĕш СЙЕСЕН ИСТОРИЛĔ ĔÇĔСЕМ ÇИНЧЕН доклад пулат.

Доклад итлеме республикăри тата хулари партактивăн пымала.

ПСК(б)П Обкомĕн партилĕ пропагандăпа агитаци пайĕ.

ПСК(б)П ХУЛА КОМИТЕЧĔ

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ.

Вулав çурчĕсем хăйсен ĕçне уйхире куçармала

Вулав çурчĕсем йалти куҌтурă ӳсĕмĕнче пысăк вырăн йышăнса тăмала. КуҌтурлă пурнăçпа пурăнакан колхозниксем пушă вăхăтсенче кĕнеке, хаçат-журналсем вуласа хăйсен пĕлӳлĕхне ӳстерме тăрăшаççĕ. Ĕçхалăх масси пролетарилĕ революцин вĕлă сӳлпусĕсем Маркс, Енгелс, Ленин, Сталин çырнă кĕнекесене, писател-классиксем тата ăслăлăх çыннисем çырнă кĕнекесене вулама йуратат. Хаçат-журнал вуласси—кашни колхозникĕн куллен пулса пыракан йуратнă ĕçĕ.

Паха тата çĕнĕрен тухакан кĕнекесене колхозниксем чи малтанах йалти вулав çурчĕсенчен илсе вулаççĕ. Примерлă ĕçлекен вулав çурчĕ колхозлă йалшăн шкул вырăннех хисепленет. Пĕр йенчен, унта кĕнеке-хаçатсем урлă, йе калаçусем урлă чылай пĕлӳлĕх илме май пур. Тепĕр йенчен, вулав çуртĕнче куҌтурлă канма пулат.

Çапла ĕнтĕ вулав çурчĕ йалти куҌтурăн хĕрӳ вучахĕ пулса тăрат. Кунта колхоз масси активлăхĕ туптанат. Кунтах пирĕн çамрăксем общĕствăлă ĕçе хутшăнса ĕçлеме вĕренеççĕ.

Акă, Хучашри (Йетĕрне районĕ) вулав çурчĕ çинчен Г. Васçлйĕв йалкор çапла çырса пĕлтерет: „Пирĕн вулав çурчĕ РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кампанинче аван ĕçлерĕ. Халĕ вăл тырпулсене пухса кĕрес ĕçре хутшăнса ĕçлеме хатĕрленет. Вулав çуртне пурĕ 19 екземпҌар тĕрлĕрен хаçат журналсем килсе тăраççĕ. Халĕ 240 тенкĕлĕх художествăлă литературă туйанна. Кунсăр пуçне, вулав çуртĕнче патефон, купăс, радио тата биллиард пур. Кашни ернере 2 хутчен çтена хаçачĕ тухса тăрат. Хĕрӳ ĕç вăхăтĕнче вулав çурчĕ куҌтбригада организацилет.

Вулав çурчĕн пуçлăхĕ В. Чернов халăх хушшинче ĕçлеме йуратат. Вăл хăй тавра йалти куҌтурăлă вăйа тата çамрăксене йăвăстарат“.

Çакăн пек примерлă вулав çурчĕсем массăн политикăлă активлăхне тата куҌтурине ӳстерме пулăшаççĕ. Вĕсемпе пĕрле масса, вĕсем массăна çывăх.

Анчах республикăра чылай çĕрте вулав çурчĕсем начар ĕçлеççĕ-ха.

Г. Л. йалкор Вермер йалсоветĕнчи (Çĕрпӳ р.) вулав çурчĕн пуçлăхĕ С. Петров çинчен çапла çырса пĕлтерет: „Вулав çурчĕн пуçлăхĕ Петров вулав çуртне уйăхра та пĕрре кĕрсе пăхмаст. Вулав çурчĕ валҌли 13 тĕрлĕ хаçат журналсем килсе тăраççĕ. Анчах вĕсене пĕрне те тупса вулама çук. Вулав çурчĕ йаланах хупă тăнă пирки, çыру валеçекен хаçатсене Петровăн килне йе йалпо магазинне пăрахса хăварат. Вулав çурчĕн кĕнекесем кивелсе тахçанах пурнăçран йулнă. Вĕсем те пулин çурри ытла вулакансем аллинче выртаççĕ йе çухалса пĕтнĕ.

Вулав çурчĕн пуçлăхĕ Петров комсомолĕц пулин те, общĕствăлă ĕçе пĕрре те хутшăнмаст“.

Паллах, Петров пек вулав çурчĕн пуçлăхĕсем пурнăçран йулса пыраççĕ. Вĕсем массăпа çĕрле мар.

Хăшпĕр райçутĕç пайĕсем те вулав çурчĕсене йертсе пымаççĕ, йе вĕсем çинчен пĕтĕмпех те манса кайаççĕ.

Акă, Çĕрпӳ районĕнчех Кăшаркассинчи вулав çуртне, пуçлăх çук пирки, 4 уйăх ĕнтĕ пĕрре те уçман. Кун çинчен А. И. йалкор çапла çырат:

„Малтанах К. Меркурйĕв вулав çурчĕн пуçлăхĕнче ĕçленĕ чухне, кунта кĕнеке-хаçат вулама çӳрекенсен шучĕ кунне 100 çынна йахăн çитетчĕ. Унтах радио итлетчĕç, шашкăла, шахмăтла выҌятчĕç.

Йулашки 4 уйăх хушшинче вулав çурчĕ çăрапах пулсан тăрат. Радио сасси те илтĕнмест, шашкăла, шахмăтла выҌясси çинчен те манчĕç. Вулав çурчĕ хупă тăнипе шкапра 500 кĕнеке усăсăр выртат“.

Районри çутĕç пайĕсен, йалсоветсен, колхоз правленийĕсен вулав çурчĕсене вăйлатассишĕн, вĕсене йалта куҌтурăн тĕп вучахĕсем туса хурассишĕн тăрăшмала. Вулав çурчĕсенче ĕçлеме чи хастарлă, чи пултарулă çынсене лартмала, вĕсене ĕçре пулăшса пымала.

Нумай вулав çурчĕсенче классикла литературă тата йулашки вăхăтра тухнă çĕнĕ кĕнекесем сайра тĕл пулма пулат. Йе тата хăшпĕр пысăк промышленнăç предприйатисенчи чăваш рабочийĕсем тăван чĕлхепе çырнă литературă тупса вулама пултараймаççĕ. Мĕншĕн тесен, предприйатисем çумĕнчи библиотекă сене чăвашла кĕнекесем сукпа пĕрех.

„Канашри выкунсем йусĕкан савăтра çурри ытла чăваш рабочисем ĕçлеççĕ. Вĕсем пурте пекех чăваш литературине йуратсах вулаççĕ. Анчах савăтри библиотекăра чăвашла кĕнекесем пĕрре те çук.

Çамрăк рабочисем, мастăрсем, техниксем хăйсен ĕçри пултарулăхне, пĕлӳлĕхне ӳстерес шутпа техникă çинчен çырнă кĕнекесене илсе вулассăн, ун пек литературă библиотекăра çук. Хăçан пирĕн савăтри библиотекăра рабочисене куллен кирлĕ илемлĕ литературă, техникă литератури çителĕклĕ пулĕ?“ тесе çырат А. Иванов корреспондент.

Вулав çурчĕсенче, с вăтри библиотекăсенче Маркс, Енгелс, Ленин, Сталин произведенийĕсем, паллă классиксен кĕнекисем, совет писателĕсен произведенийĕсем, чăвашла литературă çителĕклĕ таран пулмала. Вулав çурчĕсен, савăтри библиотекăсен пулăнлăхĕ рабочисемпе колхозниксен куҌтурлă çитĕнĕвĕпе тан пулмала.

Йалти вулав çурчĕсен пайан тумали чи ответлă ĕçĕ—уйхирте хĕрӳ ĕç пынă вăхăтра колхозниксем хушшинче куҌтмассăлă ĕçе болҌшевикла йĕркелесси.

Вулав çуртĕнчи чи аван кĕнекесем, куллен килсе тăракан çĕнĕ хаçат-журналсем, кĕсле-купăс—пĕтĕмпех уйхирте, бригадăсенче пулмала.

Вырăнти партипе комсомол организацисем, вулав çурчĕсен ĕçне йĕркелессине политикăлă пысăк ĕç вырăнне хурса, вулав çурчĕсене куллен пулăшса, йертсе пымала. ХаҌхи вăхăтра уйхирти бригадăсемпе звеносенче ĕçлеме, ĕçре тĕрĕс-ленĕ чи лайăх агитатăрсем, пропагандиссем, политинформатăрсем, вулавçăсем, редактăрсем уйăрса çирĕплетмелле. Вулав çурчĕ тырпулсене пухса кĕрес хĕрӳ ĕçĕн пĕр пысăк агрегачĕ пулса тăтăр.

Шупашкарти суту-илӳ пайĕн çăкăр пĕçерекен савăтне йалан ĕçлеме

Пекăрсем, çăкăр пĕçерме вĕренекен ачасем, булкă пĕçерекенсем тата рабочисем

к и р л ĕ

Зайавленисене Чебторга, кадрсен çектăрне памала.

„Росснабсбыт“-ăн чăваш республикĕнчи уйрăмне бухгалтĕрсем, счетоводсем

к и р л ĕ

АДРĔС: Красная площадь, 16.

Чăвашпотребсойуза

йалан ĕçлеме

Санитари службин начаҌникĕ, аслă сăнврач, бухгалтĕр инструктăр, бухгалтĕр аналитик, бухгалтăр-ревизор (контроллĕ ревизи комиççин)

К И Р Л Ĕ

Ĕçукçи çирĕплетнĕ ставкăсем тăрăх. Телефон тăрăх ыйтса пĕлмелле № 1—49, 7—27, 7—89.

ПАЙАН

Крупскайа йачĕпе тăракан сатра

Çимфонилĕ оркестр

КОНЦЕРТ

ЛАРТАТ

Дирижер Георгий Благодатов

Пуçламĕшĕ—каçхине 9 сех. 30 мин.

Шупашкарти Коммуналлă строителствă техникумĕ

1938—39 вĕренӳ çулĕнче

кĕрмунне ĕçрен уйăрăлса вĕренме пĕрремĕш курса 90 студент илесси çинчен пĕлтерет.

Техникум граждăнла-коммуналлă строителствăн тата проектировани тăрăх

ТЕХНИК-СТРОИТЕЛСЕНЕ ХАТĔРЛЕТ

Вĕренме 1[illegible] çулхисенчен пуçласа 30 çула çитнисем тăрăх [illegible] 7 çул вĕрениннисене илеççĕ.

Зайавленисене августăн 10-мĕшĕччен йышăнаççĕ. [illegible] августăн 15—20-мĕш кунĕсенче пулаççĕ.

Вĕренме кĕмелли условисене [illegible] майăн 18-мĕшĕнче „Красная Чувашия“ тата майăн 20-мĕшĕнче „Чăваш Коммуни“ хаçатсем çинче пичетлесе кăларнă.

Дирекци.

Уполномоченный Чувашглавлита № 388 [illegible]

13

Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. [illegible] № 581.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ИЙУЛĔН 27 ВЫРСАРНИКУН 169 (4982) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать — ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ — Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИЙĔН КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67; Ред. заместителĕн 0—88; Редакци секретарĕн 4—40; Дежурнăйĕн 6—23

Ĕнер Шупашкарта Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çессийĕ уçăлчĕ

Чăваш халăхĕн парламĕнчĕ ĕçе тытăнчĕ

Ĕнер Шупашкарта Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çессийĕ уçăлчĕ. Орденлă республикăн уйăври пек тумланнă столици чăваш халăхĕ суйласа йанă чаплă çынсене хаваслăн кĕтсе илчĕ. Колхозлă йалăн тулăх уйхирĕсенчен, хапрăк-савăтсенчен килнĕ мухтавлă стахановецсемпе стахановкăсем, колхоз руководителĕсемпе бригадирсем, йалсовет председателĕсем, инженерсем, учителсем—чăваш халăхĕн чи лайăх ывăл-хĕрĕсем аслă парламент ĕçлеме пуçлас залăна мăнаçлă та çирĕп утăмсемпе утса кĕреççĕ.

Республика Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çессийĕ уçăлни чăваш халăхĕн пĕрлĕхне, унăн пултарулăхĕпе паттăрлăхне кăтартса паракан аслă уйав пулса тăчĕ. Коммуниссемпе партире тăманнисен никам çĕнтерейми сталинла блок депутачĕсем пĕр кăмăллăн, пĕр хавасланса ура çине тăрса чăваш халăхĕн пĕрремĕш депутатне—пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен аслă çулпуçне Сталин йулташа саламлаççĕ.

Сталин—пирĕн йалав, пирĕн хĕвел, пирĕн телей. Вăл туса пачĕ пире çакăн пек пуйан та хаваслă пурнăç. Вăл пулăшнипе пирĕн республика вумай нацилĕ совет государствин тивĕçлĕ членĕ пулса тăчĕ.

Тулли кăмăлпа саламлаççĕ халăх ывăл-хĕрĕсем Сталин йулташăн çывăх соратникĕсене—Республика Верховнăй Совечĕн чаплă депутачĕсене—Молотăв, Калинин, Ворошилăв, Каганович, Йежов, Ждановăн, Андрейĕв, Микойан йулташсене. Чăваш халăхĕ çак аслă Çессире пайан коммуниссен партине, унăн çулпуçне Сталин йулташа чĕререн, ĕмĕр сивĕнми йуратнине тата тепĕр хут, халиччен нихăçан пулман çеклевĕпе кăтартса парать.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çессине вата депутатсенчен пĕри М. Ç. Кĕдçĕв йулташ уçрĕ. Михаил Çеменăвич Кĕдçĕв сăн-сăпатĕнче, унăн кунçуленче кашни чăваш ĕççынни сăнсăпатне, хăйĕн кунçулне курать. Тискер патша самавинче Михаил Çеменăвич мĕн пĕчĕкренех Винокурăвпа Клементйĕв кулаксем патĕнче урăран ÿкеччен ĕçлесе, тăраниччен çăкăр çисе курмасăр ÿснĕ. Вăл тарăхнă, харам пырсене халăх ĕçси çинчен тăпăлтарса пăрахса, лайăх, телейлĕ пурнăç тума ĕмĕтленнĕ.

Аслă Октябĕр револуцийĕнче ĕççыннисем помешчиксемпе капиталиссен влаçне çапса аркатрĕç. Ирĕклĕ çĕршывра, социализм хĕвелĕ айĕнче телейлĕ пурнăç ÿссе чечекленчĕ. Йавăр та асаплă, паттăр та кĕрешÿлĕ пурнăç çулĕпе утса тухса, Михаил Çеменăвич Кĕдçĕв кăçал Чăваш республикĕн чи аслă органне суйланма тивĕçлĕ пулчĕ, вăл пирĕн Верховнăй Советăн историлĕ Пĕрремĕш Çессине уçса, халăх телейĕ çинчен, хăйĕн чи çÿлĕ ĕмĕчĕсем çинчен хумханулă сăмах каларĕ.

„Патша Росçийĕн карти çинче чăваш çĕршывĕ пулман. Чăваш халăхне етем тесе хисеплемен, ăна мăшкăллă йатпа—„инородцы" тенĕ.

Тăмсай та айван чиновниксен темĕн пысăккĕш çарĕ Росçийă империнчи халăхсене, çав шутрах чăваш халăхне те çаратса пусмăрласа пурăннă. Росçийă—„халăхсен тĕрми" пулнă...

Халăх патша йĕркипе кăшт та пулин кăмăлсăр пулсан, ăна катăргăпа, тĕрмесемпе, нухайкăсемпе пусарнă. Çавна епĕ хам çурăм çинче туйса куртăм. Патша самодержавине хирĕç агитаци тунăшăн мана, 1902—1904 çулсенче, арĕслесе тĕрмене хупса лартрĕç. Çав ылханлă та тĕттĕм вăхăт ĕмĕрлĕхе пĕтрĕ. Пирĕн тăшмансем мĕнле ĕмĕтленсен те çав вăхăт нихăçан та таврăнас çук",—тет çирĕппĕн Кĕдçĕв йулташ.

Кĕдçĕв йулташ хăйĕн сăмахĕпе ЧАССР Верховнăй Совет депутачĕсен, мĕн пур чăваш халăхĕн шухăш-кăмăлне каласа пачĕ. Кашни чĕринче пайан пĕр шухăш, пĕр кăмăл:

Пысăк тав, пысăк мухтав Октябĕрти Аслă Социализмлă револуцине, коммуниссен аслă партине, совет влаçне, халăхсен аслă çулпуçне Сталин йулташа пире телейлĕ пурнăç туса панăшăн! Пысăк тав, пысăк мухтав вырăс рабочи класне, аслă вырăс халăхне пире ĕмĕрхи пусмăртан хăтăлма пулăшнăшăн, социализм строительствин пур фрончĕсенче те тăванла пулăшса пынăшăн!

Республикăри пĕтĕм ĕçхалăхĕ, Шупашкарти пĕтĕм ĕççыннисем халĕ Верховнăй Совет депутачĕсемпе пĕр шухăшпа, пĕр туйăмпа, пĕр ĕмĕтпе, пĕр савăнăçпа пурăнаççĕ, ĕçлеççĕ, савăнаççĕ. Республикăн столицине колхоз уйхирĕсенчи, хапрăк-савăтсенчи çĕнĕ çĕнтерÿсем çинчен калакан хыпарсем килеççĕ. Хастар пурнăçпа пурăнать республика!

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш ларăвĕнче Верховнăй Совет председателĕпе унăн замеçтителĕсене суйларĕç, Çессин кун йĕркисене çирĕплетрĕç.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн председателне Çесси пĕр кăмăлпа Н. П. Павлăв депутата суйларĕ. Павлăв йулташ парти Чăваш Обкомĕн çекретарĕ, социализм строительствинче тăшмансене хирĕç кĕрешсе ÿснĕ çирĕп болшевик, ăна Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн председателне суйлани пирĕн ĕççыннисем коммуниссен партине мĕнле пысăк кăмăлпа йуратнине тата тепĕр хут кăтартса пачĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Совет председателĕн замеçтителĕсене Çесси Туçа суйлав округ депутатне, Патăрйел районĕнчи Пушкин йачĕпе тăракан колхоз председательне А. М. Михайлăвă йулташа тата Турхан суйлав округ депутатне вата учител В. С. Кириллăв йулташа суйларĕ. Вĕсем иккĕшĕ те халăх хушшинчен тухнă, халăхшăн чĕререн парăнса ĕçлекен çынсем. Михайлăвă йулташа илсен, вăл пирĕн ирĕклĕ совет çĕршывĕнче ирĕклĕ совет хĕрарăмĕ государствăн мĕнле пысăк деятелĕ пулма пултарнине кăтартакан чĕрĕ пример.

Чăваш халăхĕн аслă парламĕнчĕ ĕçе тытăнчĕ. Халăх суйласа йанă чаплă çынсем республика пурнăçĕн пысăк ыйтăвĕсене сÿтсе-йавмала, государствă управленин аслă органĕсене суйласа çирĕплетмеле.

Верховнăй Совет депутачĕсене халăх кунçулне, пурнăçне, телейне шанса панă. Пирĕн Верховнăй Советра халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин йулташ пĕрремĕш депутат пулса тăни пирĕн орденлă республикăна коммунизм çулĕпе тата хăйулăрах та пысăкрах утăмсемпе малала кайма иксĕлми вăй-хăват парать.

Кодексcем кăлараççĕ

Мĕнле те пулин кодекс—уголовнăй, гражданский кодекс туянма халĕхи вăхăтра май çук. Йуридически издательствă çавăн пек кодексене йулашки хут çулталăк кайала пичетлесе кăларнăччĕ. Вăл кодексене пĕтĕм тиражне кĕске вăхăтрах сутса пĕтерне пулнă.

ССР Союзĕн Йустици Халăх Комиссариачĕ РСФС Республикĕн мĕн пур кодексĕсене çĕнĕрен пичетлесе кăларма тытăннă. Официаллă текстсăр пуçне, кодекс çумĕнчи приложенисенче саккун актисем, ССР Союзĕн тата РСФС Республикĕн Верховнăй сучĕсен пленумĕсен ăнлантарса панисем тата ыт. пулаççĕ.

Çавăнпа пĕрлех союзлă республикăсен кодексисене хăйсен тăван чĕлхипе пичетлесе кăларма хатĕрленеççĕ.

Чăваш АСС Республикĕн пĕрремĕш созыври Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çессин 1938 çулхи ийулĕн 26-мĕшĕнче пулнă ларăвĕ çинчен

Информацилĕ пĕлтерÿ

Ийулĕн 26-мĕшĕнче, каçхине 6 сехетре, Шупашкарта, саслă кино театрта, Чăваш АССР Республикĕн пĕрремĕш созыври Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çессийĕ уçăлвă.

Депутат С. К. Коротков йулташ сĕнĕвĕ тăрăх, Çессине Верховнăй Советăн Йункă суйлав округĕнчен суйланнă чи вата депутачĕ „Çĕнĕ çул" йалхуçалăх ертелĕн колхозникĕ М. Кĕдçĕв уçать.

Кĕдçĕв йулташ самахĕ хыççăн Верховнăй Совет Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн председательне тата председател замеçтителĕсене суйлама пуçлать.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн председательне пурте Павлăв Николай Павлăвич йулташа суйлана; председател замеçтителĕсене Михайлăвă Анна Михайлăвна йулташа тата Кириллăв Василий Çеменăвич йулташа суйлана.

Верховнăй Совет Çесси ĕçĕн регламентне çапла йышанна:

1. Чăваш АССР Верховнăй Совет Çессин ларăвĕсем ирхине 10 сехетрен пуçласа кăнтăрла 4 сехетчен, каçхине 5 сехетрен пуçласа 7 сехетчен пулса иртеççĕ.

2. Çессин кун йĕркинчи ыйтусем тăрăх доклад тума докладчиксене Верховнăй Совечĕн председателĕ çирĕплетет.

3. Чăваш АССР Верховнăй Совет депутачĕсен кашни ушкăнĕ, унта 10 çынран кайа мар шутланать пулсан, хăйĕн содоклачĕсене тăратма пултарать.

4. Доклад тума докладчиксене 1 сехет тата йулашкинчен калама 30 минут параççĕ, содоклад тума содокладчиксене 30 минут, йулашкинчен калама 15 минут параççĕ.

5. Оратăрсене сăмах калама малтанхи хут 20 минут, иккĕмĕш хут 5 минут параççĕ.

6. Харпăрхăй паракан зайавленисемпе фактлă справкăсене хут çине çырса памала, вĕсене ЧАССР Верховнăй Совечĕн председателĕ алла илнĕ хыççăнах йе, содержанине кура, лару вĕçĕнче вуласа кăтартать.

7. Черетсĕр ыйтусене хут çине çырса памала, вĕсене ЧАССР Верховнăй Совет председателĕ çийĕнчех вуласа кăтартать.

8. Кун йĕрки çинчен калама 5 минут параççĕ.

9. Сасăлласси çинчен калаçма 3 минут параççĕ.

Депутат Зашчелкин Федăр Дмитрийĕвич йулташ панă сĕнÿ тăрăх ЧАССР Верховнăй Совечĕ çакăн пек кун йĕрки йышăнна:

1. ЧАССР Верховнăй Совечĕн Мандат Комиççине суйласси.
2. ЧАССР Верховнăй Совечĕн Йаланлăх Комиççийĕсем çинчен
3. ЧАССР Конституцин хăшпĕр статйисене улшăнусемпе хушусем кĕртесси.
4. Чăвашла кăларнă ЧАССР Конституци текстне тÿрлетÿсем кĕртесси.
5. ЧАССР Верховнăй Совечĕн Президиумне суйласси.
6. ЧАССР Правительствине—ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Советне туса хурасси.
7. ЧАССР Верховнăй Совечĕн депутачĕсене хăйсен депутат обйазанноçĕсене пурнăçа кĕртнипе çыхăнса тăракан расхутсене тÿлесси çинчен.

ЧАССР Верховнăй Совечĕн депутачĕсен полномочийĕсене тĕрĕслемешкĕн Мандат Комиççи суйлана, вăл Комиççине кĕреççĕ:

ЧАССР Верховнăй Совечĕн Мандат Комиççин председателĕ Полтĕв Петр Степанăвич—Хучаш суйлав округĕнчен (Йетĕрне р.) суйлана депутат.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Мандат Комиççи членĕсем:

Александрăв Иван Александрăвич—Йантикăвă суйлав округĕнчен (Вăрмар р.) суйлана депутат;

Херсонăв Гурий Александрăвич—Ишек суйлав округĕнчен (Ишлей р.) суйлана депутат;

Чекменевă Анисийă Çеменăвна—Алкашри суйлав округĕнчен (Çĕмĕрле р.) суйлана депутат;

Грабăвă Йевдокийа Федăрăвнă—Çĕмас суйлав округĕнчен (Улатăр) суйлана депутат;

Йакимăвă Ксенийа Данилăвна—Балдай суйлав округĕнчен (Йетĕрне р.) суйлана депутат;

Андрейĕв Мирон Андрейĕвич—Йÿскасси суйлав округĕнчен (Елĕк р.) суйлана депутат.

Мандат Комиççине суйлана хыççăн ЧАССР Верховнăй Совет Çессин пĕрремĕш ларăвĕ хупăнать.

РСФСР Верховнай Совет Президиумĕнче

Ийулĕн 22-мĕшĕнче Кремлĕре РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕн пĕрремĕш ларăвĕ пулса иртнĕ, ларăва А. Е. Бадайĕв йулташ председател пулса йертсе пынă.

Президиум РСФСР Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çессийĕ йышăннă саккунсене пичетлесе кăларма тата Çессин стенографилĕ отчотне кăларма решени йышăннă. Автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсене РСФСР Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çессин стенографилĕ отчотне тивĕçлĕ автономлă республика чĕлхипе пичетлесе кăларма сĕннĕ.

РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕн ларăвĕсене хатĕрленес тĕлĕшпе ĕçлеме тата кулленхи ĕçсене туса пыма РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕн Çекретариатне тума йышăннă, çекретариат составне Г. В. Козлов, М. Ф. Шкирйатăв, А. В. Косарĕв, И. И. Йефремăв, В. А. Донской кĕреççĕ.

РСФСР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ А. Е. Бадайĕв (председател), А. А. Андрейĕв, Н. А. Булганин, М. Ф. Шкирйатăв, А. И. Угарăв, Г. В. Козлов, А. В. Косарĕв, И. С. Хохлов тата В. А. Донской йулташсенчен тăракан Комиççине РСФСР Верховнăй Совечĕн Президиум аппаратне реорганизацилемели план туса хатĕрлеме тата хăйсен сĕнĕвĕсене Президиума çирĕплетме тăратма хушнă.

Ларура çавăн пекех тата РСФСР Верховнăй Совечĕн Председател Заместителĕсен ĕçĕсем çинчен тăракан ыйтăва пăхса тухнă. Председател Заместителĕсем черетпе 1—2-шер уйăх хушши тÿррĕмех РСФСР Верховнăй Совечĕн Президиумĕнче ĕçлемеле тунă.

РСФСР Верховнăй Совет депутачĕн депутат билечĕн тата кăкăр çине çакмали знакăн образецĕсене çирĕплетнĕ.

РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕн ĕçĕсен управленине туса хунă.

(ТАСС).

Умерчĕк çинче (сулахайран): Рйабинă округĕнчен суйланă депутат П. И. Новикăвă, Йÿçкасси округĕнчен суйланă депутат М. А. Андрейĕв, Пунгă округĕнчен суйланă депутат М. Ç. Кĕдçĕв, Йĕпреç округĕнчен суйланă депутат Н. Ç. Бодров, Ишек округĕнчен суйланă депутат Г. А. Херсонăв, Шупашкар хулинчи 1-мĕш номĕрлĕ округран суйланă депутат Т. А. Ахвайă.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Çессине уçнă чух Кĕдçĕв депутат калана сăмах

Йуратнă йулташсем, депутатсем! Чăваш Автономлă Советлă Социализмлă Республика Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çессийĕ уçăлнă йатпа сире пĕтĕм чĕререн саламлатăп! (АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

Йулташсем! Пайанхи телейлĕ те савăнăçлă кун пĕтĕм чăваш халăхĕпе вăл суйласа йанă çынсем—пирĕн республикăн Верховнăй Совечĕн депутачĕсем, хăйсен чи пирвайхи саламне Аслă Конституцийе тăвакан аслă çын патне—Чăваш республикĕн Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш депутачĕ — Иосиф Виссарионăвич Сталин патне йараççĕ. (ТĂВАЛЛĂН АЛĂ ÇУПАÇÇĔ, ПУРТЕ УРА ÇИНЕ ТĂРАÇÇĔ. „СЫВĂ ПУЛТĂР СТАЛИН ЙУЛТАШ!" ТЕСЕ КĂШКĂРАÇÇĔ).

Епĕр, пирĕн хаклă депутатсене—Аслă Сталинăн çывăх соратникĕсене — Совет правительствин пуçлăхне Вйачеслав Михайлăвич Молотăв тата Каганович, Ворошилăв, Калинин, Андрейĕв, Ежов, Жданăв, Микойан йулташсене хĕрÿлĕ салам йаратпăр. (НУМАЙЧЧЕН АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

Хаклă йулташсем! Чăваш халăхĕ пирĕн çине пысăк шанчăк хучĕ. Вăл пире хамăран орденлă республикăна тытса пыма хушрĕ. Епĕ ĕнтĕ мĕн пур депутатсен йачĕпе Чăваш халăхне çапла шантарса калатăп: епĕр, пире Ленин вĕрентнĕ пек, Иосиф Виссарионăвич Сталин вĕрентнĕ пек ĕçлĕпĕр, тетĕп. (АЛĂ ÇУПАÇÇĔ). Хамăр халăхăн пит пысăк шанчăкĕнчен тухас мар тесе, епĕр тÿрĕ кăмăлпа тата пĕтĕм чунтан-чĕререн парăнса ĕçлĕпĕр. (АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

Мĕншĕн ĕçлемели тата мĕншĕн кĕрешмели пирĕн пур вара. Пирĕн телейлĕ те савăнăçлă пурнăçăн ылттăн кĕнеки — Сталинла Конституци пур. Çав кĕнекере Совет Союзĕнчи халăхсен аслă çĕнтерĕвĕсене çырса хунă, çав кĕнеке пĕтĕм тĕнчери ĕçхалăхне капиталисăмлă чуралăхран тата фашисла тискерлĕхрен хăтармали йалав пулса тăчĕ. (АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

Йулташсем, депутатсем! Патша Росçийĕн карти çинче Чăваш çĕршывĕ пулман. Чăваш халăхне етем тесе хисеплемен, ăна мăшкăллă йатпа — „инородцы" тенĕ.

Тăмсай та айван чиновниксен темĕн пысăкĕш çарĕ Росçийă империнчи халăхсене, çав шутрах чăваш халăхне те çаратса пусмăрласа пурăннă. Росçийă—„халăхсен тĕрми" пулнă. Пĕчĕкçеç чиновник те, унăн влаçĕ пит пĕчĕкçĕ пулсан та, хăйне мăнкăмăллă тытса патша вырăнне хунă. Старăстă, старшина, писăр, урйадник, пристăв, исправник, земски начальник, пуп тата йулашкинчен губернатăр—çав çынсем Чăваш халăхне тытса пусарса тăнă. Чăваш халăх ĕмĕрсем тăрăшшĕ тĕттĕмре, пусмăрта, ним пĕлмесĕр, хăраса—чĕтресе пурăннă.

Халăх патша йĕркипе кăшт та пулин кăмăлсăр пулсан, ăна катăргăпа, тĕрмесемпе, нухайкăсемпе пусарнă. Çавна епĕ хам çурăм çинче туйса куртăм. Патша самодержавине хирĕç агитаци тунăшăн мана, 1902—1904 çулсенче, арĕслесе тĕрмене хупса лартрĕç. Çав ылханлă та тĕттĕм вăхăт ĕмĕрлĕхе пĕтрĕ. Пирĕн тăшмансем мĕнле ĕмĕтленсен те çав вăхăт нихăçан та таврăнас çук.

Коммуниссен партийĕ, унăн Сталинла Тĕпкомĕ йертсе пынипе, тата Аслă вырăс халăхĕ тăванла пулăшнипе, Чăваш республикинчи ĕçхалăхсем телейле, пуйан, тата културалă пурнăç кĕрешсе илчĕç.

Пайанхи савăнăçлă кун чăваш халăхĕ Аслă вырăс халăхне, коммуниссен партине тата халăхсен çулпуçне Аслă Сталина пĕтĕм чунтан-чĕререн пысăк тав тăвать. (НУМАЙЧЧЕН АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

Чăваш çĕршывĕ ĕлĕк кайă йулна, тĕттĕм, културăсăр çĕршывран РСФС Республикинчи малтă пыракан республикăсенчен пĕри пулса тăчĕ. Пирĕн кăçукнехи промышленнăçла предприйатисем пур, пирĕн республикăн уйхирĕсенче пин ытла трактăр, 350 комбайн тата ытти йалхуçалăх машинисем нумай ĕçлеççĕ. Çав машинăсем колхозниксен ĕçне çăмăллатаççĕ, пирĕн уйхирсенчи тырпул тухăçлăхне ÿстереççĕ. Чăваш çĕршывĕ хут пĕлекен, пуйан културалă çĕршыв пулса тăчĕ.

Чăваш халăхĕ ĕлĕкхи вăхăтра телейле пурнăç çинчен ĕмĕтленме те пултарайман. Халь ĕнтĕ чăваш халăхĕ çĕнĕрен çуралчĕ, çĕнĕ, телейлĕ пурнăçпа пурăнма пуçларĕ.

Пирĕн ĕнтĕ помешчиксемпе кулаксем, фабрикантсем тата заводчиксем текех çук. Хăпраксем, савăтсем, çĕрсем, вăрмансем, çутçанталăкăн мĕн пур пуйанлăхĕсем, — пурте халăх пурлăхĕ пулса тăчĕç. Епĕр харам пырсемшĕн мар, хамăршăн, хамăр ачасемшĕн ĕçлетпĕр. Епĕр хресченсем—ĕмĕрлĕхех тата тÿлевсĕрех çĕр илтĕмĕр.

Епĕ Тутаркас районĕнчи Пушкăрт йалĕнчи хресчен-колхозник. Манăн сулăмсем те утмăла çывăхарса пыраççĕ. Епĕ чăваш халăхĕн ĕлĕкхи правасăр, ылханлă пурнăçне лайăх астăватăп. Епĕ октябĕр револуцийччен чухăн хресчен-батрак пулнă, нушапа пусмăр тÿснĕ. Халĕ епĕ, ытти колхозниксем пекех пуйан та телейлĕ пурнăçпа пурăнатăп. Халĕ пирĕн ĕç—хаваслă та савăнăçлă ĕç пулса тăчĕ. Халĕ ĕнтĕ епĕ хамăр халăх телейĕшĕн тата утмăл çул та ытла пурăнма хатĕр.

Епĕ, ĕлĕкхи вăхăтра батрак пулнă çын, хамăр Республикăн чи аслă органĕн Пĕрремĕш Çессине уçмашкăн тивĕçлĕ пулнипе пит те савăнатăп. Епĕ пит пысăк телейлĕ çын пулса тăтăм. Çакăншăн партийе, совет влаçне пысăк спасиба, пысăк спасиба Сталин йулташа! (АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

Йулташсем, депутатсем! Чăваш халăхĕ пире депутата суйланă чухне вăл пире çирĕп наказ пачĕ: хамăрăн тăван çĕршыва куçшăрçине сыхланă пек сыхлама хушрĕ, халăх тăшманĕсене хирĕç пĕр шеллемесĕр кĕрешме, тăшманăн сăтăрлă ĕçĕсене çинчех сисçĕ, вĕсене пĕтерсе пыма хушрĕ. Епĕр, депутатсем халăхăн çак наказне пит те лайăххăн пурнăçа кĕртме тивĕçлĕ. (АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

Сывă пултăр пирĕн чаплă коммуниссен партийĕ!

Сывă пултăр Совет влаçĕ!

Сывă пултăр Чăваш халăхĕ!

Сывă пултăр Чăваш Республикин Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш депутачĕ — Иосиф Виссарионăвич Сталин! (АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

Йулташсем! Чăваш Автономлă Социализмлă Совет Республикин Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çессийĕ уçăлнă тесе шутлатăп. (НУМАЙЧЧЕН АЛĂ ÇУПНИ ОВАЦИНЕ КУÇАТ. „УРА!" ТЕСЕ КĂШКĂРАÇÇĔ).

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕсене

ПАЙАН, ИЙУЛĔН 27-МĔШĔНЧЕ, ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНАЙ СОВЕЧĔН ПĔРРЕМĔШ ÇЕÇÇИЙĔ 7 СЕХЕТРЕ КАÇХИНЕ УÇĂЛАТ.

Çессин итогĕсене сÿтсе-йаваççĕ

Мускаври предприйатисенче РСФСР Верховнăй Совет Çессин итогĕсем çинчен калаçусем туса иртереççĕ.

Лепсе йачĕпе тăракан електромотор савăтĕнчи рабочисем Угарăв, Шкирйатăв, Косарĕв йулташсен тата ытти депутатсен РСФСР чылай Халăх Комиссариачĕсен ĕçĕсене критиклесе калана сăмахĕсене саламлаççĕ. Тухса калаçакансем уйрăмах халăх сывлăхне сыхлас ĕçĕ вăйлатса йама кирли çине çавăрăнтарса пăхтарнă, ку ĕç валĕçи правительствă пит нумай укçа-тенкĕ парать. Рабочисем РСФСР Çутĕç Халăх Комиссариатĕнчен вăл педагогсен кадрĕсене хатĕрлес тата вĕсене суйласа илес ĕçе татăклăн вăйлатса йама, шкулсем валĕçи лайăх учебниксем тума ыйтнă.

Мускаври Л. М. Каганович йачĕпе тăракан тормăз савăтĕнче, велоçипед савăтĕнче, „Красный пролетарий" тата ытти нумай предприйатисенче рабочисем хăйсен сăмахĕсенче РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕсем уйрăм Халăх Комиссариачĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене тупса палăртни—РСФС Республикĕн мĕн пур Халăх Комиссариачĕсен ĕçĕсене лайăхлатма пулăшассине кăтартса панă.

(ТАСС).

Йалсовет ӗҫӗ ҫӗнелсе пырать

Тукай йалсовечӗ 1934 ҫулччченех районра кайа йулса пыракан йалсовет пулнӑ. Государствӑ умӗнчи обйазательствӑсене те ҫулран-ҫулах тултарман. Вӑл йалсовет массаран уйӑрӑлса кайнӑран, массӑпа ҫыхӑнса ӗҫлеменрен килнӗ. Кулакла елементсем йалсовет ӗҫӗнче те, колхоз ӗҫӗнче те хытӑ кансӗрлесе пынӑ. Ун чухне коллективизаци процентӗ те питӗ пӗчӗккӗччӗ.

Халӗ пирӗн йалсоветри „Августӑн 1-мӗшӗ" колхоз хресченсене 85 процент пӗрлештерсе тӑрать. Паллах ӗнтӗ, колхозниксене йертсе пыма ансатрах. Вӗсем колхоз ӗҫӗнче те, йалсовет ӗҫӗнче те хастарлӑн ӗҫлесе пыраҫҫӗ. Тырпул тухӑҫӗ ҫулран-ҫулах ӳссе пырать.

Кӑҫалхи ҫуракине пирӗн колхоз пысӑк пахалӑхпа ирттерчӗ. Ҫакна май кӑҫал та вӑйлӑ тырпул туса илетпӗр.

Епӗ, малтан колхоз бригадирӗнче ӗҫленӗскер, 1934 ҫултанпа йалсовет председателӗ пулса ӗҫлетӗп. Йалсовет ӗҫне куҫҫанах активпа таччӑн ҫыхӑнса ӗҫлеме тытӑнтӑм, секцисен ӗҫне чӗртсе йатӑм. Ӗҫе пӗлсе организацилесен йертсе пыма та ҫӑмӑл. Финанс секцийӗ пур секцисенчен те лайӑхрах ӗҫлесе пынине палӑртатӑп. Епӗр укҫа-тенкӗ пухассине пур тӳлевсем йенӗпе те пурнӑҫларӑмӑр. Ийулӗн 2-мӗшӗнче Виҫҫӗмӗш Пилӗкҫуллӑх Займа ҫырӑнас кампани пуҫланчӗ. Пирӗн колхозниксем правительствӑ займ кӑларнине пысӑк хавасланӑхпа кӗтсе илчӗҫ. Епӗр ҫак ӗҫре те чи малтанах активпа пӗрле ӗҫлеме тытӑнтӑмӑр. Комсодпа финанс секци членӗсен ларӑвӗсенче ҫӗнӗ займа 1.100 тенкӗлӗх ҫырӑнчӗҫ. Ийулӗн 3-мӗшӗнче колхозниксен пысӑк митингӗ пулса иртрӗ. Ҫак митинграх 1.700 тенкӗлӗх ҫыранса, 1200 тенкӗ укҫа тӳлесе татрӗҫ. Капитӑв Шейдулла ӗлӗк питӗ чухӑн пурнӑҫпа асаплӑхра пурӑннӑ. Вӑл халӗ телейлӗ пурнӑҫпа пурӑнать. Ҫав митинграх ҫӗнӗ займа 60 тенкелӗх ҫырӑнса укҫине те тӳлесе татрӗ. Шейдуллин Гали конюхра ӗҫлет. 60 тенкӗлӗх ҫырӑнса, ҫавӑнтах тӳлесе татрӗ. Вӗсем ытти колхозниксене лайӑх пример кӑтартреҫ. Пурне те ҫӗнӗ займа ҫырӑнса илме чӗнчӗҫ. Кун хыҫҫӑн пур колхозниксем те займ илме ҫырӑнчӗҫ. Иртнӗ ҫулхи займа епӗр 4.300 тенкӗлӗх сарнӑччӗ. Ҫӗнӗ займа 4.700 тенкӗлӗх ҫырӑнчӗҫ. Колхозниксем ЧАССР Верховнӑй Совечӗн 1-мӗш ҫеҫҫиччен займ укҫине пӗтӗмпех тӳлесе татма пулнӑччӗ. Халӗ займ укҫине тӳлесе татрӑмӑр ӗнтӗ.

Йалсоветри пур секцисем те хӑйсен ӗҫесене ҫӗнетсе пыраҫҫӗ. Тасалӑх секцийӗ лайӑх ӗҫлет. Колхозниксем таса та культурӑлӑ пурӑнма вӗренсе ҫитрӗҫ. Хатӗрлев секцийӗ лайӑх ӗҫленипе государствӑ умӗнчи парӑмсене вӑхӑтра пурнӑҫласа пыракан пултӑмӑр.

Епӗр пур ӗҫре те ҫӗнтерӳ туса пыратпӑр. Ҫак ӗнтӗ массӑпа ҫыхӑнса, пӗрле ӗҫлениччен килет. Иртнӗ суйлав кампанисенче ӗҫҫынниcен активлӑхӗ нумай ӳсрӗ. Йалсоветри агитаторсем халӗхи вӑхӑтра суйлав кампани вӑхӑтӗнхинчен те хӗрӳлӗн ӗҫлесе пыраҫҫӗ.

Анчах та пирӗн тумалли ӗҫсем те питӗ нумай-ха. Епӗр пур хресченсене те колхоза кӗртсе ҫитереймен. Активпа ҫыхӑнса ӗҫлени ку ӗҫре те ҫитӗнӳ тума май парать. Мана Урмайел суйлав округӗнчи суйлавҫӑсем ЧАССР Верховнӑй Советне депутата суйласа, ман ҫине пысӑк шанӑҫ хучӗҫ. Ҫакна май епӗ йалсовет ӗҫне татах та лайӑхрах туса пырассишӗн тӑрӑшса ӗҫлетӗп.

ЗАРИФУЛЛА ГАЛИУЛЛИН.
Тукай йалсовет председателӗ—ЧАССР Верховнӑй Совет депутачӗ.

Учитӗл пулса ӗҫленипе чӗререн савӑнатӑп

Турхантан ирхине 8 сехетре тухрӑмӑр. Автомобил хамӑр республикӗн лайӑх ҫулӗсем тӑрӑх малала пырать. Лайӑх астӑватӑп, ӗлӗк пирӗн ҫулсем питӗ начарччӗ, ун чухне машинӑсемпе мар, лашасемпе те ҫӳреме йавӑрччӗ. Совет влаҫӗ пулнӑ хыҫҫӑн, хамӑр ҫулсене лайӑх йӗркене кӗртрӗмӗр. Халӗ пирӗн автомобилсем нумай. Вӗсемпе лайӑх ҫулсемпе ҫӳресе савӑнатпӑр.

Канаша ҫитсен автобус ҫине лартӑмӑр. Ҫул икӗ айакипе йавӑҫсем лартса тухнӑ. Йавӑҫсем хушшипе колхозсен пуйан уй-хирӗсем курӑнаҫҫӗ. Машинӑ ҫинче ларса пынӑ чух колхозсен уйӗсенче хӗрӳ ӗҫ пынине куртӑмӑр. Колхозниксем ӑнӑҫлӑ тырра пысӑк хастарлӑхпа пухса кӗреҫҫӗ. Халӗ пирӗн колхозла хирсенче жнейкӑсем, трактӑрсем, комбайнсем тата ытти йалхуҫалӑх машинисем нумай.

Пурнӑҫ тӗпренех улшӑнса лайӑхланчӗ. Колхозниксем ҫулран-ҫулах вӑйлӑ тырпул туса илеҫҫӗ. Республикре ҫӗнӗ хапрӑк-савӑтсем ӳсеҫҫӗ. Пирӗн республикӑн столици илемленсе пырать. Вӑл хӑйӗн сӑн-сӑпатне тӗпренех улӑштарчӗ. Кунта илемлӗ ҫуртсем ӳссе ларчӗҫ. Ӗҫҫынnисене валӗҫи театрсем, клубсем, сатсем тата ыт. те пур. Епӗр ӗлӗк кун пек савӑнӑҫлӑ пурнӑҫа ӗмӗтленме те пултарайман. Епӗ халӗ учителре ӗҫлекен Бокашӗвӑ йалнех илсе пӑхар-ха. Революциччен ку йалта хутла пӗлменнисем 80 процент, трахомпа чирленисем 80 процент ытла пулнӑ. Йал культурӑсӑр пулнӑ. Халӗ ҫак йала паллама ҫук. Вӑл тӗпренех улшӑнчӗ. Шкул пур. Ҫул ҫитнӗ ҫамрӑксем пурте шкулта вӗренеҫҫӗ. Кашнийех пӗлӳ илсе, тӑван ҫӗршывшӑн усӑлӑ ҫын пулма тӑрӑшать. 11 ҫул учителре ӗҫлерӗм, ҫак вӑхӑтра пирӗн ҫамрӑксем чӗререн хутла вӗренме тӑрӑшнине лайӑхах туйса илтӗм.

Совет правительстви халӑхсен сывлӑхне упрас ӗҫе те укҫа нумай расхутлать. Ӗлӗк Чӑваш халӑхӗшӗн пысӑк асаплӑх пулнӑ трохом чирӗ пӗтсех пырать.

Коммунисла парти пире телейлӗ пурнӑҫ ҫулӗ ҫине илсе тухрӗ. Телейлӗ ҫӗршыври ҫамрӑксене хутла вӗрентесси, коммунисла воспитани парасси—телейлӗ тивӗҫлӗх. Халӗхи вӑхӑтра епӗ вӗрентсе кӑларнисенчен нумайӗшӗ аслӑ шкулсенче инженерсем, лётчиксем, конструктӑрсем, учителсем тата ытти специалиссем пулма вӗренеҫҫӗ. Халӗ ман шкулта 59 ҫамрӑк ача вӗренет. Вӗсен те ӗмӗчӗсем пысӑк.

Пурӑнма савӑнӑҫлӑ пулса тӑчӗ. Хам учителре ӗҫленипе чӗререн савӑнатӑп. Епӗ патша влаҫӗ вӑхӑтӗнче кун пек телейлӗ пурнӑҫ курасса ӗмӗтленме те пултарайман. 13 ҫула ҫитсен капиталиссем патне ӗҫлеме кайса шахтасенче, сахӑр савӑчӗсенче тата ытти ҫӗрте ӗҫлесе куртӑм. Ун чухне пире хутла вӗрентмен. Совет влаҫӗ хыҫҫӑн, учитӗл пулса тӑтӑм. Ҫак ӗҫре халӗ ыванма пӗлмесӗр совет ҫамрӑкӗсене коммунисла воспитани парассишӗн ӗҫлесе пыратӑп.

Ӗлӗк пирӗн пек учителсене, ӗҫҫыннисенчен тухнӑ учителсемпе ытти интеллигентсене влаҫӑн аслӑ органӗсене суйламан. Турхан суйлав округӗнчи суйлавҫӑсем мана ЧАССР Верховнӑй Советне депутата суйларӗҫ. Ман ҫине пысӑк шанӑҫ хучӗҫ. Епӗ халӑх шанӑҫне тивӗҫлипе пурнӑҫласа пыратӑп. Культурӑ фронтӗнче татах та хӗрӳлӗн ӗҫлесе пыратӑп.

Ёнер епӗ ЧАССР Верховнӑй Совечӗн Пӗрремӗш Ҫеҫҫине килтӗм. Кунта государствӑлӑ пысӑк ыйтусене сӳтсе-йаватпӑр. Ҫак пысӑк тивӗҫе пире Сталинла Конституци пачӗ.

В. Ҫ. Кириллӑв.
ЧАССР Верховнӑй Совет депутачӗ.

Ҫеҫҫи уҫӑлнӑ тӗле

ЙӖПРЕҪ, ийулӗн 26-мӗш. (Телефонпа). Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗн Пӗрремӗш Ҫеҫҫийӗ уҫӑлнӑ тӗле Мӑрат колхозӗ ӗҫ планӗпе пӑхниччен пӗр кун маларах ыраш вырса пӗтерчӗ. 120 гектар ыраша пӗтӗмпех жнейкӑсемпе 5 кун хушшинче вырнӑ. Апҫанӑв тата С. Васильӗв машиноведсем ӗҫ нормине 150—200 процент тултарса пычӗҫ. Колхозра столовӑй ӗҫлет. Унта 170 ҫын апатланаҫҫӗ.

М. Митрофанӑв.

Уйхир ӗҫӗнчи стахановӗцсем

Тӑвай МТС-чи улттӑмӗш бригадӑра ӗҫлекен комбайнер А. Константинӑв хӑйӗн сменинче комбайнпа 16-шар гектар пуҫтарать. Ҫавнашкалах виҫҫӗмӗш бригадӑри П. Николайӗв комбайнер та сменӑра 15—16 гектар вырса пырать.

Тӑрмӑшри Левин йачӗпе тӑракан колхозра М. Йакӑвлӗвӑ, Й. Степановӑ колхозницӑсем алпа вырас нормӑна 310 процент таран тултарса пыраҫҫӗ. Федӑрӑвӑ колхозницӑ 62 ҫулта пулсан та нормӑна 300 процент ытларах тултарать.

Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗн пӗрремӗш ҫеҫҫийӗ уҫӑлнӑ кун—ийулӗн 26-мӗшӗнче Киччӗри „Майӑн пӗрремӗш" колхоз 120 пӑт, „Ҫӗнӗ ҫул" колхоз 90 пӑт ыраш государствӑна леҫсе пачӗҫ.

Пикишкин.
В. Илйин.

Колхозсен уйхирӗсенче

Государствӑна ыраш парса татрӗҫ

ШӐНКӐРТАМ, ийулӗн 26-мӗшӗ. (Телефонпа). Ыраш вырса пӗтерне хыҫҫӑнах аван ҫапма тытӑнса, колхозсем государствӑна тырӑ леҫеҫҫӗ. Пайанхи куна „Алга", „Августӑн 1-мӗшӗ" колхозсем 1938 ҫулшӑн ыраш памалли плана тултарчӗҫ. „Марс" тата ытти колхозсем йулашки лавсене кӑларса йанӑ.

Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗн Пӗрремӗш Ҫеҫҫийӗ уҫӑлнӑ майӗпе колхозсенче социалисамлӑ ӑмӑрту татах вӑйланчӗ. Вӗсем 1938 ҫулшӑн ыраш парса татассишӗн, ҫуртрисене те хӑвӑрт тата лайӑх пахалӑхпа пухса кӗртессишӗн тӑрӑшаҫҫӗ.

Кужикӑв.

2.903 гектар ыраш вырнӑ

Тӑвай районӗнчи колхозсем 2.903 гектар ыраш вырнӑ. Ийулӗн 25-мӗшне районри 5 колхозра ыраш вырса пӗтернӗ. Уйра ӗҫленӗ ҫӗрте стахановла йухӑм анлӑсарӑлса пырать. Ҫавна пула стахановецсен хисепӗ кунран-кун йышланса пырать. „Майӑн пӗрремӗшӗ" колхозри Афорин тата Потапӑв холхозниксем жнейкӑпа кашни сменӑра 8 шар гектар вырса пынӑ. Ҫак колхозрах Й. Обакина колхозницӑ ҫурлапа 0,12 гектар вырас вырӑнне, 0,18 гектар вырать.

„Ҫӗнӗ ҫул" колхозра Андрейӗв машиновед сменӑра 8-шар гектар вырса пынӑ. А. Сергейӗвӑ колхозницӑ 600 кӗлте ҫыхса пырать. „Звезда" колхозра М. Налимӑвӑ колхозницӑ ҫурлапа вырас нормӑна 371 процент тултарса пырать.

Ыраш вырса пӗтерчӗҫ

СӖНТӖРВӐРРИ, ийулӗн 25-мӗш. (Телефонпа). Районри колхозсем виҫҫӗмӗш кун ӗнтӗ массӑлӑн ыраш выраҫҫӗ. Малта пыракан колхозсем, сӑмахран, „Октабӗр", Кивӗ Акчурари „Ленин ҫулӗ" колхозсем ыраш вырса пӗтерчӗҫ. „Октабӗр" колхозра 60 ҫулхи С. Куҫмин колхозник ӗҫ нормине 150 процент таран тултарса пынӑ. М. Демидӑв машиновед виҫӗ сменӑра 17 гектар таран ыраш вырнӑ. Вӑл жнейкӑна пӗр сехет те ахаль лартман. Лашасене кӑна улӑштарса тӑнӑ, кӑнтӑрла та ӗҫленӗ.

„Стрела" колхоз ийулӗн 23-мӗшӗнче, „Власть труда" колхоз ийулӗн 24-мӗшӗнче ыраш вырса пӗтерчӗҫ. Ҫак колхозсенче пур ӗҫе те план тӑрӑх туса пынӑ. Кашни бригадӑри звеносем пӗрперинпе ӑмӑртса ӗҫлерӗҫ. Кӗлте ҫыхакансем: Н. Филиппӑвӑ, Ф. Калининӑ, жнейкӑпа ӗҫлекенсем: Й. Виньаков, К. Калинин, И. Аниҫимӑв йулташсем ӗҫ нормине 150—200 процент тултарса пычӗҫ.

Районри колхозсем государствӑна тырӑ пама тытӑнчӗҫ. Ийулӗн 25-мӗшӗнче районри колхозсенчен чи малтан „Красный Волгарь" тата „Малый Аниш" колхозсем государствӑна ҫӗнӗ тырӑ леҫсе пачӗҫ.

П. Сатур.
Г. Смирнов.

Малти вырӑна тухнӑ

Уйкас Кипек йалсоветне кӗрекен Куйбышӗв тата Тельмӑн йачӗпе тӑракан колхозсем Шӑхасан районӗнче малта пыракан колхозсем шутланаҫҫӗ.

Куйбышӗв йачӗпе тӑракан колхоз пур ӗҫе те план тӑрӑх туса пырать. Плансене йалланах колхозниксен аслӑ пухӑвӗнче ҫирӗплетеҫҫӗ. Пур ӗҫе те лайӑх организацилесе, вӑхӑтра туса пыраҫҫӗ.

Колхозра уйри тырпула пухса кӗртес телӗшпе аван ҫапӑс, государствӑна тырӑ леҫсе парас ӗҫсен графикӗ тунӑ.

Колхозӑн пӗтӗмпе 183 гектар ҫинчен ыраш пухса кӗртмеле. Вӑл шутран 22 гектар алӑпа, 61 гектар жнейкӑпа вырмала, комбайнпа 100 гектар пухса кӗртмеле.

Колхозра стахановецсен йышӗ ӳссех пырать. Пӗрремӗш бригадӑра Иван Архипӑв, Ольгӑ Павлавӑ, Агрипинӑ Михайлӑвӑ—кӗлте ҫыхакансем куллен хи ӗҫ нормине 150-шар процент тултарса пыраҫҫӗ. Кунта, уйрӑмӑнах Ольгӑ Макарӑвӑна палӑртмала. Вӑл кашни кун 1 пин кӗлте ытла ҫыхать, тӑкаксемпе хытӑ кӗрешет. Вӑл ҫыхнӑ кӗлте пӗр пучах выртнине те курмастӑн. 3-мӗш бригадӑра 7 ҫул хушши пӗр улшӑнмасӑр Иванов Андрей Иванӑвич йулташ бригадир пулса йертсе пынӑ. Вӑл бригадӑри ӗҫ вӑйне тӗрӗс организацилениппе пур ӗҫе те чи малтан тата кӑтартулӑн туса пырса, районта чи малти вырӑна тухнӑ.

Иванов йулташа халь, унӑн пултарулӑхне кура, йалсовет председательне тата ЧАССР Верховнӑй Советне Йамаш округӗ тӑрӑх депутата суйланӑ. Кошкин йулташ та бригадӑри ӗҫ вӑйне тӗрӗс организациленӗ. Унӑн бригадинче кашни куллен ех стена хаҫачӗ тухса тӑрать. Ӗҫ нормине кам мӗн чухлӗ тултарса пынине кашни куллех ҫырса кӑтартса тӑраҫҫӗ. Бригадӑра хаҫат-журналсем вулас ӗҫе те лайӑх организациленӗ.

Бригадӑн пурӗ 51 гектар ҫинчен ыраш вырса кӗртмеле пулнӑ. Ийулӗн 23-мӗшӗнче вӗсем вырса пӗтерчӗҫ.

Уйкас Кипекри Тельмӑн йачӗпе тӑракан колхозра та ӗҫе лайӑх организациленӗ. Колхозӑн 7 жнейкӑ пур, вӗсем пурте лайӑх ӗҫлеҫҫӗ. Жнейкӑпа 5 гектар вырмала пулсан, кашни куллен 7—8 гектар таран вырса пыраҫҫӗ.

Колхозра 6 бригадӑ, 12 звено, вӗсем пурте пӗр пӗррипе ӑмӑртса ӗҫлеҫҫӗ. Кунсӑр пуҫне, колхозниксем те пӗр-перипе ӑмӑртаҫҫӗ. Ӑмӑртура кам мала тухнине колхоз председателӗ Тихӑнӑв йулташ кашни куллен ех тӗреслесе тӑрать.

Икӗ колхозра та пӗрлешӳлӗ столовӑй тата ача площадкисем организациленӗ.

Н. Михейӗв.

Ыраш кӗлтине турттараҫҫӗ

Шӑхасан. Колхозсен уйхирӗсенче хӗрӳлӗ ӗҫ пырать. Пулса ҫитнӗ вӑйлӑ тырпула колхозниксем пӗр тӑкаксӑр, ӑнӑҫлӑн пухса кӗртессишӗн ӑмӑртса, хавасланса ӗҫлеҫҫӗ. Уйхирсенче стахановла ӗҫлекенсен хисепӗ ӳсет.

Ӗҫе тӗрӗс организациленӗ колхозсем ыраш вырса пӗтерсе, ҫуртри вырма, аван ҫапма тытӑнчӗҫ. Ийулӗн 24-мӗшӗнче Чалкасси йалсоветне кӗрекен „Прожектор", Ҫӗнӗ Пинерти „Пинер" колхозсем ыраш вырса пӗтерчӗҫ. Ийулӗн 25-мӗшӗнче Атнашри Кирӑв йачӗпе тӑракан колхоз тата ытти колхозсенчи нумай бригадӑсем ыраш вырса пӗтерчӗҫ.

„Пинер" колхоз тырпулсене пуҫтарса кӗме тӗплӗн хатӗрленнипе тухрӗ, план тӑрӑх ӗҫлерӗ. Жнейкӑсене пӗр сехет те ахаль лартман. Вӗсемпе виҫӗ сменӑра ӗҫленӗ. М. Денисӑв колхозник жнейкӑпа 6 гектар вырас вырӑнне йалланах 10 гектар вырса пычӗ. Ҫак колхозра жнейкӑсемпе 40 гектар вырма палӑртнӑ пулсан, вӗсемпе 98 гектар вырнӑ. Ӗҫ планӗ тӑрӑх ыраша 7 кунта вырса пӗтермеле пулнӑ, 6 кун хушшинче вырса пӗтернӗ.

Ыраш вырнӑ ҫӗрте К. Харитонӑвӑ, Т. Федӑрӑвӑ, Л. Куҫмина, А. Петровӑ, Й. Николайӗвӑ тата М. Куҫмина колхозницӑсем аван ӗҫлерӗҫ. Вӗсем ӗҫ нормине 140—150 процент таран тултарса пычӗҫ.

Ийулӗн 25-мӗшӗнче „Пинер" колхозникӗсем ыраш кӗлтине турттарма, аван ҫапма тытӑнчӗҫ.

А. Соловйов.

Тырӑ леҫекенсене хисеплеменни ан пултӑр

Колхозсем хӑйсен государствӑ умӗнчи обйазательствисене вӑхӑтра тултарасшӑн тӑрӑшаҫҫӗ. Вӗсем „Заготзерно" тырӑ илекен пункчӗсене тырӑ леҫес ӗҫе пуҫӑнчӗҫ те. Шупашкарти пункта та тырӑ тийенӗ лавсем кашни кунах килме тытӑнчӗҫ. Анчах „Заготзерно" Шупашкарти пункчӗ ҫӗнӗ тырра йышӑнма, тырӑ леҫме килекен колхозниксемпе йединоличниксене кӗтсе илме хатӗр мар.

Складсенчен пуҫӑнатпӑр. 8-мӗш склада извӗҫпе сапса тухман, склад ҫийӗне йусаса пӗтермен. Кунта йусав ӗҫӗсем питӗ сӳрӗккӗн пулса пыраҫҫӗ. Палӑртнӑ ӗҫсене нихӑҫан та вӑхӑтра туса пӗтермеҫҫӗ. Складсене ҫак кӗске срукра йусаса пӗтермесен, Шупашкарти пунктра пысӑк чӑрмавсем пулма пултарасси куҫ умӗнчех.

Ҫийелтен пӑхсан, кунта пурте ҫителӗклӗ пек. Клуб та, хӗрлӗ кӗтес те, культработник те пур. Анчах ҫаксем пурте йатшӑн ҫеҫ. Клубӗнче нимӗн йӗркелӗх те ҫук, хӗрлӗ кӗтесне аллапки хулӑмӗш тусан тулнӑ. Кӗнекесем, хаҫат-журналсем ҫук. Культработник Сапожникӑв ӗҫлемест. Халӗ пунктра рабочисем те нумай, тырӑ леҫме килекенсем кашни кун нумайланса пыраҫҫӗ. Ҫак вӑхӑтра Сапожникӑв пӗр хутчен те хаҫат-журнал вуласа паман. Тырӑ леҫме килнӗ колхозниксем хаҫат-журнал тупса вуласшӑн таҫта ҫитеҫҫӗ, анчах тупаймаҫҫӗ. Шупашкар-и пунктра радио ҫук. 4 радиорепродуктӑр пулмала, халӗ пӗрне те лартман.

Столовӑй, санпункт, перекет касси уҫасси ҫинчен калаҫнисӗр пуҫне, нимӗнле конкретлӑ ӗҫ те туман. Хулари организацисем: Чебторг, перекет касси, хула совечӗн ҫутӗҫ пайӗ, комсомол хула комитечӗ, профсойуз обкомӗсем тырӑ илекен пунктра пысӑк ӗҫсем тума пултараҫҫӗ пулин те, вӗсем пайанхи куна ҫитсе нимӗн те тумаҫҫӗ.

„Венера" колхоз (Елӗк р.) колхозникӗсем 7 лавпа тырӑ тийесе, ийулӗн 22-мӗшӗнче Шупашкара килнӗ. Ирхине 8 сехетре складра пулнӑ. Склад пуҫлӑхӗ те, прийомщиксем те пулман, пӗр хуралҫӑ Тимофейӗв ҫеҫ пулнӑ, 2 сехет кӗтсе тӑма тивнӗ. Ийулӗн 25-мӗшӗнче каллех „Венера" колхозникӗсем прийомщиксем, склад пуҫлӑхӗ ҫук пирки, 3 сехет усӑсӑр кӗтсе тӑнӑ. Пунктрӑ 100 лав пулсан та, склад пуҫлӑхӗсем 5 сехет иртсен: тырӑ илместпӗр, тесе колхозниксене тепӗр куна хӑвараҫҫӗ.

Ҫитес кӗске вӑхӑтра пункта тырӑ лавӗсем килсе тулаҫҫӗ. Шупашкарти пункт унчухне те халӗхи пек йӑраланса ӗҫлесен, партипе правительствӑ панӑ заданине пурнӑҫа кӗртме чӑрмантарать. Малтанхи кунсенче палӑрнӑ ҫитмевлӗхсене халех пӗтермеле, тырӑ леҫекенсене лайӑх кӗтсе илмеле.

Шупашкар хула совет членӗ—
А. И. Таврина.

Килте ӗҫлекен хӗрарӑмсем, складсене тӗрӗсленӗ ҫӗрте пулнисем—Пономаревӑ, Перошӗвӑ, Дмитрийӗвӑ.

„Венера" колхоз колхозникӗсем—Ваҫилйӗв, Филиппӑв.

Комбайнсемпе йӗркелӗн усӑ курмаҫҫӗ

ШӐХАСАН. МТС-ра кӑҫал 8 комбайн. Вӗсем пурте пекех ыраш вырас ӗҫе ийулӗн 22-мӗшӗнче тин тытӑнчӗҫ.

Трактӑриссемпе комбайнерсем машинӑ техникине тӗплӗн вӗрсе ҫитейменнине пула, ӗҫ вӑхӑтӗнче час-часах простойсем пулаҫҫӗ.

Вӑрман Кипекри Куйбышӗв йачӗпе тӑракан колхозра ӗҫлекен комбайнер Никифӑрӑв йулташ ийулӗн 22-мӗшӗнче 3 гектар вырнӑ та, кунӗпех ӗҫлемесӗр ларнӑ. Вӑл тырӑ пучахӗсене кӑларакан ҫӗрти сӑнчӑра тӗрӗс лартман пулнӑ. Ҫавӑнпа ӗҫленӗ вӑхӑтра ыраш капланса пынӑ.

Трактӑрис Григорйӗв йулташ та трактӑрпа кирлӗ пек ӗҫлеймен. Заправщик Дмитрийӗв трактӑра пӗртте тасатман.

Шупуҫӗнчи „III-мӗш Интернационал" колхозра ӗҫлекен бригадӑри комбайнер Виктӑрӑв йулташ та ийулӗн 22-мӗшӗнче пӗр-ик хут ҫаврӑнсанах, колхоз председателӗ комбайн ҫумне кирлӗ чухлӗ ӗҫ вӑйӗ паман пирки тата шыв илсе пыманнине, ӗҫсӗр ларнӑ.

Ситрийелӗнчи „Герой" колхозра комбайн ӗҫлемелли участокӗнче комбайнран вӗҫертсе илнӗ проволкӑна вырман тырӑ ҫине пӑрахнипе, комбайнӑн 2 пайӗ тата шӑлӗсене ватнӑ.

В. Чернов.

Ухсай Йаккӑвӗ

ПУРҪӐН ХУРЧӖСЕМ

Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи „Ленин ҫулӗпе" колхоз правленийӗнче, стена ҫинче пурҫӑн тӑвасси ҫинчен ӑнлантаракан плакат ҫакӑнса тӑнӑ. Уйччен Сафрон Алексейӗв Кивӗ Акчура хӗрӗсем пурҫӑн тутӑр ҫинчи ҫеҫкесене мӳхтаса йурланине илтнӗ, анчах Сӗнтӗрвӑрри хулинчен 30 ҫухрӑмра ларакан йалта пурҫӑн тӑвасси ҫинчен тӗлӗкре те тӗлленмен.

Плакат вулани Сафрона айӑхран татнӑ, шухӑшсем пуҫне аларманӗ пек ҫаврӑнӑ. Вӑл Мускава, „Ҫамрӑк натуралиссен ушкӑнне", каласа ыйтса, ҫыру ҫырнӑ. Унӑн савӑнӑҫне кура, нумай вӑхӑт иртмен, пурҫӑн хурчӗсен ҫӑмартисем килсе ҫитнӗ. Мӗн пурӗ—122. Виҫ кунтанах чӗпӗленсе 85 хурт сиксе тухнӑ.

— Аптӑрса ӳкрӗм,—тет Сафрон,—тухса тарасран хӑратӑп. Вара пӗтӗм йал кулли пулать, тытнӑ шухӑш тӳрре тухмасть.

Чӑнах та, Сафроншӑн ӑвӑр килме пултарнӑ. Кашни ҫынӑн йуратнӑ ӗҫӗ пур. Хӑшӗ ӗмӗр ӗмӗрех тимӗр шӑрать, хӑшӗ халат хӑпарса куриман пӗлӗтре вӗҫет, тепри таҫти ҫӑлтӑрсем йенне шунине сӑнаса тӑрать. Сафрон пурҫӑн ӑсти пулас тенӗ. Хуртсем чӑнипе пӗр-пӗр тӑракан ҫурӑкне кӗрсе ҫухалнӑ пулсан, йалти каччӑсем йурийех Сафрона питлесе такмаксем йурлӗччӗҫ. Хуртсем канӑҫсӑр кӗшӗлтетнӗ. Сафрон хуралласа тӑнӑ.

Сафрон ҫиа вӗрнипе вӗҫсе каймa пултаракан пӗчӗк чунсене пӑхма вӗренмен-ха. Калӑпӑр, пӗр-пӗр патвар хулӑ ҫын йуман кӗрешӗсене касса пура пуралать. Анчах ӑна сехет тӳрлетме тӳрӗ килсен, етем пӗтӗмпе аптраса ӳкет. Сафрон ӗҫӗнче те ҫаплах пулнӑ. Ача чухне Хуракасси хирӗсенче кӗтӳ кӗтнӗ, хивре йавнӑ чӑпӑркка шартлаттарнӑ, унӑн умӗнче чакӑр куҫлӑ вӑкӑрсем мӑйракисемпе ҫӗре чӗрсе мӗкӗрнӗ.

Ҫулсем иртнӗ, Сафрон пурнӑҫӗ чӑнипех те ҫунатланнӑ. Педрабфак. Кайарахпа Хӗрлӗ Ҫар ретӗнче пулни Сафрона пурнӑҫра тӗреклӗн утма, илнӗ ӗҫе туса пыма вӗрентнӗ. Винтовка алӑра сулмаклӑн тытнӑ.

Йалта, хӑйӗн пӳртӗнче ытлӑ та пӗчӗк пурҫӑн хурчӗсем кӗшӗлтетнӗ, вӗсене алла сулмаклӑ тытма пулман. Анчах вӗсем хаклӑ чунсем.

— Пурҫӑн тӑвасси,—тет Сафрон,—парашӳтсем тӑвасси. Епӗ красноармейӑц куҫӗпе пӑхса калатӑп.

Сафрон ҫӗр ҫывӑрма пӗлмен. Пурҫӑн хурчӗ нумай ҫиме йуратать. Унӑн апачӗ хаклӑ мар: йуман ҫулҫи кӑна.

Сафрон йуман турачӗсем иртсе килнӗ. Чӳлмек ҫине шыв йанӑ, ӑна ывӑспа витнӗ. Ывӑсне шӑтӑксем шӑтарнӑ, чӗп-чӗрӗ ҫулҫӑлӑ йуман турачӗсем лартнӑ. Мускавран килнӗ пӗчӗк хӑнасен—пурҫӑн хурчӗсен столовӑйӗ тӑвӑр пулнӑ. Повар вырӑнне ӗҫлекен Сафрона ӑвӑр килнӗ. Пӗчӗкҫӗ хӑнасем пӗр канмасӑр ир те, каҫ та ҫинӗ, йуман турачӗсем пӗр кун хушшинчех кӗркуннехи пек ҫап-ҫара тӑрса йулнӑ. Ҫав пӗчӗк хуртсем кӗске вӑхӑтрах пӳрнерен те вӑрӑм пулса ҫитнӗ. Хуртсем мӑнтӑрланнӑ та хӑйсен ӗҫне тытӑннӑ, йурийех йӑва тунӑ, пӗр майах пӗр вырӑнта тӑрса хӑйсене пурҫӑнпа ҫавӑрма тытӑннӑ, пытанса пынӑ. Сафрон ытларах савӑннӑ, унӑн умӗнче 64 пурҫӑн чӑмакки (коконӗ) выртнӑ. Вӗсем Сӗнтӗрвӑрри районӗнче кӑна мар, пӗтӗм чӑваш ҫӗршывӗнче те чи малтанхисем пулнӑ.

20 кун иртсен, ҫакӑ шурӑ коконсен ӑшӗнчен 64 лӗпӗш вӗҫсе тухнӑ, тепӗр кунах чӳрече ҫинче ҫӑмартасем тунӑ. Вӗсенчен тата 7—8 кунтан вӗтӗ хуртсем кӗшӗлтетсе тухнӑ. Сафрон пӗрмайах вӑрмантан йуман турачӗсем илсе килнӗ, хуртсем ҫисе пыма ӗлкӗрнӗ. Ҫапла вара икӗ кӑларӑмра 400 кокона ҫитнӗ.

Умра ҫентӑбӗр тӑнӑ, сарӑ йуман ҫулҫисем ҫулсем тӑрӑх кустарӑннӑ. Пурҫӑн коконсем ӑшне кӗрсе выртнӑ „пурҫӑн строителӗсене" хӗл каҫармалла пулнӑ. Хӗл хырӑмӗ вӑрӑм теҫи вӗсене тивмест. Вӗсем темиҫе кун хушшинче ҫисе тӑрӑнса выртнӑ. Хӗлле лӗпешсем вӗҫсе ан тухчӑр тесен, вӗсене 2—5 градус ӑшӑра тытни кирлӗ.

Сафрон вӗсене хӑйӗн пӳртӗнче сакайӗнче хӗл каҫарать. 23—24 градус ӑшӑра, 400 коконтан ҫурри ытла лӗпӗшсем тухнӑ, ыттисем хӗлле пӳртре ӑша ытларах тӑнӑ пирки путланса кайнӑ.

Ҫапла вара чӑваш ҫӗршывӗнче чи малтанах „пурҫӑн строителӗсем" Кивӗ Акчура йалӗнче хӗл каҫнӑ. Кун хыҫҫӑн Сафрон хӗпӗртени вӗҫӗ хӗррисӗр пулнӑ, ларма-тӑма пӗлмен.

— Кун хыҫҫӑн,—тет Сафрон,—пирӗн ҫӗршывра пурҫӑн тума май пуррине чӑн-чӑнах, пӗтӗм кӑмӑлтан ӗненсе ҫитрӗм. Вӑрмана кӗрӗтӗн те умра ҫамрӑк йуман ҫулҫисем мар, темле ылттӑнсем ҫакӑнса тӑнӑ пек туйӑнать. Ех, кунта хуртсене килсе йарасчӗ!—тетӗп.

Сафрон Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи ҫӗрӗҫ пайне йалланах ҫӳрет, хӑйӗн савӑнӑҫӗ ҫинчен аллисене сула-сула каласа парать. Чӑваш ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариатне хӑйӗн ӗҫӗсем ҫинчен пӗлтерет. Унта ӑна пурҫӑн тӑвас йенпе ӗҫлекен штатсӑр инструктӑр туса хураҫҫӗ. Чӑпӑркка шартлаттарса ҫӳренӗ Сафрон пысӑк та хаклӑ ӗҫе пуҫарса йаракан пулса тӑрать.

Сафрон Уфари пурҫӑн станцине кайса курнӑ. Унтан вӑл 250 грам пурҫӑн хурт ҫӑмартисем илсе килнӗ.

— Пушкӑрт ҫӗрӗсем пирӗнни пекех,—тет Сафрон,—пирӗн—Атӑл, вӗсен—Шуратал. Ҫаплах йуман вӑрманӗсем, пирӗнни пек ҫутҫанталӑк. Пушкӑрт республикӗнче государствӑна пурҫӑн пама 45 промышлӗннӑҫлӑ колхоз ӗҫлеҫҫӗ тата 30 колхозра опытлӑ ӗҫсем пыраҫҫӗ.

Сафрон хӑй куҫӗпе Пушкӑрт республикӗнче курни унӑн ӗмӗтне татах ӳстерет. Сӗнтӗрвӑрри районӗнче пурҫӑн тӑвас пирки Вӑрман Кӑшкари „Боевик" тата Иштерекри „1 май" колхозра опытлӑ ӗҫсем пыраҫҫӗ. Халӗ ҫав икӗ колхозра пурӗ 6000 хурт пурҫӑн караҫҫӗ.

Сафрон Алексейӗв пурҫӑн ӗҫне тӑм чӳлмек ҫинче пуҫлани ҫӗршывӑмӑр тӑрӑх кайтарчӗ. Унӑн ӗҫне аслӑлӑх йенчен тӗпчесе пирӗн йумансенчен чӑн-чӑнах пурҫӑн тума пултарассине акснома туса хурасчӗ.

Пирӗн пурҫӑн парашӳчӗсем анӑ чухне, хӗрсем ал сӗлччӗр, вӗсен пуҫӗсенче пурҫӑн тутӑр вӗлкӗштӗр!

Парти пурнăçĕ

Уйхирти политикăлă-массăлă ĕç

Кăçалхи çул Йĕпреç районĕн 13 пин те 149 гектар çинчен тĕрлĕ тырпул пухса кĕмеле. Ку задачăна ăнаçлăн пурнăçлама районти парторганизацин вирлĕ ĕçлемеле.

Районра 139 коммунис, вĕсенчен йалта 32 коммунис ĕçлеççĕ. Ыттисем вăрманпромхозра, савăтсенче тата районти учрежденисенче. Йалти 32 коммунисран колхоз ĕçĕнче 15 çын анчах. Паллах, политикăлă ĕçе сарса йама коммунисен шучĕ колхозсенче çителĕксĕр. Парторганизацин ĕçе комсомолĕцсене, сочувствуйушчисене тата партире тăман активиссене йавăçтармала. Районра комсомолĕцсем 761 çын, сочувствуйушчисем 42 çын, партире тăман активиссен шучĕ те чылай. Йĕпреç райкомĕн тырпула вырма тухиччен ку вăйа хускатса йамала пулнă. Анчах пайанхи куна та политикăлă ĕçе тыră вырна çĕрте, колхозниксем хушшинче кирлĕ пек сарман. Епеç йалсоветĕнчи пуçламĕш парторганизацинче 4 член, 2 кандидат. Ку йулташсем пурте йалсоветĕнче, йалпора, колхоз правленисенче ĕçлеççĕ. Колхозниксем хушшинче сайра хутра пулаççĕ. Парторг Алексейĕв йалпо пуçлăхĕ пулса ĕçлет, вăл таварсем турттарса килессипе ĕçленĕ пирки колхозниксем хушшинче политикăлă-массăлă ĕçе организацилемен. Алексейĕв йулташ комсомолĕцсемпе ĕçлеме шутламан, йалта миçе комсомолĕц пуррине те пелмест. Партире тăман активиссене те ĕçре пулăшса пыни çук. Ĕç çине çакăн пек пăхнă пирки ку парторганизаци йертсе пыракан колхозсенче политикăлă-массăлă ĕçе сарса йаман. Колхозниксем ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕн тырпул пухса кĕртесси çинчен йышăннă постановленине пĕлмеççĕ, вĕсене никам та ăнлантарман. Культработник Антонăв Иван культурăлă массăлă ĕçе уйра организацилес вырăнне, канцеларинче ĕççĕр антраса ларат. Уйа тухма хăракан культработниксем Йĕпреç районĕнче чылай. Райçутĕçпайĕнче ĕçлекенсем вулав çурчĕсен ĕçне йусас тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ. Вулав çурчĕсен пуçлăхĕсем мĕн туни çинчен парти райкомĕнче те, райçутĕçпайĕнче те пелме çук.

Парти райкомĕ комсомол организацине çителĕклĕ пулăшу паманха, çавăнпа та политикăна веренмелли 35 кружокран 11 решĕ анчах ĕçленĕ пекки тăваççĕ. Райкомолăн поли вĕренÿ пайĕн пуçлăхĕ Козлов пуçламĕш организацисене колхозниксем хушшинче политикăлă-массăлă ĕçе сарса йама нимĕнле пулăшу та памаст.

Хăшпĕр колхозсенче агитаци ĕçĕ йапăххăх мар, сăмахран „Çиçем" колхозра. Ку колхозра парти кандидачĕсен групни пур, кунта Симбирский Илйа, Симбирский Григорий агитатăрсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Анчах вĕсем хаçатсене вулавипех лăпланаççĕ. Колхозра ĕç нормине группăла сделцичинăпа тунă, çавăнпа та хăш колхозник малта пынине пĕлме çук.

Çак уравнилавкă пирки колхозниксем ыйту параççĕ, анчах коммунисcем ку ыйтусене политикăлă ыйту тесе шутламаççĕ пулмала, ответ памаççĕ. Колхоз ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтересси политикăлă ĕç, вĕсенчен пăрăнса кайма йурамаст.

А. Михайлăв.

Комсомол активĕн пухăвĕ

ШĂНКĂРТАМ. Ийулĕн 21-мĕшĕнче комсомол активĕн районри пухăвĕ пулса иртрĕ. Унта Ленинла Комсомол 20 çул тултарнине уйавласа иртерме хатĕрленесси çинчен сÿтсе йавреç.

Доклад тăрах тухса каласакансем комсомол пуçламĕш организацисем ПСÇЛКС Тĕпкомĕн V-мĕш пленумĕн йышăнăвĕсене начар пурнăçласа пыни çинчен каласа пачĕç. Çав тухнă хыççăн чылай пуçламĕш организацисенче политверенÿ ĕçне йапăхтарнă. Тутар—Сакăтра комсомол организаци пăчах саланса кайнă.

Кăçал ултă уйăх хушшинче 91 çамрăка комсомол ретне илнĕ. Çам ăксене комсомол ретне илес ĕç те çав тухнăранпа начарланни палăрат. 1938 çулăн малтанхи çурçулĕнче комсомол ретне 91 çын илнĕ пулсан, ийул уйăхĕнче мĕн пур те 2 çынна çеç илнĕ. Çак тĕслĕхсем комсомол пуçламĕш организацисем çав тухнă хыççăн воспитани ĕçне йапăхтарса йани çинчен калаççĕ.

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйланă вăхăтра хăйсен активлăхне кăтартнă çамрăксем районра сахал мар. Çав çамрăксем хал уйхир ĕçĕсенче стахановла ĕçлесе паха тĕслĕхсем кăтартса параççĕ. „Майак" колхозра вунтăхăр çулхи колхозницăсем Тагире Сабирулина тата Минегел Абайдуллина йулташсем кĕлте çыхса кулленхи ĕç нормине 400 процент ытла тултарса пыраççĕ. Вĕсем 400 кĕлте вырăнне кашни куллен 1500—1600 кĕлте çыхса пыраççĕ. Анчах вĕсем пек малта пыракан çамрăк колхозницăсене комсомол ретне илес тĕлĕшпе комсомол организацисем çителĕксĕр ĕçлесе пыраççĕ-ха.

Çавăн пекех ĕçре палăртнă комсомолĕцсене парти ретне куçарасси те питĕ начар. Иртнĕ çултанпа та 6 комсомолĕца кăна парти ретне пана.

Комсомол активĕн районри пухăвĕ Ленинла комсомолăн 20 çулхи йубилейне хатĕрлĕнес йенепе тумали ĕçсене палăртса хăварчĕ.

М. Митрофанăв.

Хирти агитатăрсем

„Хунав" колхозăн анлăн сарăлса выртакан уйхирĕнче хĕрÿлĕ ĕç пырат. Пур колхозниксем те пиçсе çитнĕ тырра срукра, пĕр тăкаксăр пухса кĕртесшĕн тăрăшаççĕ.

Карамаликăв Тихăн бригадинче ĕçлекен колхозниксем ăмăр ура мала тухас, пайан вырса çыхса пĕтересех тесе, хĕрÿллĕн ĕçлереç. Теплакина Марийă йулашки 903 мĕш кĕлтине хыпаланса çыхрĕ. Никитина Агафийа та 765 мĕш кĕлтине Теплакинăпа пĕрлех çыхса пĕтерчĕ. Агитатăр Владимирăв та çыхса пĕтернисем канма ларнине курса, калаçу тумаллине аса илсе, йулашки кĕлтене васкасах çыхрĕ. Калаçу пуçланчĕ.

Колхозниксем пурте çывăхарах ларма тăрăшаççĕ. Владимирăв хăйĕн калаçăвĕнче йулашки хаçатсем тăрăх, РСФСР Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çессин ĕçĕсем çинчен, „Ĕçйалкорсене йертсе пымала" статйа тăрăх колхозра йалкорсен шутне ÿстересси тата бригадăра пайанхи çитĕнÿсемпе çитменлĕхсем çинчен кĕскен ăнлантарса каласа пачĕ.

— Епĕр пайан бригадăпа бригадă хушшинчи ăмăртура мала тухрăмăр. 3-мĕш, 1-мĕш бригадăсем те тепĕр сехетрен вырса пĕтереççĕ. 203 гектара планпа 6 кун хушшинче вырса пĕтермеле пулнă пулсан, 4 кун çурă хушшинче вырса пĕтеретпĕр. „Ким" тата „Крупскайа" колхозра авăн çапса государствăна тыră пама тытăннă, пирĕн те çав колхозсенчен йулас пулмаст.

Владимирăв—çамрăк агитатăр, вăл ССРС Верховнăй Советне суйлама хатĕрленнĕ вăхăтра районти 10 кунлăх курс пĕтерсе тухнă хыççăн, ĕçлеме тытăннă. Ана йал совет председателĕ, Чăваш АССР Верховнăй Совет депутачĕ Смирнов йулташ ĕçре пулăшса пырат. „Хунав" колхозра ун пек агитатăр Казначейĕва Таисийа пур. Вĕсем хăйсен ĕçĕсене план тăрăх, кашни кун туса пыраççĕ.

Владимирăвпа Казначейĕвăн 5 кунхи ĕçне пăхса тухсан, çакна курма пулат. Ийулĕн 14-мĕшĕнче тыră вырма тухиччен, пур бригадăсенче те канашлусем туса, кам ăçта ĕçлемелине, кашни ĕçшĕн кам мĕнчухлĕ илме пултарнине каласа панă. Ку агитатăрсем 5 кун хушшинче 43 калаçу туса ирттернĕ, вăл калаçусенче 4396 çын пулнă. Испанири тата Китайри ĕçхалăхĕсем фашиссен пусмăрĕнчен тухассишĕн мĕнле кĕрешни çинчен 15 калаçу, РСФСР пĕрремĕш çессийĕ çинчен 8 калаçу, Виççĕмĕш Пилеккуллăх Зайомĕн пĕрремĕш кăларăмĕ çинчен 4 калаçу, тырпула кĕске срукра, пĕр тăкаксăр пухса кĕртес ыйтупа 12 калаçу, Совет Сойузĕн паллă геройĕсем çинчен 4 калаçу туса ирттернĕ. Кашни кунах колхозăн стена хаçачĕ тухса пынă, мĕн пурĕ 6 номĕр кăларнă, бригадăри стена хаçачĕсем 10 тухнă. Кашни кун производствăлă канашлусем туса пĕр кунхи ĕçсене колхозниксене пĕлтерсе пынă. Кашни кун хăш бригадă мĕнле ĕçленине, паллă стахановĕцсене палăртса пынă.

Кашни звенори вулавçăсем хаçат вуласа пынă.

„Хунав" колхоз иртнĕ çулсенче кайа йулса пыратчĕ. Халĕхи вăхăтра районта малта пыракан колхозсенчен пĕри пулса тăчĕ.

А. Романăв.

Чăваш АССР Верховнăй Совет депутатне П. Е. Йефремăва партине илнĕ

Иртнĕ кунсенче ПСК(б)П Чăваш Обком бÿровĕ Трак районĕнчи парти пухăвĕ П. Е. Йефремăв йулташа парти ретне илме йышăннă решенине çирĕплетрĕ.

П. Е. Йефремăв йулташ 1914 çулта Трак районĕнчи Йанмурзина йалĕнче çуралнă. 1937 çулта комсомол ретне кĕнĕ. Çакăн хыççăн вăл хăйĕн политикăла пĕлĕвне ÿстерес тĕлĕшпе нумай вĕреннĕ. Обшчествăлă ĕçсенче активлă ĕçленĕ. Иртнĕ çултанпа комсомол комитет секретарĕн заместителĕ пулса ĕçлет. ССРС Верховнăй Советне суйланă вăхăтра участкăри суйлав комиссин председателĕн заместителĕ пулса ĕçленĕ.

Йефремăв йулташ халĕ колхоз производствинче те, обшчествăлă ĕçре те активлă ĕçлет. 1936 çултанпа колхозра бригадир. 1936 çулта унăн бригади пĕр гектартан вăтампа 18 центнĕр, 1937 çулта—23 центнĕр тĕштырă туса илнĕ.

Çакăн пек лайăх ĕçлевĕ хыççăн, колхозниксем ăна колхоз председателне суйласа лартнă. Вăл колхоз председателĕнче те хăйĕн пултарулăхне кăтартнă. Унăн колхозĕ Трак районĕнче малти вырăна йышăнат.

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйланă вăхăтра Йефремăв йулташа пĕр сасăпа Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутатне суйлама кандидата тăратнă, уншăн сасăланă. Халĕ Йефремăв йулташ Чăваш АССР Верховнăй Совет депутачĕ. Пайан вăл Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çессинче, государствăн хисеплĕ те ответлă ĕçĕсене тунă çĕрте.

Партин II-мĕш сйесĕн ĕçĕсене кăтартакан выставкă

Партин II-мĕш сйесĕ иртни 35 çул тултарнă йатпа Канаш районĕнчи пур пуçламĕш парторганизацисенче те пухусем пулса иртеççĕ. Районри парткабинет август уйăхĕнче партин II-мĕш сйесĕн ыйтăвĕсемпе семинар иртерме хатĕрленет. Парти кабинетĕнче партин II-мĕш сйесĕн ĕçĕсем çинчен çырнă Ленин тата Сталин произведенийĕсенчен, диаграммăсемпе плакатсенчен выставка организациленĕ.

Хаçатсене пăхса тухни выранне

Активпа куллен ĕçлемеле

Районти хаçатсен апрел, май, ийун уйăхĕсенчи комплекчĕсене—РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кампанийĕ пынă вăхăтри номерсене пăхса тухсан, вĕсенче агитатăрсен, пропагандиссен, вата суйлавçăсен, колхоз председателĕсемпе бригадирсен çырăвĕсене кашни номертех тупса вулама пулат. Суйлав вăхăтĕнче агрономсен, учителсен, врачсен статйисемпе заметкисем те районри хаçатсен страницисенче хăйсене тивĕçлĕ вырăна йышăнчĕç. Хаçатсем çак пысăк вăй çине тайанса та ĕнтĕ суйлав умĕнхи агитацилĕ ĕçе анлăн сарса пычĕç. Çапла, „Социалисăмшăн" (Канаш р.), „Социалисăм çулĕпе" (Вăрнар р.), „Колхозник йулташĕ" (Йетĕрне р.) хаçатсем суйлав кампани вăхăтĕнче хăйсем чăнахах та массăлă, ĕçсыннисен сарлака массине пăч-т ĕçне илăн хутшăнтарма пултаракан хаçатсем пулнине кăтартрĕç. Пĕр „Социалисăм çулĕпе" хаçатра çеç апрел, май, ийун уйăхĕсенче колхоз председателĕсен, агитатăрсен заметкисемпе статйисем 30 ичетленсе тухнă. Ку вăл—хаçатсем хăйсен автарĕсен йышне агитаципе пропагандă ĕçĕнчи лайăх ĕçлекен йулташсене хăйуллăн хутшăнтарнин резултачĕ.

Суйлав кампани иртрĕ. Анчах ĕçхалăхĕн политикăлă пĕлÿ илес, тĕнчери лару-тăру çинчен, Совет Сойузĕнчи социалисăмăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕсем çинчен докладсем, кулленех политикăлă информаци илтес интерес тата кăмăл çаплах йулчĕ, вăл ÿснĕ-çемĕн ÿссе пырат. Халĕ, уйхирте хĕрÿллĕ ĕç пынă вăхатра, хаçатсен агитатăрсемпе пропагандиссене массăлă политикăлă ĕçе анлăн сарма чĕнмеле. Çак ĕç çине сийĕлтен пăхакансене, ăна организацилеме ÿркенекенсене хăйуллăн критиклемеле. Лайăх докладчиксен, лектăрсен, вулавçăсен ĕçĕсене çутатмала. Анчах çакна районти хаçатсен страницисенче курма çук. Суйлав кампани вăхăтĕнче оперативлă ĕçленĕ хаçатсем те—„Колхозник йулташĕ", „Социалисăм çулĕпе", „Социалисăмшăн", „Октабер йалавĕ", „Коммунар" хаçатсем те—йулашки вăхăтра политикăлă агитаци ĕçĕ çине тимлĕн пăхмаççĕ. Вĕсĕн страницисенче суйлав кампани вăхăтĕнче активлă хутшăнса ĕçленĕ йулташсен статйисемпе заметкисене сайра хутра çеç куратăн. Ку ĕнтĕ хаçатсем суйлав вăхăтĕнче ÿссе çитĕннĕ актива çирĕплетессишĕн тăрăшманнине уççăнах кăтартса парат.

Суйлав кампани вăхăтĕнче пирĕн организацисем халăх ĕçĕшĕн мĕнле тăрăшмаллине нумай веренчĕç. Ăна малалла та вăйлатса пымала. Халăхшăн лайăх тăрăшса ĕçлекен учрежденисен, организацисен, йалсоветсен, колхоз правленисен, секцисен ĕçĕсене кăтартмала, бюрократисăма, волокитăна, ĕçсыннисен кулленхи ыйтăвĕсем çине чиновникла пăхакансене хирĕç хыта кĕрешмеле. Анчах та темĕншĕн хăшпĕр хаçатсенче çав ыйтусене кампанийĕ çутатаççĕ, куллен çутатса пымаççĕ. Йулашки вăхăтра хаçатсен страницисенче районти учрежденисемпе организацисем, йалсовечĕсем, колхоз правленисем ĕççыннисен ыйтăвĕсене мĕнле татса пани çинчен çырнисем пачах курăнми пулчĕç. Сăмахран, Парти Тĕпкомĕпе ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ колхозниксене колхозран кăларма чарасси çинчен йышăннă постановленине пурнăçа кĕртесси районсенче мĕнле пулса пыни çинчен пачах çырмаççĕ. Редакци сотрудникĕсем, ĕçйалкорсем районти çĕреç пайне, финанс пайне, çутĕç пайне кĕрсе пăхсан, унта ĕççыннисен сăккунлă прависемшĕн тăмали материалсем чылай тупаççĕ.

Халăх депутачĕсем вырăнсенче государствăн пысăк ĕçĕсене тăваççĕ. ССРС Верховнăй Совечĕн депутачĕсем Цыганова, Моиççейĕва йулташсем хăйсене суйлакансенчен çырусем нумай илеççĕ. Хаçатсен обйазанноçĕ: халăх суйланă депутатсен ĕçне куллен çутатасси, депутатсене суйлавçăсемпе тачă çыхăну тытма пулăшасси пулат.

Пĕтĕм Сойузри чукунçулсем çинче ĕçлекенсен кунĕ умĕн

Лайăх опытсене сарма тăрăшмаççĕ

КАНАШ. (Хамăр корр.). Пĕтĕм Сойузри чукунçул транспортĕнче ĕçлекенсен кунне хатĕрленнĕ май вакунсем йусакан савăтри рабочисем тата тимлерех, тата лайăхрах ĕçлеме пуçларĕç. Кашни цехра тенĕ пекех уйрăм стахановĕцсем çĕнĕ çĕнтерÿсем тăваççĕ. Ийулĕн 20, 21, 22 мĕшĕсенче урапа цехĕнчи прессовшчик-стахановĕц Романăв йулташ нормăна 200 ытла процент, Новодацки йулташ 335 процент тултарчĕç. Каскалакан цехри стахановĕцсем: Смирнова—230 процент, Терйайĕва—345 процент, механически цехри стахановĕцсем Рактейĕвпа Мăкарăв йулташсем 300—221 процент тултарса ĕçлеççĕ.

Çакăн пек паха тĕслĕх кăтартакансем кашни цехрах пур. Анчах партипе профсойуз организацийĕсем вĕсен ĕçри ырă опытне ытти рабочисем хушшинче сарса пырасшăн, пĕтĕм бригадăна, цеха, сменăна стахановла ĕçлекен тăвасшăн начар ĕçлеççĕ. Производствăлă канашлусенче лайăх стахановĕцсен опычĕсем çинчен сахал калаççĕ. Ку тĕлĕшпе „кăтарту хăмисем" те ĕçлемеççĕ.

Профсойуз тата парти организацийĕсем пĕтĕм Сойузри чукунçул çинче ĕçлекенсен кунне хатĕрленес тĕлĕшпе цехсенче митинг ем туса иртерниипех ĕç пулчĕ, тесе шутлаççĕ. Вĕсем конкретлă йертсе пыни, пулăшни курăнмаст.

Савăтра тĕрлĕрен кружоксем организациленĕ. Рабочисем вăл кружоксене пысăк хаваслăхпа çÿреççĕ. Уйрăмăнах хор кружокĕ аван ĕçлет. Çапла пулин те вĕсене ĕçлеме условисем туса паман, занятисем иртерме клуба кĕртмеççĕ. Çак тĕслĕх те профсойуз организацийĕ йапăх ĕçленине уççăнах кăтартса парат.

М. Титов.

Майор Лин Син

Китай лотчикĕ çырнисем*)

III. Фронтра

Формоза утравĕ çине тапăннă хыççăн икĕ кунран пирĕн авиацин командованийĕ: фронтри малти чăсссем чакма пуçланă, тесе пĕлтернине илчĕ. Йапонĕцсем центрти фронта çар техникине нумай илсе пынă, вĕсем хĕснине пула пирĕн пехотă чакма пуçланă. Пехотăна пулăшма авиацийĕ йама шут тунă. Февралĕн çирĕм пиллĕкмĕшĕнче тул çутти килсенех тăхăр бомбардировшчик вĕçсе тухрĕç, Йанцзы шывĕ тăрăх çул тытрĕç. Епĕ малти самолот çинче вĕçрĕм. Анцин хули патĕнче епĕр йапонĕцсен сакăр истребителне тĕл пултăмăр. Вĕсем шыв çулне сыхласа патрулре тăнă.

Епĕ çула улăштарса, сылтăма пăрăнма шут тытрăм. Анчах истребителсем пирĕн самолотсене асăрхарĕç те пирĕн çине пыма пуçларĕç. Анчах епĕр инçере пултăмăр, истребителсем пире хуса çитме пултараймарĕç.

Епĕр сăртсем çийĕнче çавăрăнса вĕçсе çÿрерĕмĕр, истребителсем инçетерех кайасса кĕтрĕмĕр, вара каллех хамăрăн каймалли çĕре çул тытрăмăр. Йапонĕцсен малти линийĕсем патне çитме тата хĕрĕх километр йулнă. Епĕр йухăншыв патне вĕçсе тухсанах, пире хирĕç каллех йапонĕцсен çичĕ истребителĕ çĕмĕрттерсе пыма тытăнчĕç. Вĕсем пирĕн çине атакă тума пуçларĕç. Анчах пирĕн лотчиксем пĕрле вĕçме пит ăста. Ăна çапла ăнлантарса пама пулат: епĕр пурте пĕрле, пĕр пĕрипе çывăхра, кĕске дистанцире вĕçетпĕр. Строй çавăн пек чухне истребителсем атакă тумаççĕ. Çапах та, Йапони лотчикĕсем пирĕн çула картлама хăтланса пăхрĕç. Епĕр пĕр самантрах йапонĕцсен пĕр истребителне персе ÿкертĕмĕр,—хамăр сăртсем çине вĕçсе кайрăмăр. Йапони лотчикĕсем пире, вĕсенчен хăрарĕç терĕç пулмала-ха хăйсен аеродромĕ çине таврăнчĕç. Епĕр каллех сăртсем çийĕнче вĕçсе çÿрерĕмĕр, кăшт тăхтасан тепĕр хут Уху хули патнеле çул тытрăмăр. Йапони истребителĕсем ĕнтĕ çук,—епĕр вĕсене улталарăмăр.

Пирĕн самолотсем хула патне, фронт линийĕ патне çывхарсассăн, тепĕр чи малтан пушарсен çутисене куртăмăр. Йалсем, уйсем, вăрмансем, кĕперсем çунаççĕ. Çапăçусем хăш тĕлте пынине тÿрех пĕлме пулатчĕ. Епĕр хамăр пĕлекен паллăсем тăрăх пирĕн чăссем хăш тĕлте тăнине пĕлтĕмĕр. Инçетре Йапони пехоти курăнатчĕ. Епĕр звеносене уйăрлатăмăр та бомбăсем пăрахма хатĕрлентĕмĕр. Чи малтан епĕр 1.800 метр çÿлĕшне антăмăр. Епĕ командă патăм: бомбить! Бомбардировшчиксем фронт линийĕ тăрăх бомбăсем пăрахма пуçларĕç, пысăк ишĕлтерÿсем турĕç тата йапонĕцсен çар чăсĕсене йеркерен кăларчĕç.

Çав вăхăтра йапонĕцсен хула çывăхĕнче тăракан крейсĕрĕсем çинчен тÿпенеле пеме пуçларĕç. Снарйадсем пирĕн самолотсенчен инçе те мар çурăлаççĕ. Çавăнпа пĕр звено бомбардировшчиксен фронтран каймала та карапсем çине тапăнмала, тесе шут турăмăр. Тепĕр темиçе минутранах епĕ крейсĕр çинче пысăк пушар тухнине куртăм. Радистсем: пирĕн бомбăсем карапăн центрти пайне лекнĕ те унта пушар тухнă, тесе пĕлтерчĕç. Ытти крейсĕрсем, тÿпенеле перекен орудисенчен пеме чарăнмасăр, хула патĕнчен кайма пуçларĕç. Ун хыççăн звено каллех пирĕннипе пĕрлешрĕ, вара епĕр пурте нимĕн çухатмасăр, нимĕнле сийен курмасăр Нанчанри аэродром çине таврăнтăмăр.

Каç пулнă тĕле епĕр фронта бомбăсем пăрахни пит лайăх резултатсем пани çинчен пĕлтерни не илтĕмĕр. Йапони çарĕсем чакнă. Китайăн пехотă чăсĕсенче пысăк çĕкленÿ пулнă—вĕсем атакă тунă та çав кунхинех Уху хули патĕнче стратегилĕ темиçе пункта йышăнса илнĕ. Йапони пехотин çухату пысăк пулнă. Йапони крейсĕрне, бомбăсем пăрахса, пĕтĕмпех стройран кăларнă. Ытти карапсем пурте Уху хулинчен тухнă та Нанкин патнеле кайнă.

Епĕр фронтран пире саламласа тавтунине илтĕмĕр.

IV. Гуандене кайнă чухне

Епĕр тулçутипе аеродром çине кайнă чухне, лотчиксем шÿт тăваççĕ, пĕр-пĕрне тăрăхлаççĕ йе çинталăк çинчен калаçаççĕ. Ку хутра та çавăн пекех пулчĕ. Епĕр аеродром çине килаттăмăр, çÿлеле пăхкаласа пыраттăмăр: çанталăкĕ савăнтарса хĕпĕртеттермелискер марччĕ, пĕлĕтсем капланса килетчĕç.

— Паллах ĕнтĕ, çăмăр пулат,—терĕ йаланхи пекех кулса пирĕн хăвăрăн лотчик Ван Ши-зо,—анчах епĕр çапах та йапонĕцсене бомбăсемпе тустаратпăр!

Епĕр самолотсем патне çитрĕмĕр. Отрйадсен командирĕсем лотчиксене каларĕç:

— Машинсем патĕнчех пулса распорйаженисем кĕтĕр, самолотсене тĕрĕслесе пăхăр!

Тавра курăмра хĕвелĕн сарă çавраки курăнчĕ, пĕлĕтсем çÿлерех кайма пуçларĕç. Отрйадсен командирĕсем кашни лотчик патне пырса заданисем пачĕç, кайас вĕçевĕн хĕлвевне ăнлантарчĕç.

Пирĕн йапонĕцсен Гуандери аеродромĕ çине тапăнса бомбăсемпе тустармалаччĕ.

— Епĕ малтан вĕçсе хăпаратăп...

Есĕр ман хыççăн,—тесе хăйсен ăнлантарăвне вĕçлерĕç отрйадсен командирĕсем.

Вĕçсе хăпарсан епĕр сывлăшра пурте пĕр тĕле пухăнтăмăр, звеносене йĕркелентĕмĕр те хамăрăн каймалли çĕре çул тытрăмăр. Чăсах çăмăр пĕлĕчĕсем хушшине лекрĕмĕр. Командир çÿлеле вĕçсе хăпарчĕ: унта, çÿлте,—таса пĕлĕт тата хĕвел хĕртсе пăхат.

Приборсем тăрăх вĕçсе пыратпăр. Пĕр сехет тепĕр сехет те иртет, штурмăн шутласа пынă тăрăх епĕр ĕнтĕ йапонĕцсен аэродромĕ çинче пулмала. Анчах пирĕн айра çăмăр пĕлĕчĕсем, командир пĕлĕтсем айне вĕçсе кайма ирек памаст. Çакăн пек епĕр тата вунпилĕк минут хушши вĕçсе пытамăр. Командир килĕсе тухнă лару-тăру çинчен шухăшлат пулмала. Халех ĕнтĕ вăл решени йышăнат.

Чăн та часах командир паллă пачĕ:

— Айалала анатпăр!

Пĕлĕтсем витĕр айалала вĕçсе анма пуçларăмăр, çĕр çийĕпе айалтан вĕçсе пыратпăр, анчах аеродром курăнмаст. Епĕр сулахайалла пăрăнса вĕçсе кайнă пулмала. Мĕн чухлĕ айаккала вĕçсе кайнине штурмăн хăвăрт шутласа кăларчĕ те епĕр каллех хамăрăн каймалли çĕрелле вĕçсе çитрĕмĕр. Хула курăнтăмăр, çакăнта хула айккинче йапонĕцсен аеродромĕ вырнаçнă. Бомбардировшчиксем хула хĕрри тĕлĕнче çавăрăнса вĕçме пуçларĕç.

Айакран йапонĕцсен истребителĕсем васкасах курăнчĕ, анчах вĕсем пирĕншĕн хăрушă мар, вĕсем пирĕн пата çывхарма та хăраççĕ.

Акă ĕнтĕ аеродром патне кайас çул çинче—Гуанде хули патĕнче командир виçĕ пит пысăк чукунçул составне курнă. Епĕр айаларах антăмăр та куртăмăр—икĕ составĕнче цистернăсем иккен,—унта горючи пулмала, виççĕмĕшĕ—вăрçă хатĕрĕсем турттарса кайат. Командир çав составсене тĕп тума приказ пачĕ.

Епĕр çавăрăнтăмăр та çав составсем тĕлĕнеле çул тытрăмăр. Штурмансем бомбăсем пăрахма тĕллерĕç. Йапонĕцсен тÿпенеле перекен пулемечĕсем пирĕн самолотсем çине епĕр айалалла бомбăсем пăрахсан тин, чукунçул составĕсене тĕтĕм тата çулăм хупласа илсен тин пеме пуçларĕç. Бомбăсемпе пит тĕл пенĕ. Командир тата тепĕр çаврăм туса вĕçрĕ, епĕр ун хыççăн пырăмăр, горючи тултарнă цистернăсем тата вăрçă хатĕрĕсем тийенĕ вакунсем сиксе-сиксе кайса çунса пĕтнине куртăмăр. Çавăн хыççăн командир, малтан самолот çунаттисене силлентерсе, çăмăр пĕлĕчĕсем хушшине кĕрсе кайрĕ. Самолот çунаттисене силлентерни вăл—пире паллă пани пулчĕ:

— Каялла кайатпăр!

Нанчанри аеродром çинче, унта епĕр нимĕн çухатмасăр таврăнтăмăр, командир пире пуçтарчĕ те каларĕ:

— Йапони вăрă-хурахĕсем асра тытчăр:—Китай лотчикĕсен пĕр вĕçевĕ те ахаль çухалмаст. Гуандери аеродрома тĕтре хупласа тăчĕ, анчах епĕр унта таврăнăпăр ха...

— Тĕрĕс,—терĕмĕр епĕр. Çапла каларăмăр та тата тепĕр хут вĕçме хатĕрленсе машинăсем чухне бомбăсем çакса хума кайрăмăр.

(Китай чĕлхинчен куçарнă).

(Епĕр „Правда" хаçатран куçарса пичетлетпĕр).

---

*) Пуçламăшне „Чăваш Коммунĕн" 167 тата 169-мĕш номĕрĕсенче вулăр.

Испанири фронтсенче

Ийулĕн 23-мĕшĕнче Левант фронтĕнче, Барракасран кантăр йенчи районра республиканецсем тăшмана кайала хăваласа йанă. Тăшман нумай тăкаксем тÿссе, кайала чакнă.

Центрти фронтра интервентсем пĕтĕм Естремадура участки тăрăх наступлени тăвассĕ. Тăшман Гвадиана йатлă пĕчĕк йуханшыв урлă каçма пултарнă.

Ийулĕн 23-мĕшĕнче, Левант фронтĕнче пулнă сывлăшри çапăçура республиканецсем, хăйсенне виçĕ самольот çухатса, Италин 8 самольотне персе антарнă.

Çав кунах Итали самольочĕ центрти фронтри аеродромсенчен пĕрин çине анса ларнă. Итали льотчикĕ хăй ирĕкĕпе республиканецсен йенне куçнă. (ТАСС).

Германи Испанине çынна вĕлерекен газсем илсе пырать

Республикăлă Испанин йутçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Альварес дель Вайо Англи корреспондентне çапла пĕлтернĕ: Германи вăлхавçăсем йышăнса илнĕ территорине çынна вĕлермели газсем нумай илсе пырать. Вăл газсем Испанипе Франци чиккин тăрăхĕнче газсем усрамали йатарласа тунă складсенче усранассĕ. Германи ку газсем усрамали складсене Германипе Франци хушшинче вăрçă тухас-мĕн пулсан французсене хирĕç усă курма тунă. (ТАСС).

Йапонецсем тунă тискер ĕçсен списокĕ

Ханькоура пичетлесе кăларнă официаллă пĕлтерÿсем тăрăх, 1937 çулхи ийульрен пуçласа 1938 çулхи ийунь вĕçне çитичченхи вăхатра Йапони самольочĕсем Китайăн мирлĕ хулисем çине 2472 хутчен пырса тапăннă. Вĕсем 33 пин бомба ытла пăрахнă. Тулли мар сведенисем тăрăх 16.532 çын вĕлернĕ, 21.752 çынна амантнă. Йапонецсем пуринчен нумайрах Гуандун провинци çине бомбăсем пăрахнă, унти 44 уйезд çине самольотсем 903 хут тапăннă, 4.845 çынна вĕлернĕ. 8901 çынна амантнă; пурĕ 11.801 бомба пăрахнă. (ТАСС).

Льотчиксем валли радиотелефон

Англи пичечĕ пĕлтернĕ тăрăх, Вашингтонра (Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсем) льотчиксем валли тунă „калаçакан çухави" йатлă çекретлă изобретенишĕн патент панă. Пилотăн майĕ çинче вырнаçнă çак „калаçакан çухави" пилота алăсене самольота тытса пыракан рульсенчен илмесĕрех радиотелефон урлă çĕрпе тата ытти самольотсемпе çыхăнма май парать.

Льотчикăн карланки çумне хытă çыпçăнса тăракан микрофон-çухави льотчикăн сассине тытса унран радиокумсем тăвать. Вăл хумсене çĕр çинче йе урăх самольот çинче илеççĕ.

Çĕнĕ микрофон çар самольочĕсен стандартлă оборудованине кĕнĕ. (ТАСС).

Финльанди карапĕсем совет чиккине пăсни

1938 çулхи ийулĕн 19-мĕшĕнче Финльандин „Аиристо" йатлă гидрографи карапĕ тата чикĕ хуралĕнче тăракан „АВ 55" катерĕ Финский заливра совет тинĕс чиккине пăснă, совет территори шывĕ çине пĕр миль çурă шалала кĕнĕ.

Совет Сойузĕн чикĕри хуралĕ вĕсене иккĕшне те тытса чарнă. Ĕçе тĕреслеççĕ. (ТАСС).

Мирлĕ пурнăçа сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен пĕтĕм тĕнчери конференци

Ийулĕн 23-мĕшĕнче Парижра мирлĕ пурнăçа сыхлас тĕлĕшпе тата мирлĕ хуласем çине бомбăсем пăрахнине хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе ĕçлекен пĕтĕм тĕнчери конференци уçăлнă, ăна миршĕн пыракан пĕтĕм тĕнчери йухăм руководстви организацилленĕ. Конференцине пин делегат ытла пынă, вĕсем—30 çĕршывăн представителĕсем.

Францири пĕтĕмĕшлĕ ĕç конфедерацин генераль ăй çекретарĕ Леон Жуо тухса каласса, хăй сăмахĕнче çапла калана: „Фашисла заговорщиксене тата урăх çĕршывсен интервенчĕсене хирĕç пыракан кĕрешÿре Испанипе Китай çĕнтерсе тухни кирлĕ. Çапла майпа кăна мирлĕ пурнăçа сыхласа хăварма пулать".

Испани парламенчĕн представителĕ Мартинес Баррио хăй сăмахĕнче çакна паллă туса хăварнă: февраль уйăхĕнчен пуçласа Испани правителстви тăшманăн тылне хирĕç сывлăшри операцисем пĕрре те тутарман, çав вăхăтрах республикă хулисем çине фашиссем кунне 4—5 шер хут пырса бомбăсем пăрахассĕ.

Англи депутатки Саммерскил сывлăшран бомбăсем пăрахнин тискерлĕхĕсем çинчен каласа панă, ăна вăл Испанире хăй курнă.

Унтан Францири коммунисла парти тĕпкомĕн çекретарĕ Жак Дÿкло тухса каласнă. „Айăплисем, —тенĕ вăл,—агрессăрсем кăна мар. Хăйсен хăравçăлăхĕпе, çемçешкелĕхĕпе агрессăрсене пулăшакансем те айăплă". Дÿкло хĕçпăшалсем туйанас правана Испанийе çĕнĕрен пама ыйтать. (ТАСС).

Мирлĕ пурнăçа сыхлакансен пĕтĕм тĕнчери конференцийĕ йышăннă решенисем

Мирлĕ пурнăçа сыхлас тĕлĕшпе ийулĕн 23-мĕшпе 24-мĕшĕнче Парижре пулса иртнĕ пĕтĕм тĕнчери конференци хăйĕн ĕçне пĕтернĕ.

„Конференци демократилĕ державăсене, вăхăт пур чухне, мирлĕ пурнăçа сыхлама тата çавна пула хăйсен хăрушсăрлăхне çирĕплетме чĕнет" тенĕ резольуцире. Хăшпĕр державăсем фашисла захватчиксене ирĕк панине палăртса, конференци вăрă-хурахла вăрçăсене пĕтерме демократилĕ çĕршывсен пур кирлĕ майсем те пур, тесе пĕлтерет. Çакна тума конференци агрессăрсемпе суту-илÿ тума пăрахма ыйтать. (ТАСС).

Англипе Франци Чехословаки правителствине хĕсеççĕ

Германи ыйтнипе Англипе Франци правителствисем Чехословакине вăйлăнрах хĕсме пуçланă, вĕсем унран Гитлер агентурине—Генлейн партине пысăкран пысăкрах уступкăсем пама ыйтаççĕ.

„Национальнăçсен кодексĕн" пройектне, Чехословаки парламентĕнче пăхса тухма лартмала та пулнăскере, малтан тата тепĕр хут Генлейн партин представителĕсемпе пĕрле сÿтсе-йаваççĕ. Ку тĕлĕшпе калаçусем ийулĕн 26-мĕш хыççăн пуçланаççĕ. Кунта Англи правителстви Чехословаки правителствине, Генлейн партийĕ „национальнăçсен кодексĕн" пройектне йышăнмасан та унпа çыхăнусене татма кирлĕ мар, тесе „сĕнÿ" панă.

Англипе Франци Чехословакине хĕссе генлейнăвĕçсене тата ытти уступкăсем те партарнă. Çапла, сăмахран, Чехословаки правителстви, республикăшăн хăрушлăх тухса тăнă май, хăйне чрезвычайлă полномочисем пама ыйтнă, халь вăл ăна ыйтма парахнă. Ийулĕн 23-мĕшĕнче шалти ĕçсен министерстви Судет облăçĕнчи пĕтĕм вырăнти самоуправлени мерĕсене (хула пуçлăхĕсене) васкавлăн çирĕплетнĕ, вĕсенче пуринчен ытла генлейнăвĕçсем тăраççĕ.

Малала Англи Генлейн партин представителĕсене Чехословаки правителствине кĕртме ыйтать.

Англипе Франци хĕснипе Чехословаки правителстви генлейнăвĕçсене уступкăсем туни халăхăн анлă массисем хушшинчи тревогăна, канăçсăрлăха ытларан ытларах ÿстерсе пырать. Англи Чехословакин шалти ĕçĕсене çапла тивĕççĕр хутшăннипе тата правителствă кайала чакса пынипе кăмăлсăр пулнине кăтартса парать Чехословаки пичечĕ. Чехсен „Пограничник" хаçачĕ çапла çырать: „Германине кăмăл тăвас шутпа пирĕн çумма фашисла йĕркесем ан çыпăçтарччăр. Ниушлĕ Франципе Англи çакна ăнланмаççĕ: Англи тĕкнипе епĕр Германи фашисăмне паракан уступкăсем Англишĕн хăйшĕнех синенлĕ пулĕç".

Франци пичечĕ пĕлтернĕ тăрăх, Германи Чехословаки ыйтуне сÿтсе-йавма Англи, Франци, Германи тата Итали конференцине пухма ыйтнă. Германи фашисĕсем Чехословаки çинчен тăракан ыйтăва Чехословакисĕр сÿтсе-йавасшăн. (ТАСС).

Агрессăрсене çĕнĕрен ирĕк панă

Дани столицинче—Копенгагенра—Швецири, Норвегири, Данири, Финльандири, Бельгири, Голландири тата Льуксембургри йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен конференцийĕ пулса иртнĕ. Министрсем çав çĕршывсем Лигă наци уставĕн 16 мĕш статйи çине мĕнле пăхмалине сÿтсе-йавнă. Çав статйа Лигă наци членĕсене агрессăрсене хирĕç пĕрлешсе кĕрешмели (санкцисем йышăнмали) çинчен калать. Пичетре пулнă пĕлтерÿре министрсем çав пĕрлешсе кĕрешес ĕçе хутшăнасси весемшĕн обйазателлă мар, тесе шутлаççĕ. Лигă нацинче членра тăракан ытти государствăсем те санкцисем йышăнас ĕçе хутшăнмала мар, тесе шутлаççĕ вĕсем.

Конференци решенисем пĕтĕмĕшпех агрессăрсен интересĕсене, пуринчен малтан Германипе Итали фашисăмĕн интересĕсене майлă пыраççĕ. Халиччен кирек мĕнле государствă та вăл вăрçă пуçласшăн пулсан, унăн ăна хирĕç пысăк державăсен ушкăнĕ тухасран хăрамала пулнă. Лигă наци членĕсем вăрçă пуçаракансене хирĕç пĕрлешсе кĕрешессине пăрахас тăвасçĕ пулсан, агрессăрсем вĕсене нимĕнле наказани те пулас çуккине малтанах шанса тăрĕç.

Фашисла çĕршывсем Совет Сойузĕ çине вăрçăпа тапăнма хатĕрленеççĕ. Копенгагенри конференци решенийĕ ем фашисла агрессăрсен вăрă-хурахла планĕсене пурнăçа кĕртме ирĕк пара ççĕ. Франципе тухса тăракан хаçатсенчен нумайăшĕсем çакăн çинчен паллă тăваççĕ. (ТАСС).

Пирĕн календар

В. Г. Короленко

Пайан, ийулĕн 27-мĕшĕнче, вырăссен талантлă писателĕ, илемлĕ литературăн пысăк маçтăрĕ Владимир Галактионăвич Короленко çурални 85 çул тултарать.

В. Г. Короленко уйесри сутйе ывăлĕ пулнă. Гимнази пĕтерсе тухнă хыççăн, вăл Петербургри технологи институтĕнче, унтан Мускаври йалхуçалăх академинче вĕреннĕ. Вĕреннĕ чухнех патша влаçне хирĕç кĕрешекен студентсен йухăмне активлăн хутшăннă. Тĕрлĕрен прокламацисем пичетлекен вăрттăн типографи организациленĕшĕн айăпласа, ăна Мускавран хăваласа кăларнă, Вйатск кĕпĕрнинчи Глазав хулине ссылкăна йанă. Çав ссылкăра вара „Шыракан пурнăçĕнчи епизодсем" йатлă чи малтанхи произведенипе унăн, пулас пысăк литератăрăн творчествалă ĕçĕ пуçланать (1879ç).

1881 çулта В. Г. Короленко Александр III патшана присăгă парассине хирĕçлет, хăй май чылай интеллигентсене мобилизацилет. Писателе хăйсен куçĕ айĕнчен йамасăр сыхласа çÿрекен патша йыттисем унăн шухăшне часах туйаççĕ—Короленкона тытса виçĕ çуллăха Йакутска ссылкăна йамала тăваççĕ.

Ссылкăра пурăнмали условисем çав тери йăвăр пулнă. Çавăнпа та вăл çулсенче Короленко хăйĕн йуратнă ĕçне ăнăçлăн малала йама, çĕнĕ произведенисем „Макар тĕлĕкĕ" йатлисĕр пуçне) çырма пултарайман.

Ссылкăран таврăннă хыççăн В. Г. Короленко Чулхулана пурăнма куçать. Хăйĕн чи лайăх произведенийĕсене çакăнта çырать вăл. Кашни çулсерен çĕнĕрен çĕнĕ повеçсем, калавсем пичетлесе кăларать („Ухмахла общечĕс-вăра", „Суккăр музыкант", „Вăрман кашлать", „Йуханшыв вайвыльать", „Чĕлхесĕр" т. ыт. те). „Выçлăх çулхиве" йатлă кĕнекинче (1893 ç.) писатĕл пĕтĕм халăхăн асаплăхне, выçлăх алли халăха мĕнле хĕрхенÿсĕр тытнине, чăн-чăн пурнăçа пĕр пытармасăр пысăк маçтăрлăхпа кăтартса парать. Кĕнекере çырса кăтартнипе çеç те мар вăл, выçăхакансене нумай çĕрте пулăшу та организацилет.

1896 çулхине В. Г. Короленко Петербурга куçса „Русское богатство" йатлă журналта ĕçлеме пуçлать (унта куçиччĕнех вăл çак журналăн редколлеги членĕ пулнă). Калавĕсемпе, повеçĕсемпе çеç мар, журналта çапăнса пыракан публицистикăла статйисемпе те реакци пусмăрлăхне хирĕç кĕрешет. Ку кĕрешÿ унăн уйрăмăнах 1905 çулти революци хыççăн вăй илсе аталанать. Çапах та вăл чăн-чăн революционер пулман. Хăйĕн кĕрешĕвĕн тĕп тĕллевне ăнланса илеймен пирки, сахал мар йăнăшсем те тунă.

1910 çулта В. Г. Короленко йаланлăхах пурăнма Полтавăна куçнă. Кунта вăл хăйĕн йулашки пурнăçне пурăнса иртернĕ. 1921 çулта вилнĕ.

Кĕскен

** Çунман вите. Аслă Шăхалĕнчи „Новочуриво" колхоз (Йелчĕк районĕ) кăçал 32 лаша вырнаçма слăх тăмпа улăм хуташтарса çăрса çунман вите турĕ.

С. Арланăв.

** Çĕнĕ кĕпер. Хирпуç йалĕнче самообложени укçипе (Вăрнар районĕ) йал витĕр тухакан çырма урлă пысăк кĕпер тунă.

М. Виктăрăв.

ХУЛА ТĂРĂХ

Кĕтĕм карăм пахчине те...

Шупашкарта икĕ пахча пур. Халĕ вăл пахчасем каçхи вăхăтра тухса уçăлса çÿремели парк пулса тăчĕç. Темĕн чухлĕ çамрăк унта, йаш-кĕрĕм... Вăхăта савăнăçлă та хаваслăн иртересшĕн, сывлăхлă пуласшăн, вара вăл ыран тата хастарлăрах ĕçлесшĕн. Çавăнпа вăл пайан уçă та ырă сывлăша ĕмсе кульуралă канасшăн çак пахчасене, тепĕр майлă каласан, парксене тухрĕ.

Картинă кунта пачах урăхла пуçланса кайать. Каçхине 9 сехет иртсĕн ĕççамрăкĕ черетленсе пахча варĕнче сукмак йевĕрлĕ çулпа кайала-майала кумса çÿреме пуçлать. Канма мар вара, асапланма тытăнать. Кăшт тĕттĕмленсен, пĕр-пĕринчен айакран тĕртсе иртесси, çÿç çине куршанаксем персе çыпăçтарасси, пĕр-пĕрин çине тĕртсе йарасси йе, ăнланмала калас пулсан, ун чухне вара пахчара аскăнакансен йухăмĕ пуçланса кайать. Ÿсĕр çынĕ те унтах сÿрет, хăсать, пÿтсĕр сăмахсем калать.

Хула совечĕ ку пахчана туса çитерсенех нимрен малтăн „пысăк ĕç" тума —ресторан уçтарма васкарĕ. Халĕ тата унăн йатне улăштарнă, „Кафе" тенĕ. Кунтах фонтан пур, вăл ерне хушши шыв пĕрĕхсен тепĕр ерне чарăнса тăрать. Нимрен ытла унта хула совечĕн хăратмала çырса çапнисем нумай. Ăçта пăхнă, унта:

— Не сорить!..
— Штраф...
Каллех:
— Штраф...

Пахчасене пысăк хуласенчи кульурăпа кану паркĕсен йевĕрлĕ сăн-пит кĕртесшĕн тăрăшнине курасчĕ. Хула совечĕн унта партипе правителствă руководителĕсен портречĕсене тата тăван çĕршывра кулленех пулса пыракан çитĕнÿçене кăтартакан диаграммăсене çакмали вырăнсем тăвасчĕ, хаçат-журналсем вуламали, шахмăт-шашкăла выльамали вырăнсене йĕркелесчĕ. Вĕсем вĕт çĕнсе илейми крепăçсем мар. Укçа-тенкĕ те нумай кирлĕ мар унта. Пуçарулăх пулсан—пулать. Хула ĕççыннисем пахчара пулакан пĕр ташăпа килĕшме пултараймĕç. Виçĕ çул хушши ĕнтĕ кашни кун пĕр кĕвĕлĕ ташă пырать. Вăл ĕнтĕ йăлăхтарма мар, хăлхана йÿçĕхтерчĕ. Парăр лайăхрах вăйă-кулă, ташă!

Крупскайа йачĕпе тăракан пахчара та çавах, уйăхран уйăха темĕнле майпа Чăвашфилармонийĕн концерчĕ пулкалать.

Хула ĕççамрăкĕ кульуралă кантăр тетпĕр пулсан, ку ыйту тăрăх хула совечĕн халех шухăшласа пăхмала пулать.

ИВ. МОСЕЙЕВ.

Государствăн 1938 çулхи шалти выигрышлă займĕн пĕрремĕш тиражĕ

ССР Сойузĕн Правителстви йышăннă решени тăрăх апрел уйăхĕнче облигацисене перекет кассисем урлă çийĕнчех укçан тÿлесе сутса халăх хушшинче вырнаçтармалли Государствăн 1938 çулхи шалти выигрышлă займне кăларнă.

Çав вăхăтрах правителствă 1929, 1930, 1932 тата 1935 çулсенчи Государствăн шалти займĕсен облигацисене Государствăн 1938 çулхи шалти выигрышлă займ облигацисемпе улăштарма решени йышăннă.

1938 çулхи августăн 10-мĕшĕнче Государствăн 1938 çулхи шалти выигрышлă займăн пĕрремĕш тиражĕ пулать. Вăл тиражра 5.680 выигрышпа 3.834.400 тенкĕлĕх тухать, вăл шутран 4 выигрыш—25.000 тенкĕшер, 20—10000 тенкĕшер, 120—5.000 тенкĕшер, 1.200—1000 тенкĕшер тата 4336 выигрыш—400 тенкĕшер тухаççĕ.

Тираж пулас майпа Шупашкарти перекет кассине ĕççыннисем кашни кунах çав займăн облигацисене илме пыраççĕ. Пайанхи куна Шупашкарти перекет касси çав займăн облигацисене 24.000 тенкĕлĕх сутнă. Малтанхи çулсенчи шалти займсен облигацийĕсене 1938 çулхи займăн облигацийĕсемпе 22.000 тенкĕлĕх улăштарнă.

Государствăн 1938 çулхи шалти выигрышлă займăн облигацийĕсене перекет кассисем ирĕклĕн сутаççĕ тата илеççĕ.

Е. ФИЛИППАВ.

Малтанхи курсантсем

Кăçал пирĕн Орденлă Чăваш республикĕнчи ĕççамрăкĕсем çар училищисене вĕренме кайассине пысăк хаваслăхпа йышăнчĕç. Кашни комсомолĕç, кашни ĕççамрăкĕ хăйĕн пĕлÿлĕхне ÿстерсе, тăван çĕршывăн Хĕрлĕ командирĕ пуласшăн тăрăшать.

Анат-Кушарти (Трак районĕ) В. А. Алексейĕв Чăваш АССР Çар Комиссариатне çакăн пек ыйту çырса пачĕ: „Епĕ пĕтĕм чунран сывлăш флочĕн Хĕрлĕ командирĕ пуласшăн тăрăшатăп. Сывлăш флочĕн командирĕ пулса, тăван çĕршывăн чиккисене тăшмансенчен çирĕппĕн сыхлама пулăшăп. Çавăнпа мана сывлăш флочĕн ĕçне вĕрентекен çар училищине вĕренме йама ыйтатăп".

Алексейĕв—комсомолĕц, Вăрнарти ветеринари техникумĕнчен вĕренсе тухнă. Çар училищине суйласа илекен комиссии пăхнă хыççăн, вăл йурăхлă пулни палăрчĕ. Халĕ вăл хулари сывлăш флочĕн училищине вĕренме кĕрсе килчĕ. Алексейĕвăн ĕмĕтленнĕ ĕмĕчĕ пурнăçланчĕ. Вăл уншăн савăнать, училищăра „отличнă" паллăпа вĕренме пулать.

Çакăн пекех сывлăш флочĕн çар шкулĕсене С. В. Шибайĕв (Чеборг), Меленйейĕв Н. (Шупашкар педучилищи) йулташсем вĕренме кĕрсе килчĕç. Вĕсем те ЧАССР Çар Комиссариатне килсе лайăх вĕренсе, тăван çĕршывăн тивĕçлĕ ывăлĕсем пулма сăмах пачĕç.

Çак кунсенчех çамрăксен тата тепĕр ушкăнĕ танкиссем хатĕрлекен училищăна испытани тытма тухса кайать.

В. ЦЫПЛЕНКАВ.

„Хлеб" йатлă çĕнĕ кинофильм

(Орденоносĕц-кинорежиссорсемпе—пĕртăван Васильевсемпе калаçни)

Фильм кăтартакан событисенчен хăшне-пĕрне А. Толстойăн „Хлеб" йатлă романĕнче кăтартса панă ĕнтĕ. Анчах та, пирĕн умра тăракан задачăна пурнăçа кĕртме пирĕн çĕнĕ материалсем тупмала пулчĕ. Кăçалхи çуркунне епĕр историлĕ событисем пулса иртнĕ вырăнсене кайса килтĕмĕр, Сталинградра пултăмăр, Дон çинчи нумай станицăсенче—Калач, Пйатиизбйанскайа, Нижне Чирскайа тата ыт. пултăмăр. Епĕр шуррисем çапăçнă вырăнсемпе паллашрăмăр. Çумсемпе витĕнĕ окопсем тăрăх çÿрерĕмĕр, паромсемпе Дон шывĕ урлă каçрăмăр.

Пирĕн çĕнĕ ĕç ĕççыннисем хушшинче хисеплĕ пулни курăнать. Кашни кунах пирĕн пата киле тата студине те Совет Сойузĕн тĕрлĕ вырăнĕсенчен çырусем килеççĕ. Вал çырусене—фильм кăтартакан çапăçусенче пулнă çынсем—ĕç мĕнле пулнине хăйсен куçĕпе курнă çынсем çыраççĕ. Тепĕр чухне тата пирĕн пулас ĕçе пулăшас шутпа пĕр-пĕр шухăш парса ытти йулташсем те çыраççĕ.

Хальхи вăхăтра епĕр çÿресе килнĕ вăхăтра пуçтарăннă материалсене йĕркене кÿрес ĕçпе ĕçлетпĕр. Çывăх вăхăтра епĕр А. Н. Толстойпа пĕрле сценари тăвас тĕлĕшпе ĕçлеме пуçăнатпăр. Çак çулталăк пĕтнĕ тĕле сценарине тата ÿкерме тытăнма хатĕрленес ĕçсене туса пĕтерме шухăшлатпăр.

Çитес хĕлле епĕр ÿкерчĕкесене павильонра ÿкерме пуçлас тетпĕр, 1939 çулхи май уйăхĕнче вара Сталинград таврашне кайса ÿкерме пуçласшăн. Царицынри çапăçăва епопейăна кăтартса паракан пирĕн çĕнĕ кинофильма Совет Сойузĕнчи театрсен екранĕсем çинче 1939 çулхи октабĕр кунĕсенче кăтартма май туса парассишĕн епĕр пĕтĕм вăйсене хуратпăр.

(ТАСС).

Орфографи правилисен проектне сÿтсе-йавнă май

„Чăваш орфографи тĕп правилисен проектне" пирĕн хаçатра пичетлесе кăларнăранпа нумай вăхăт иртрĕ. Анчах çав проекта сÿтсе-йавас ĕç пит сÿреккĕн пырать. Республикăри чĕлхе ăстисем, аслă шкулсенче чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенсем, писателсем, кĕнеке-хаçат кăларас ĕçре ĕçлекенсем чăваш орфографинче тумали улшăнусем пирки хăйсен шухăшĕсене пайан кунччченех каламасăр тăраççĕ.

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ тата Халăх Комиссарĕсен Совечĕ „Чăваш орфографинчи улшăнусем çинчен" йышăннă постановленине пичетлесе кăларсан, пирĕн хаçат ийулĕн 11-мĕшĕнче тухнă умстатйинче:

„Чăваш чĕлхинче вырăс тата интернационаллă сăмахсене çырма чăваш алфавитне вырăс алфавитĕнчен çĕнĕрен ъ, щ, ь, э, ю, я саспаллисене кĕртни шкулсенче вырăс тата чăваш чĕлхисене вĕренес ĕçе, политикăлă литературăпа илемлĕ литературă тата учебниксем кăларас ĕçе, пĕтĕм культура фронтне тата хăпуларах утăмсемпе малала йама май парать.

Пĕр пысăк ĕç тунă, халĕ ĕнтĕ чăваш орфографи правилисен проектне мĕн пур халăхпа тĕплĕн сÿтсе-йавса йышăнмала. Ку пысăк тата васкаса тумалли ĕç, мĕншĕн тесен, халĕ орфографи правилисем çук пирки учебниксем кăларас ĕç тытăнса тăрать", тесе каланăччĕ. Ку—редакци сăмахĕ. Кунта орфографи правилисем пирки кашни ĕççыннине хăйĕн шухăшне тухса калама чĕннĕ. Кашни ĕççыннин пичетре тухса калама пичет тата сăмах ирĕклĕхĕ пур.

Анчах орфографи правилисене сÿтсе-йавма хутшăнакан хăш-пĕр йулташсем сăмах ирĕклĕхне пăсса, чĕлхе пирки пуçарнă калаçăва йăвăрлатаççĕ. Вĕсем, хăйсем калас шухăшсене тĕплĕн ăнлантарса, ăслалăх йенĕпе çирĕплетсе пырас вырăнне, хăйсен оппоненчĕсене вырăнсăр хытă сăмахсем каласа кÿрентерме, тепĕр чух хăратма та пăхаççĕ.

Сăмахран, И. Йакăвлев чăваш чĕлхинче йа (я), йу (ю), е (э) саспаллисене хăварас пирки каласа кансене хăйĕн икĕ статйинче те („Чăваш Коммунĕ" 151-мĕшпе 155-мĕш номĕрĕсем) „нимĕç йе ытти йут çĕршыв чĕлхисем çине тĕллеме йуратакансем", „шипшипсем" терĕ.

Администрациле кăшкăрни, хăратни уйрăмах вăйлăн палăрать „Чăваш Коммунĕн" 167-мĕш номĕрĕнче тухнă В. Йакăвлев статйинче. В. Йакăвлев „орфографи правилисен проектне" тăвакансене „улшăнусем тунă йатпа витĕнекенсем", „йеплĕ сăмах вырăнне тата та йеплĕрех сăмах хыптаракансем" тет, вĕсене вăл „çул çинчен айаккала сирсе йама" сĕнет.

Епĕр чĕлхе пирки хускатнă сăмаха малала сарас ĕмĕтпе чĕлхе ăстисенчен редакцине статйасем çырма ыйтрăмăр, анчах вĕсенчен хăшпĕрисем: капла хăратсан нимĕн калаçмали те çук,—тесе ответлерĕç. Хаçатра тухса калакансем хăйсен оппоненчĕсене пута рас шутпа çавăн пек нимĕнле сăлтавсăр, нимĕнле принципсăр пĕр-пĕрне тăшман, буржуалă националис, йе вĕсен тавраш теме пăхни чĕлхе ыйтăвĕсене сÿтсе-йавас ĕçе пит чăрмантарса пырать.

Паллах, çакнашкал кăшкăрнипе, харкашнипе нимĕнле ырă ĕç те тума çук. Халăх пирĕн ăслалăх работникĕсенчен чăваш чĕлхи ыйтăвĕсене тĕплĕн, тарăннăн сÿтсе-йавса, ăслăлăхпа килĕшекен чĕлхе саккунĕсем тума ыйтать.

Буржуалă националиссем чăваш халăхĕн социалисăмлă культури ÿсиине хирĕç пĕтĕм хура хăйарлăхĕпе тăрса кĕрешнĕ, вĕсем чăваш халăхне вырăс рабочи класĕнчен, вырăс халăхĕнчен, аслă пролетари культуринчен уйăрса, нациле вăсăрлăхра, чухăнлăхра тытма пăхнă. Буржуалă националиссен тĕп йăвисене çапса аркатни пирĕн республикăна пур йенĕпе те хăйулăн малала кайма май пачĕ.

Пĕтĕм социалисăмлă хуçалăхпа, культурăпа пĕрле чăваш чĕлхи те вăйлăн ÿсет. Чĕлхе ÿсĕмĕ халиччĕнхи саккунĕсен тăвăр рамкисене çĕмĕрсе тата хăйуланрах, вăйлăнрах малала кайать. Вырăс халăхĕн аслă чĕлхи чăваш чĕлхине çак ÿсĕм çулĕ çинче пулăшса, вăй парса тăрать.

Культура ăстисен, ăслăлăх работникĕсен çак ÿсĕме курмала, чĕлхене, усăсăр туллашса харкашнипе мар, чăн-чăн ăслăлăх ĕçĕпе пулăшмала. Тепĕр чухне тимлĕх çинчен хытă кăшкăракансем, чăн-чăн тăшмансене курмасăр йулаççĕ. Буржуалă националиссен йулашкийĕсем пĕтмен-ха, вĕсем, чĕлхе ăстисен принципсăр харкашăвĕпе усă курса, чăваш халăх чĕлхин ÿсĕмне тĕрлĕрен майсемпе хирĕç тăма пăхĕç. Çавăн пек тăшмансене курма пĕлмеле, вĕсене хамăрăн йултăшсенчен уйăрса илсе, вăхăтра çапса аркатмала.

Пĕтĕм халăхпа пĕрле чăваш чĕлхине аслă социалисăм епохине тивĕçлĕ пуйан та культурлă чĕлхе тăвăр!

Писателсен пухăвĕ

Чăваш совет писателĕсен сойузĕн хальхи правленине суйланăранпа ийулĕн 29-мĕшĕнче пĕр çул тулать. Сойуз правленине çĕнĕрен суйлама вăхăт çитнĕ.

Çавăнпа та сойуз правленине çĕнĕрен суйлас шутпа, ийулĕн 28-мĕшĕнче Шупашкарта Чăваш совет писателĕсен суйлав пухăвне туса иртерме палăртнă.

Писателсен суйлав пухăвĕнче сойуз правленин тата ревизи комиссин отчочĕсене итлемеле.

И. Е.

Цирк бригадин концерчĕсем

Иванăвă хулинчи цирк бригади ийулĕн 22—23 мĕшĕсенче Шупашкарта пысăк концертсем лартса пачĕ. Ийулĕн 24-мĕшĕнче цирк бригади йатарласа ачасем валли концерт пачĕ.

Халь цирк бригади концертсем лартма республикăри районсене тухса кайрĕ. Бригадă Канашра, Улатăрта, Çĕмĕрлере концертсем лартса парать. Ийулĕн 30-мĕшĕнче цирк бригади кайала Шупашкара килсе, татах тепĕр ик-виç концерт парать.

Ик. Е.

Пĕлтерни

Пайан, ийулĕн 27-мĕшĕнче, каçхине ... сехетре, Чеборг суртĕнче Шупашкарти МОПР йачейкисен секретарĕсен канашлăвĕ пулать. МОПР йачейки çук учреждениисемпе предприйатисенчи профсойуз организацийĕсен канашлăва хăйсен представителĕсене йамала.

МОПР хула комитечĕ.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 392. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. заказ № 581.